Никифор МРАНЬКА

# ЁМЁР САККИ САРЛААКА



## Никифор МРАНЬККА

# Ĕмĕр сакки сарлака*

**Роман**

**Улттăмĕш кĕнеке**

Шăнкăрав сассипе пĕрлех «Юлташсем, вырнаçăр! Кĕçех съезд уçăлать!» тени илтĕнсе кайрĕ. Делегатсем залалла хускалчĕç. Кунта ытларах кивĕ сăхмансемпе килти пуставран çĕлетнĕ пиншаклисем, пилĕкĕсене кантра-пăяв татăкĕ çыхнисем. Урисенче çăм тăлăппа çăпата вĕсен, пуçĕсенче йӳнĕ йышши йĕтĕн çĕлĕк. Хушăран шинель тăхăннисем, туя çине тĕрĕнсе утакансем те курăнаççĕ. Зала кĕчĕç те вĕсем çула çухатнăн чарăнчĕç. Кăн-кан пăхкаларĕç. Ара, халиччен кун пек çĕре нихçан та кĕрсе курманçке. Кантур тавраш вĕсен сехрине сахал хăпартман. Пăртакран халь ĕлĕкхи самана мар тенĕн малалла иртрĕç.

Хĕрарăмсем те йышлă. Анчах вĕсем тĕпелелле иртме хăяймарĕç-ха, алăк çывăхĕнчи тенкелсене йышăнчĕç.

Кунта халиччен вулăс е çĕр общинисен ĕçне татса параканнисем те килкеленĕ. Вĕсене ыттисенчен тӳрех уйăрма пулать. Çийĕнче сар пустав сăртарса çĕлетнĕ кĕрĕк вĕсен, уринче — çăматă, пилĕкĕнче — пасарта илнĕ хĕрлĕ пиçиххи. Вĕсене съездран татса хăварма тăрăшнă та — пултарайман. Зала кĕрсен пĕр хушă йĕнчесе тăчĕç. Вĕсен халичченхи вырăнĕсене кивелнĕ те саплăклă сăхмансем йышăннă. Ирĕксĕрех ăста пушă вырăн пур, çавăнта вырнаçма тиврĕ.

Чăвашсем çеç мар, вырăсĕ, тутарĕ, украинĕ, белорусĕ тата ытти çĕршывсенчен килнĕ çынсем те пур кунта. Вĕсем те, пĕр ушкăн пулса, уйрăм кĕтеселле вырнаçрĕç. Улитин та кунтах.

Кĕçех айккинчи пӳлĕмрен большевиксем тухрĕç. Микула сĕтел умне пычĕ. Çийĕнче кивĕ пиншак унăн, уринче — тĕпленĕ çăматă. Тăшман персе амантнă хыççăн хырăнайман пирки сухалĕ ӳссе кайнă.

Делегатсем Микулана алă çупса кĕтсе илчĕç. Кунта ăна

---

*Романăн улттăмĕш кĕнекине Элĕк районĕнчи библиотека ĕçченĕсем ыйтнипе пичетлетпĕр.

палламанни те ҫук-и, тен. Хайпе тӗл пулманнисем те пурнӑҫӗпе кӗрешӗвӗ ҫинчен каласа панисене пайтах илтнӗ.

— Юлташсем! — хавхалануллӑн чӗнчӗ Микула. — Большевиксен фракцийӗ хушнипе Аталкасси вулӑсӗнчи Советсен пӗрремӗш съездне уҫӑлнӑ тесе шутлатӑп!

Большевиксем ура ҫине тӑчӗҫ, «Марсельеза» юрласа ячӗҫ.

Большевиксене кура ыттисем те ура ҫине тӑчӗҫ, пӗлекенсем юрра хутшӑнчӗҫ.

Кӗрӗкпе ҫӑматӑ тӑхӑннисене юрӑ сӑмахӗсем кулӑшла пек туйӑнчӗҫ. Мӗнле юррине ӑнланма пуҫласан — чӗрисем хускалчӗҫ. Архиерей Тӗмшер чиркӗвне килнӗ чухне ҫамрӑксем ҫак юрра юрласа пӑтӑрмах кӑларнине ӑҫтан манӗҫ-ши вӗсем? Хирӗҫсе кӑшкӑрашӗччӗҫ — ытти делегатсем ура ҫине тӑни чӗлхисене ҫыхрӗ. Ирӗксӗрех вӗсен те тӑма тиврӗ. Юрӑ ҫав-ҫавах хӑватлӑн янӑрарӗ:

Юлашки хут тӑрса ҫапӑҫмашкӑн!
Вӗҫрен вӗҫе, айтӑр, кар тӑрар!
Таса чӗрелли, хӑюлли, пӑшал тыт.
Ҫынна пусмӑрлакана сирпӗнтер,
Пур пӗрех ҫӑлӑнӑҫ е вилӗм пире,
Малалла, малалла, малалла!

— Юлташсем! — юрӑ вӗҫленсе зал шӑплансан сӑмах пуҫарчӗ Микула. — Съезд ӗҫне йӗркелесе пыма президиум кирлӗ. Миҫе ҫынран суйлас тетӗр?

Натюш вун ҫичӗ ҫынран суйлама сӗннипе пурте килӗшрӗҫ. Кама суйламаллине ятран каланӑ чухне делегатсем хушшинче сасӑ илтӗнчӗ:

— Мана сӑмах парӑр-ха!

— Тархасшӑн, Чернов юлташ! — килӗшрӗ Микула.

Трибуна ҫине Грища хӑпарчӗ. Ан тив, ҫийӗнчи шинелӗ кивелнӗ, атӑ кӗли чалӑшнӑ та, чӗри ырӑ ӗмӗтпе тулнӑран куҫӗ хаваслӑхпа ҫуталнӑ. Вӑл делегатсем ҫине ӑшшӑн пӑхса йӑл кулчӗ. Кӗсйинчен хут татӑкӗ кӑларчӗ. Хумханарах сӑмахне пуҫарчӗ:

— Юлташсем, большевиксен фракцийӗ президиума ҫак юлташсене тӑратасшӑн: Николай Степанович Соколов (делегатсем алӑ ҫупса ячӗҫ), Надежда Трифоновна Прохорова (каллех алӑ ҫупрӗҫ), Наум Васильевич Васильев, Демьян Петрович Петров, Арсентий Ксенофонтович Улитин, Трифон Гаврилович Кузьмин...

Гриша тата вун пӗр ҫын, ку шутра пилӗк хӗрарӑм, ятне асӑнчӗ.

— Юлташсем! — чӗнчӗ Микула. — Большевиксен фракцийӗ президиум членӗ пулма кама-кама кандидата тӑратнине каласа пачӗ. Ҫавсем ҫителӗклӗ тесе шутлатӑр-и е хушса ҫырас текенсем пур?

— Ҫавсенех суйлас! Урӑх ҫырас мар!— илтӗнчӗ темиҫе сасӑ.

Кӗрӗкпе ҫӑматӑ тӑхӑннисем тӑвӑлса ларчӗҫ. Фракци хушнипе тени вӗсен пуҫӗсем ҫине чул персе аннӑн туйӑнатчӗ. Улитин ятне асӑннине илтсен вӗсем лӑпланчӗҫ. Кирек мӗнле пулсан та, президиумра хӑйсен ҫынни пур. Кирлӗ чух хута кӗрӗ. Анчах пухусенче хисеплӗ вырӑнта ларма хӑнӑхнисем тӳсеймерӗҫ — шавласа кайрӗҫ.

— Кирлӗ мар пире хракци! Тата хушса ҫырмалла! — терӗҫ вӗсем.

Ҫавӑнтах Павӑлпа ик-виҫ ҫын ятне, Сантӑр ятне асӑнчӗҫ. Куна ӑнланмалла ӗнтӗ. Сантӑр ҫынсене тарӑхтарсах ҫитереймен-ха. Тата ун урлӑ Михха ӗҫӗнче пулнисем те сахал мар.

Кунта пуянсем йышлах мар пулин те, сассисем аслати евӗр шавлӑ вӗсен. Съезд лӑпкӑн та пӗр кӑмӑллӑн иртме пултараймасса Микула-сем малтанах шутласа хунӑ. Харкашӑвӗ халех тапранасса кӑна кӗтменччӗ. Тапранчӗ пулсан, сирме тивӗҫ.

— Юлташсем! — кӑмӑллӑн чӗнчӗ Микула, делегатсен ытларах пайӗ большевиксем майлӑ пуласса ӗненсе. Хирӗҫлекен шав тамалсан хушса хучӗ: — Кӑшкӑрмасӑрах калаҫса татӑлӑпӑр. Икӗ сӗнӳ пулчӗ. Каярах тата хушса ҫырас текенсем тупӑнчӗҫ. Малтан большевиксен фракцийӗ сӗнӳ пачӗ. Сасӑлатпӑр. Кам та кам большевиксен фракцийӗ сӗннипе килӗшес тет, ал ҫӗклӗр!

Большевиксен фракцийӗ сӗннине ырласа тӑхӑр вунӑ процент ал ҫӗклерӗ. Тепӗр сӗнӗвӗшӗн темиҫен ал ҫӗклеме хӑтланчӗҫ те, ыттисем хускалманнипе аллисене ячӗҫ. Кӗрӗкпе ҫӑматӑ тӑхӑннисем ним хускалми ларчӗҫ. Сантӑр кӑна пӑрҫа ҫыртнине тӳсеймен евӗр хиркеленсе илчӗ.

Делегатсем кулса ячӗҫ. Пуянсем хӑйсен сӗнӗвӗшӗн ал ҫӗклеменни кулӑшла туйӑнчӗ вӗсене.

— Иккӗмӗш сӗнӗвӗшӗн ал ҫӗклекен пулмарӗ. Ҫавӑнпа большевиксен фракцийӗн шухӑшне йышӑннӑ тесе шутлатпӑр. Кандидатсене пӗрерӗн е ушкӑнӗпе сасӑлатпӑр-и?

— Ушкӑнӗпе! Пӗрерӗн сасӑласа вӑхӑта ирттерер мар!

— Апла кандидата тӑратнӑ юлташсене президиума суйлас текенсем, ал ҫӗклӗр!

Пурте ал ҫӗклерӗҫ.

— Суйланӑ юлташсем, сӗтел хушшине килӗр! — йыхӑрчӗ Микула. Ним чӑрмавсӑрах кун йӗрки ҫирӗпленчӗ. Натюш председатель ӗҫне тума тытӑнчӗ.

— Юлташсем! — терӗ вӑл. — Чи малтан Раҫҫейри лару-тӑрусем ҫинчен каласа пама Николай Сепанович Соколов сӑмах илет.

Микула ӑш кӑмӑллӑ куҫӗпе делегатсене саврӗ. Сӑмахне хавхаланullӑн пуҫларӗ:

— Юлташсем, большевиксем ӗмӗтленнӗ самана ҫитрӗ. Рабочисемпе чухӑнсене пусмӑрта усракан мул хуҫисен влаҫӗ тӗп пулчӗ. Пӗтӗм Раҫҫейри советсен съезчӗ влаҫа хӑй аллине илнӗ, Совет правительстви туса хунӑ. Правительство пуҫлӑхӗ, халӑх комиссарӗсен председателӗ пулма Ленина суйласа лартнӑ! — Делегатсем тӑвӑллӑн ал ҫупса ячӗҫ. Шав лӑплансан Микула шухӑшне малалла тӑсрӗ: — Совет правительстви ӗҫ ҫыннисене питех те кирлӗ декретсем кӑларнӑ. Пӗр декречӗ вӑрҫа пӗтерсе мир тӑвасси ҫинчен. Иккӗленмелли ҫук: пӗтӗм тӗнчери рабочисем пирӗн майлӑ пулӗҫ, хӑйсен правительствисене ирӗксӗрлесех мир тутарӗҫ. Тепӗр декречӗпе ҫӗр улпутсен, мӑнастирсен, чиркӳсен шутланнине пӑрахӑҫ тунӑ. Ҫапла ӗнтӗ ҫӗр сухаҫӑсен ирӗкне куҫать. Сывӑ пултӑр Совет правительстви! Сывӑ пултӑр халӑх комиссарӗсен председателӗ Ленин!

Делегатсем тӑвӑллӑн алӑ ҫупса ячӗҫ. Куҫсенче савӑнӑҫ куҫҫуль тумламӗсем палӑрчӗҫ. Юлашкинчен те пулин халӑх пурнӑҫне лайӑхлатасшӑн тӑрӑшакан правительство тупӑнчӗ.

Кун хыҫҫӑн делегатсем, пӗрин хыҫҫӑн тепри трибуна ҫине хӑпарса, хӑйсен нушаллӑ пурнӑҫӗ ҫинчен каларӗҫ. Пӗр украинкӑпа белорус хӗрӗ Михха патӗнче ӗҫлесе мӗн таран асап тӳсни ҫинчен каласа пани кашнин чӗринех тиврӗ. Епле шеллемӗ-ха вӗсене? Вырӑнти чухӑнсен пурнӑҫӗ те хӗн-хурлӑ, ҫапах вӗсен ҫил-ҫумӑртан пытанмалӑх хуралтӑ тавраш пур. Пурлӑ-ҫуклӑ ҫӗрӗ ҫинчен мӗн чухлӗ те пулин ҫӗр улми туса илет вӑл. Кӗске вӑхӑт хушши те пулин тутӑ пурӑнать. Беженецсен вара ним те ҫук: кил-ҫурчӗ те, выльӑх-чӗрлӗхӗ те лере юлнӑ вӗсен. Кунти ҫӗршыва ҫара ҫерҫи пек килсе кӗнӗ. Ҫакӑнпа усӑ курса Михха вӗсене хӗн-хур айӗнче усранӑ. Халӗ те ниҫта кайма ҫук — нимӗҫсем вӗсен ҫӗршывне таптаҫҫӗ. Мир тӑвас пирки калаҫу пырать пулин те, нимӗҫсем ытларах та ытларах сӗмсӗрленеҫҫӗ, ҫӗнӗрен ҫӗнӗ районсене туртса илесшӗн.

Тыткӑнри икӗ салтак тухса калани пурне те тӗлӗнтерчӗ, хаваслантарчӗ те. Пуп таврашсем пире хирӗҫ ҫапӑҫакан салтаксем тӑшман тесе ӗнентерме тӑрӑшни харама кайман. Вӗсене тӑшман тесе шутлакансем сахал пулман. Анчах вӗсем те хӑйсен ҫӗршывӗнче, Раҫҫейри ӗҫ ҫыннисем пекех, хӗн-хур айӗнче пурӑннӑ. Вӗсен юнне те мул хуҫисем сӗлӗх пек сӑхнӑ. Халь вӗсем те кунта Совет влаҫне туса хунишӗн савӑнаҫҫӗ.

Тухса калакансем Ленина сывлӑх та ырлӑх сунса ҫыру яма сӗнчӗҫ. Ҫакӑ Натюша большевиксен шухӑшне пӗлтерме пулӑшрӗ.

— Юлташсем! — Хӗрӳллӗн чӗнчӗ вӑл. — Тухса калакансем ҫулпуҫӑмӑр патне ҫыру ярас терӗҫ. Большевиксен кӑмӑлӗ те ҫаплах. Пирӗн кӑштах тӗрлесе хуни те пур. Ирӗк парсан вулама та пултаратпӑр.

— Хаваспах итлетпӗр. Вулӑр!

Натюш хушнипе Петров халӑх умне тухрӗ.

Павӑл чунӗ кӳтсе ҫитрӗ. Ун чухне ҫак этеме пӗтернӗ пулсан, ытти салтаксем хӑйсемех саланӗччӗҫ, Прохӑр ҫемйине те пӗтерме ҫӑмӑлччӗ. Ҫук, читлӗхе хупнӑ ҫӗртен кӑларса кайнӑ ӑна юлташӗсем. Елюк ятне ҫӗртни кӑна пулчӗ. Юрать-ха, Михана качча тухнипе витӗнчӗ.

Петров вулама пуҫларӗ: «Хаклӑ Владимир Ильич! Эпир, Атӑлкасси вулӑсӗнчи чӑваш, вырӑс, тутар, белорус, украин тата ют ҫӗршыври ӗҫ ҫыннисем, Советсен пӗрремӗш съездне пухӑнтӑмӑр та Сире Совет правительствин пуҫлӑхӗ пулма суйланине пӗр кӑмӑллӑн ырлатпӑр. Вӑрҫа чарма тӑрӑшнӑшӑн, ҫӗре сухаҫӑсен ирӗкне памалла тунӑшӑн чун-чӗререн тав тӑватпӑр. Сире сывлӑх та вӑрӑм кун-ҫул сӗнетпӗр! Сывӑ пултӑр Совет влаҫӗ!

— Аван, пирӗн шухӑша пӗлсе ҫырнӑ! — ырларӗҫ делегатсем, алӑ ҫупрӗҫ.

— Ҫапла ӗнтӗ, юлташсем, — малалла каларӗ Натюш, — ҫырӑва йышӑнтӑмӑр, кӗҫех Ленин патне ҫитерӗпӗр. Халь тепӗр ыйту сӳтсе явма тытӑнатпӑр. Кун пирки Николай Степановича сӑмах паратпӑр!

Микула, делегатсен шухăшне сăнанăн, пĕр хушă шарламасăр тăчĕ.

— Пирĕн вулăсра сехмет пуррине пĕлмен çын çук-тăр, — терĕ вăл юлашкинчен. — Хăйĕн ĕмĕрĕнче нумай çын тирне сĕвнĕ вăл, нумай çын юнне сăхнă. Юлашкинчен шăпи тулчĕ. Большевиксен фракцийĕ Янашовăн çĕрне, вăрманне, çуртне-йĕрне, выльăх-чĕрлĕхне, хăма çуракан заводне — мĕнпур пурлăхне — халăх аллине туртса илме сĕнет. Çĕрпе тата ытти мулĕпе мĕнле усă курмаллине çĕр комитечĕ йĕркелетĕр.

Микула шухăшне вĕçлесенех Натюш сăмах хушса хучĕ:

— Ытса пĕлмеллисем çук-и? Тен, тухса калас текенсем пур?

Çын мулне турса илесси кичем пек туйăнчĕ чухăнсене. Пуян таврашĕсем, тем каласан килĕшӳллĕ тенĕн, шарламасăр ларчĕç. Сантăр çилли тăвăлса хăпарчĕ. Хăйне ыр кăтартнă, пуйма май панă çынна тĕп тăвасшăн иккен. Юлашкинчен тӳсеймерĕ — ура çине тăчĕ те:

— Халăх! — терĕ вăл пĕтĕм сассипе. — Мĕне пĕлтерет ку?! Çын мулне туртса илесси патне çитрĕмĕр-и?! Çав териех этем сипетне çухатрăмăр-ши?! Михаил Петрович пурлăхне туртса иличчен çавăн çинчен шухăшласа пăхасчĕ-çке! — Хута кĕрекенсене шыранăн, каллĕ-маллĕ пăхкаласа илчĕ. Çакă Павăла хăю çитерме пулăшрĕ. Ара, кĕрӳшĕпе хĕрне тĕп тума парас марччĕ-çке.

— Александр Кузьмич тĕрĕс каларĕ, — терĕ вара вăл. — Кунта пире нихçан пулман киревсĕр ĕç тутарасшăн, турă йĕркисене пăстарасшăн. Кунашкал айкашса çитмен пурнăçа сыпăнтараймăн. Çылăха та намăса кĕни çеç пулĕ. Çавăнпа эп хракци Янашов пурлăхне туртса илме шутланине хирĕç. Ыттисем те, совеçĕ пуррисем, ман майлă пуласса шанатăп!

Сантăрпа Павăл хирĕçме хăтланнине сирме темех марччĕ ĕнтĕ. Делегатсем мĕн шухăшланине пĕлесшĕн пулнипе васкамарĕ Натюш.

— Тата кам калаçас тет? — терĕ кăна.

— Эпĕ! — илтĕнчĕ хыçалти ретре хĕрарăм сасси.

— Наталья Семеновна-и? — терĕ Натюш. Çавăнтах кăмăллăн йыхăрчĕ: — Кунта килĕр, эппин.

— Мĕнех, унта пыма та пулать... — хăюсăрланнăн хуравларĕ те Наталле тĕпелелле иртрĕ.

Трибуна çине хĕрĕх çултан кая памалла мар, выçлă-тутлă пурăннипе шăммипе тирĕ çеç юлнă хĕрарăм хăпарчĕ. Çийĕнчи тумĕнчен тĕлĕнчĕç пулин те, энĕшкассисенчен паллакан урăх никам та тупăнмарĕ. Çак мĕскĕн мĕнех каласси пур-ши тесе шутларĕç хăшĕсем.

Сăмах каласси темех мар пек туйăначчĕ Наталлене. Энĕшкасси пухăвĕнче тухса каланăччĕ-ха вăл. Сантăра пухуран хăваласа яма та пултарнăччĕ. Анчах кунта хăйсен ялĕсем çеç мар-çке, çирĕм ял ытла пухăннă. Трибуна çине хăпарсан Наталле çухалса кайрĕ. Хушăран йĕлпĕрсе кулни илтĕннипе тăна кĕчĕ. Хăй ăçтине, мĕн тума килнине аса илчĕ. Пуçне çĕклерĕ, делегатсем çине пăхрĕ.

— Атьсемĕр! — кăшкăрашнипе сасси çинçе тухрĕ. Çакă каллех хăш-пĕрисене култарчĕ. Анчах Наталле йӳпсемерĕ, малаллах састарчĕ. — Куçма Сантăрĕн сипет пур тет. Ун сипечĕ мĕнлереххине

каласа парам-ха эппин. Манӑн тӑватӑ пепкем пур. Вӗсене пӗчченӳстеретӗп. Ашшӗ ҫаплипех вӑрҫӑран таврӑнаймарӗ-ха. Ҫырӑвӗ те чылайранпа ҫук. Те пуҫне хучӗ... Вӑт, ҫуркунне Куҫма Сантӑрӗ патне вӑрлӑх ыйтма кайрӑм та, Турӑ патӑр тесе кӑларса ячӗ. Мухтав Турра. Ман телейшӗнех-ши пирӗн ялта большевиксем, хӗрлӗ салтаксем пулчӗҫ. Ҫавсем вӑрлӑх та тупрӗҫ, сухаласа-акса та пачӗҫ. Вӗсене, Ҫтаппан Микулисене таймапуҫ... Куҫма Сантӑрӗн вара сипечӗ те, намӑсӗ те ҫук. Пӗртен-пӗр кӗрӳшне те хӑваласа ячӗ те... Сехмет хыҫҫӑн кайса ҫын тирне сӳме хӑнӑхасшӑн. Ҫавӑнпа сехмет хутне кӗрет те.

Сантӑр аякӗнчен тирнӗн сиксе тӑчӗ. Тем каласа татӗччӗ вӑл Наталлене. Делегатсем тимлесе итленине асӑрхасан хӑюлӑхӗ пусӑрӑнчӗ.

— Ах, Турӑ! — пӗҫҫине ҫат! ҫапса илчӗ Наталле. — Платун Павӑлӗ те ҫылӑха пӗлет иккен. Юмӑҫ карчӑка вӗлерсе ҫаратнине, лавккара ҫынсен тирне сӳнине ырӑ ӗҫ тесе шутлать ӗнтӗ вӑл. Атӑла чикечике хурах ятне панине те маннӑ, апӑршук... — Залра тӑрӑхласа кулни илтӗнчӗ. Наталле малалла кастарчӗ: — Платун Павӑлӗ сехмет хутне кӗресшӗн. Кӗрӳшӗ-ҫке вӑл! Хай хӗрне вӑрӑ-хураха кайча панӑ... Арманне, ҫӗрне-шывне хай ирӗкӗнчех хӑварасшӑн иккен вӑл. Мӗнех, сехмет пурлӑхӗпе пӗрле Платун Павӑлӗн пурлӑх-ырлӑхне те туртса илме пултаратпӑр. Тар кӑларса пухнӑ мул ҫук унта!

Делегатсем тӑвӑллӑн алӑ ҫупса ячӗҫ. Ун сӑмахне ырласа кӑшкӑрни илтӗнчӗ:

— Тӗрӗс! Атӑла, тарӑнтарах ҫӗре кайса пемелле пулнӑ ӑна!

Павӑла пуҫӗнчен кӳсӗкпе ҫапнӑнах туйӑнчӗ. Пуринчен те йывӑрри — никам ун хутне кӗменни. Кӗрӗкпе ҫӑматӑ тӑхӑннисем те ҫывӑхрах-ҫке. Мӗншӗн пӗр сӑмах та хушмаҫҫӗ?

Наталле мӑнкӑмӑллӑнрах пуҫне ҫӗклерӗ те трибуна ҫинчен анчӗ, хай вырӑнне кайса ларчӗ.

Сӑмах илсе трибуна ҫине Улитин хӑпарчӗ. Халӑх сасартӑках шӑпланчӗ. Улитин вулӑс пуҫлӑхӗ пулнине, большевиксем ӑна вырӑнтан кӑларнине кашниех пӗлеҫҫӗ. Хай председательте ӗҫленӗ чухне вӑрҫӑ пирки, ҫӗр пирки мӗн калаҫнине илтнисем манман. Сехмете хӳтӗленине те чухланӑ. Мӗн калӗ-ши вӑл халь?

— Юлташсем! Ман умран тухса калаҫнӑ хӗрарӑм шухӑшӗпе эпӗ килӗшетӗп. Сехмет чӑн та тарҫисен юнне сӑхса пуйнӑ. Ҫавӑнпа ун мӗнпур пурлӑхӗ халӑх аллинех куҫмалла. Павел Платоновичпа Александр Кузьмич кӑлӑхах сехмет хутне кӗреҫҫӗ. — Павӑлпа Сантӑр пуҫран ҫапнӑ пек пулса кайрӗҫ. Улитин кирек хӑҫан та вӗсемпе пӗр кӑмӑллӑччӗ-ҫке, халь мӗн паврать вӑл? Лешӗ хайӗннех шӑйӑрттарать: — Ҫак кӑна тӗлӗнтерет мана, пӑшӑрхантарать те. Эпир, эсерсем, хресченсен тусӗсем, ҫӗрпе усӑ курассине учредиловка татса парать теттӗмӗр. Ун чухне пире большевиксем ятлатчӗҫ, ҫӗре халех туртса илмелле тетчӗҫ. Ак ӗнтӗ ҫав самант ҫитрӗ те, вӗсем йӑлтах тепӗр май ҫаврӑнса ӳкрӗҫ. Тӑхтар-ха, сехмет мулне малтан комитет ирӗкне парӑпӑр, кайран комитет пайлӗ теҫҫӗ. Тата акӑ мӗн: ял-ялӗнче тырӑ е сӗт-ҫу ҫуккисем сахал мар. Янашов ампарӗсем вара ҫур-

ăлса каясла. Вĕсене ан тивĕр, комитет пайласа парать теççĕ. Атăл хĕрринче сĕмĕ çук вутă вырттать. Куна та илме пултараймастăр: ун хуçи те комитет иккен. Ку ырă шухăш маррине пурте пĕлетпĕр. Çавăнпа комитетсăрах пухăнмалла та туртса илмелле.

Улитин йăнăшмарĕ, ун сăмахĕсем Михха пурлăхĕпе усă курса юласшăн çунакансен кăмăлне тивĕçтерчĕç.

— Комитет кирлĕ мар пире! Долой сехмете! — шавласа кайрĕç вĕсем.

Микула кăмăлĕ тăвăлчĕ. Вулăсри влаçа хăйсен ирĕкне илнĕ чухне Улитин большевиксемпе алла-аллăн пыма сăмах панăччĕ. Центрта та большевиксем эсерсемпе пĕрле пулнине шута илсе Улитина вулăс ĕçтăвком членне суйлама та килĕшӳ тунăччĕ. Анчах ун сăмахĕ суя пулнă иккен. Акă, май килчĕ те, ямăт мулшăн çунакансен кăмăлне астарса яма тăрăшрĕ. Ăнăçсăр пулчĕ теме те çук. Ав епле кăшкăрашрĕç. Ним шеллемесĕр тăрă шыв çине кăлармалла. Зал шăплансанах Микула сăмах илсе трибуна çине тухрĕ.

— Юлташсем! — Тăвăлнипе сасси сиввĕнрех тухрĕ унăн. — Эсир Улитин хăвăра юри астарнине те туймастăр иккен!

— Мĕн пирки хур кӳрет вăл пире? — кĕрĕкпе çăматă тăхăннисем сасартăках хирĕç тăчĕç. Делегатсем шавласа кайрĕç. Пĕри сиксе тăрсах кăшкăрашрĕ:

— Мĕн, сехметсен мулне сĕкĕнме юрамасть-им?! Выçса вилсен те-и? Тĕрĕс каларĕç: нимĕнле комитет та кирлĕ мар. Хамăрах салататпăр! Платун Павăлне тахçанах арман пĕвине ямалла!

Микулай майлисем те сахал мар. Вĕсем карма çăварсене чарма хăтланчĕç те, шав пушшех çивĕчленчĕ:

— Комитет та кирлĕ мар пире! Хамăрах йĕркелетпĕр!

Микула тӳсĕмлĕн итлесе тăнă çĕрте пуринчен те хăватлăрах кăшкăраканнине асăрхарĕ. Урпа Çемукĕ иккен. Нумай та пулмастьха Павăл арманне çаратнăшăн тĕрмене лекнĕччĕ вăл. Улитин хыççăн сĕмленекен чухăнсем татах пур-çке. Юлашкинчен залри шав лăпланчĕ. Микула, пăлханнине сиссе, ывăç тупанĕпе сухалне сăтăрса илчĕ.

— Юлташсем!.. — терĕ вара, яланхи сассине тупса. — Эпир, большевиксем, йĕркеллĕ пултăр тесе сехмет пурлăхне комитет ирĕкне парас терĕмĕр, Совет правительстви çапла хушнă. Улитин вара кайса çĕмĕрсе килме сĕнет. Урпа Çемукĕ те унпа пĕр шутлă. Вăл хăйне Улитинсемех тĕрмене хупнине те маннă иккен. Юрĕ тейĕп, эпир, большевиксем, сирĕнпе килĕшĕпĕр, вара мĕн килсе тухма пултарĕ? Темиçе çын пухăнса пырĕç те тустарма, салатма, çĕмĕрме пуçлĕç. Паллах, кам вăйли те лашалли лайăхрах япаласене сĕтĕрĕç. Лаша çуккисемпе тăлăх хĕрарăмсем вара айккинче кăна пăхса тăмалла-и? Кунашкал çĕрте çапăçусăр иртес çук. Улитин çак инкеке курасшăн та ĕнтĕ. Вăл сехмет мулне туртса илме чараймарĕ, халь акă унпа никама та усă кăтартасшăн мар. Çĕмĕрттерсе, сапалаттарса пĕтересшĕн. Пĕр-пĕрне курайми тăвасшăн.

Улитин сăмах ыйтмасăрах сиксе тăчĕ:

— Суя сăмах ку! — терĕ. — Пурин куçĕ умĕнче валеçни шанăçлă. Кут хыçĕнче тем тума та пулать.

Улитин ыттисем Микулана хирӗҫлесе шавласса кӗтрӗ. Анчах делегатсем ӑнланма пуҫланипе Улитин хутне кӗрекенсем сахал пулчӗҫ. Лешӗн ним калаҫмасӑрах ларма тиврӗ. Микула тӳртен хыпӑнтарчӗ:

— Гражданин Улитин, пурне те хӑвӑр виҫепе ан виҫӗр. Управ председателӗ пулнӑ чухне сехмет таврашӗнче пайтах ашкӑннӑ эсир. Ҫитет унпа та! Халӑх аллипе илнӗ мулӑн пӗр пӗрчине те харпӑр хӑй ирӗкӗпе ҫаратма памастпӑр. Ун йышшисене революци вӑхӑтӗнчи ҫирӗплӗхпе айӑплатпӑр! Совет правительстви те кун пирки ҫирӗп астутарнӑ.

— Тӗрӗс! Япала тени йӗркеллӗ пултӑр!

— Долой старшина йыттине! — шавларӗҫ ӗнтӗ кив сӑхманлипе кив кӗрӗклисем. Юлашкинчен Миххан мӗнпур ҫӗрне, вӑрманне, пурлӑхне туртса илсе ҫӗр комитечӗн ирӗкне памалла турӗҫ.

## II

Хӑйӑ ҫутнӑ тӗле Миххан тимӗр хапхи умне фуфайкӑпа салтак пушмакне тӑхӑннӑ, хура тутӑр ҫыхнӑ хӗр пырса тӑчӗ. Темрен хӑранӑн каллӗ-маллӗ пӑхкаларӗ. Хӑю ҫитерсе шӑнкӑравларӗ. Ҫав самантрах будкӑран хуралҫӑ тухрӗ. Урам енче палламан ҫын тӑнине курсан чӑрмантарса ҫӳренӗшӗн кӑмӑлсӑрланса чӗнчӗ:

— Кам эсӗ? Мӗн кирлӗ сана?

— Эпӗ... Клавье... — ӑшри сасӑпа хуравларӗ хӗр.

— Клавье? Кам Клавйи?

Ӗлӗк пулсан, Клавье Михха хӗрӗ тейӗччӗ. Халь ун ятне те асӑнас килмен пирки:

— Лукарье хӗрӗ Клавье... — терӗ кӑна.

Михха хӗрӗ пуҫӗпех пӗтнӗ пулӗ тетчӗҫ ӑна пӗлекенсем. Пур пулсан та ҫакнашкал ӑпӑр-тапӑр тумпа ҫӳремелле мар.

— Ҫветтуй Турӑ, ҫветтуй хӑватлӑ... — сӑхха печӗ хуралҫӑ, усалтӗсел курӑннӑн. — Эсӗ Лукарье хӗрӗ мар, ҫынсене аташтарма килнӗ усал сывлӑш. Сирӗл кунтан! Сирӗл! — Хапха патӗнчен кайма хатӗр хӗр хӑйне ятран чӗннипе чарӑнса тӑчӗ.

— Ҫитӑр пичче! — йӑлӑннӑн тухрӗ ун сасси. — Нивушлӗ паллаймарӑн мана? Мӑнкун чухне кучченеҫ илсе ҫиме виҫӗ тенкӗ панине те мантӑн-и?

Хуралҫӑ ҫавӑнтах аса илчӗ: чӑн та-ҫке. Ун ҫинчен урӑх кам пӗлейтӗр? Тата Михха хӗрӗ ӑшшӑн чӗнмесӗр нихҫан иртсе кайман. Ҫавӑнпа ӑна ытти тарҫӑсем те хисепленӗ. Вӑл ҫухалнишӗн хуйхӑрнӑ.

— Клавдия Михайловна, Турӑ ҫырлахтӑр... сасартӑках паллайман пирки хапха умӗнче калаҫтарса тӑнӑшӑн ан ҫилленӗр, тархасшӑн... Кӗтмен ҫӗртен пулни тата темле тумланни аташтарчӗ. Кӗрӗр, тархасшӑн... Аҫу ҫав тери хӗпӗртӗ ӗнтӗ.

Клавье тӳрех амӑшӗ пурӑнакан пӳлӗме каясшӑнччӗ. Хуралҫӑ Михха ятне ҫеҫ асӑннине илтсен, теме сиснӗн хытса тӑчӗ. Кунти лару-тӑрусем ҫинчен ыйтса пӗлесшӗн пулчӗ.

— Ҫитӑр пичче, анне сывах-и? Тата мӗнле сас-хура пур кунта?

Хуралҫă иртнине аса илчĕ те хĕре пĕтĕм чунтан хĕрхенсе пăрахрĕ. Аҫу ҫав тери хĕпĕртĕ терĕ те вăл, чăннипе ăна никам та кĕтекен ҫук. Амăшĕ ҫĕре кĕнĕ, ашшĕ авланнă. Хуралҫă ним шарламасăр тăни Клавьене пушшех канăҫсăрлантарчĕ.

— Ҫитăр пичче, чĕлхӳ ҫухалчĕ-им?

— Кил хушшинче тăни аван мар, Клавдия Михайловна... Ман будкăна атя-ха... Унта пĕтĕмпех каласа парăп... — терĕ хуралҫă, сывлăшĕ ассăн тухнине пытармасăр.

Темле инкек пулнине туйрĕ Клавье. Ура шăнăрĕсем ҫемҫелчĕҫ. Кайса ӳкесрен чул стена ҫумне тайăнса иртерчĕ. Вара, урисене аран-аран ылмаштарса, хуралҫă хыҫҫăн утрĕ.

Хуралҫă пӳлĕмĕ Клавьене мăнастирти келине аса илтерчĕ. Кунта та, унти пекех, йывăҫ кравать, пĕчĕк сĕтел тата пĕр хыҫсăр пукан ҫеҫ.

— Каҫар... Ҫул ҫинче ывăнтăн та пулĕ... — ларма сĕнчĕ хуралҫă. Клавье хирĕҫ пĕр сăмах чĕнмесĕр кравать хĕррине вырнаҫрĕ. Куҫне хуралҫă ҫинчен илмесĕр вăл сăмах пуҫарасса кĕтрĕ.

— Ҫитăр пичче... Эсир тем каласа пама пултăр-ҫке...

— Клавдия Михайловна... — хĕр ҫине пăхма хăймасăр чĕнчĕ хуралҫă. — Ырă марри ҫинчен хыпарлама йывăр та, ним тума... Манран мар тăк теприччен илтетĕн. Сан аннӳ ҫук...

— Мĕнле ҫук? Ăҫта кайнă? — ăнлансах ҫитереймен пирки ыйтрĕ Клавье.

— Лукерья Семеновна чăн ҫĕре куҫрĕ...

Клавьен куҫĕ хуралса килчĕ, ларнă ҫĕртен тӳнсе, урайне ӳкрĕ. Хуралҫă шартах сикрĕ, хĕр вилсех кайнăн туйăнчĕ ăна. Ашшĕне пĕлтерме шутларĕ. Анчах алăк хăлăпне тытсан чарăнса тăчĕ. Хĕр сасартăк вилнĕшĕн хăйне айăплама пултарасран хăрарĕ. Тен, чунĕ тухайман-ха? Тен, пулăшу кирлĕ ăна? Хуралҫă васкаса Клавье патне пычĕ. Сывлăшĕ пуррине ĕненсен мĕн пулнине тавҫăрчĕ. Тăнран кайнă ĕнтĕ вăл. Питне-куҫне сивĕ шывпа пĕрĕхрĕ. Пăртакран хĕр тăна кĕчĕ. Пĕтĕмпех аса илчĕ. Вăл амăшĕ пулăшасса, хута кĕрессе шанса килнĕччĕ. Кăлăхах иккен. Амăшĕ ҫĕре кĕнĕ. Хĕр хурлăхлăн макăрса ячĕ. Хуралҫă аран-аран тӳскелесе йăпатма тăрăшрĕ:

— Хĕрĕм, хĕрĕм... — тăванĕ пекех шутласа чĕнчĕ вăл, — лăплан... Тем чул макăрсан та аннӳне чĕртес ҫук ĕнтĕ. Хăвна ху асап кăтартни ҫеҫ. Лăплан, хĕрĕм...

Тем вăхăтран Клавье чĕри кăштах хытнă пек пулчĕ, куҫҫулĕ типрĕ. Хуралҫă пулăшнипе урайĕнчен тăрса кравать хĕррине вырнаҫрĕ.

— Ҫитăр пичче... — ăша кайнă саспа чĕнчĕ хĕр, — ним пытармасăр каласа парăр-ха... Хăҫан ҫĕре кĕнĕ вăл? Чирленĕччĕ-им?

— Ҫапла ҫав... — хĕр каллех тăнран ӳкесрен упранса сăмах хушрĕ хуралҫă. — Аннӳ... йывăр тăпри ҫăмăл пултăр... Чирлĕ тенине илтмен. Виличченхи кун кил хушшинче ҫӳренине хам куртăм. Кăмăлĕ пурри ҫеҫ палăрмарĕ. Эсир ҫухалнипе хуйхăллă пурăннине пурте пĕлеҫҫĕ.

— Апла мĕн пулнă ăна? — малаллине пĕлесшĕн пулчĕ Клавье.

— Кам пĕлет... Ҫапла ҫав... Ҫур тырри аксан аҫу Шупашкара кайнă

тет-и те... Çавăнтан çĕрле ӳсĕр таврăнчĕ. Ирхине аçу лакее аннӳне апата чĕнме янă та... Аннӳ... Воспоти помилуй... чунĕ сĕтлĕ кӳлĕре çӳретĕр... вилсе выртнă. Хăй вилĕмĕпе вилмен текенсем те пулчĕç... Пытарасса питĕ чаплă пытарчĕç вара. Чиркӳ картишне пытарчĕç.

Хуралçăн юлашки сăмахĕсем Клавье хăлхине кĕмерĕç. Вăл мăнастирте Миххапа тĕл пулнине, хăй ун хĕрĕ марри çинчен каласа панине аса илчĕ. Никам та мар, амăшне хĕрĕ вĕлернĕ. Чунĕ тăвălса килнипе тӳсеймесĕр кравать çине ӳкрĕ, ӳт-пĕвĕпе чĕтрешсе макăрчĕ. «Ах, анне, анне... Сан пурнăçна эпĕ çирĕм... Мана пархатар пулас çук... Ах, анне, анне... Ирĕклĕ кунтан мар, ирĕксĕр кунтан пулчĕ... Каçар, тархасшăн...» — тесе пăшăлтатрĕ.

— Хĕрĕм, — ĕшеленсе ӳкрĕ хуралçă, — ват супнăна каçар... кирлĕ мара павраса, каллех сире хускатрăм. Урăх шарламăп. Аçу патне каяр та, вăл тĕплĕрех каласа парĕ.

Ашшĕ ятне асăнни Клавьене йăл илме пулăшрĕ. Вăл макăрма чарăнса выран çинчен çĕкленчĕ те:

— Атте?! — терĕ хаяррăн.

— Ийя, хĕрĕм... Аннӳ пирки манран нумайрах пĕлет вăл.

— Ман атте çук! — шухăшламасăрах персе ячĕ Клавье.

— Мĕнле çук? Паçăр кил хушшинче çӳренине хам куртăм-çке.

— Вăл ман атте мар...

— Мĕнле апла? — тĕлĕнчĕ хуралçă.

Ытлашши персе янине ăнланчĕ Клавье. Анчах каялла чакма та шутламарĕ. Пурпĕр мар-и ĕнтĕ. Камран вăтанмалла, камран хăрамалла унăн? Хăйне ырă сунакан старике каласа панипе чĕрери йӳçекне сиресшĕн пулчĕ Клавье.

— Çаплах, Çитăр пичче... Мана анне урăх арçынпа çуратнă...

— Пулма пултараймасть. Эсир тем аташатăр!

— Эпĕ килтен мĕн пирки тухса кайнине илтмен-и вара эсир?

— Энĕшкассинчи Николай Степанович ывăлĕпе, Юман паттăрпа, иксĕре мăшăрлантарма тăрсан, таçта кайса çухалнă тенине илтнĕччĕ. Анчах сăлтавне эпĕ çеç мар, ыттисем те пĕлмеççĕ.

— Вăт çав Юман паттăрăн ашшĕ ман атте те иккен... Кун çинчен пире анне хăй каласа пачĕ. Вара малтан Ванюк тухса кайрĕ. Унтан эпĕ те... Вилме шутларăм. Анчах кӳлле сикме хăват çитерейменрĕм. Шупашкарти хĕрарăмсен мăнастирне кайса кĕтĕм. Çавăнта Янаш Миххипе тĕл пултăм та эпĕ ун хĕрĕ маррине, ман атте Микула иккенне каласа патăм. Ахăртнех, çавăн хыççăн вĕлернĕ вăл аннене. Пуриншĕн те эпĕ айăплă... — Клавье шухăшне вĕçлемесĕрех чарăнчĕ. Питне ал лаппипе хупларĕ. Сассăр та хурлăхлăн макăрчĕ.

Хуралçă минресе кайрĕ. Ку хĕре вăл мĕн пĕчĕкрен пĕлет. Хавaслă та ырă кăмăлласкерччĕ. Унран телейлĕ хĕр те çук пекчĕ. Ашшĕамăшĕ юратнă, савнă ăна. Мĕн кирли пурте пулнă унăн... Ав, пурнăç тени епле килсе тухать иккен...

Тем вăхăтран Клавье макăрма чарăнчĕ. Ал лаппине пичĕ çинчен илчĕ те куççуль витĕр тухакан сасăпа хушса хучĕ:

— Хăварах куратăр ĕнтĕ, Çитăр пичче: ман пурăнмалли çук, вилмелли çеç юлнă...

Хуралçă хăраса ӳкрĕ. Ку хĕр хăй шухăшланине тума пултарасса ĕненчĕ. Вилĕмрен хăтарса хăварас шухăшĕпе:

— Клавдия Михайловна, — ӳпкелесе те йăлăнса чĕнчĕ вăл, — сире усал аташтарть. Сирĕнтен те ытларах нуша куракансем пур. Ашшĕсем вăрçăра пĕтнĕ ачасен пурнăçĕ çăмăл тетĕр-и? Е беженецсен пурнăçне аса илĕр-ха. Вĕсем çаппа-çарамас пе тăрса юлнă. Çапах пурнăçран уйрăласшăн мар. Эсир çамрăк-ха. Сывă çыннăн пурнăçшăн кĕрешмелĕх вăй-хăват кирлех... — Çавăнтах сассине пĕчĕклетрĕ те хуралçă хушса хучĕ: — Михаил Петрович сирĕн аçу марри пушшех те аван-и, тен... Вăл нихçан та ырă çын пулман. Халĕ ун йышши этемсем хисепре мар... Аннӳ пирки ан асапланăр. Уншăн эсир айăплă мар. Турă çырни çав таран пулнă пулĕ... Луччă чăн-чăн аçупа калаçса пăхăр. Вăл ырă кăмăллă çын.

— Катăргăра пĕтнĕ аттепе-и?

— Пĕтмен вăл! — чĕрĕленсе хуравларĕ хуралçă. Куçĕнче савăнăç çути палăрчĕ. — Таврăннă. Атăлкассинче пурăнать. Вулăса ертсе пыраканĕ вăл халĕ. Сăмах хускатнă май çакна та каласа парам. Халь пур çĕрте те пăтăрмах. Кашни кĕтесре пуху е митинг. Михаил Петровичран никам та хăрамасть. Çулла тарçисем пастовка туса чĕтретрĕç ăна. Малалла мĕн пуласса Турă кăна пĕлет. Çапла çав... Николай Степанович патне хăюллăн кай.

Клавье сасартăк аса илех кайрĕ: Ванюкпа иккĕшĕ пĕр юн тăванне Николай Степанович пĕлет тенĕччĕ-çке амăшĕ, кирлĕ пулсан пулăшу пама та сăмах туни çинчен каланăччĕ. Ванюкĕ пулсан тата аванччĕ. Вăл хута кĕрĕччĕ. Хĕр чĕрине темле шанчăклă хум ăшăтрĕ. Кăмăлĕ çĕклене пуçланине пытараймасăр ыйтрĕ:

— Эсир илтмен-и, Николай Степанович ывăлĕ, Ванюк, ашшĕпе пĕрлех-ши? Е Энĕшкассинче кукашшĕсем патĕнче пурăнать-ши?

— Тухса кайнăранпа нимле сас-хура та çук теççĕ. — Хĕр кăмăлне сӳнтересшĕн мар хушса хучĕ: — Уншăн хуйхăрас мар-ха. Пĕчченупа тытма пултарнă паттăр çухалмĕ. Мехелĕ çитсен таврăнĕ. Чимха, мана ятлама та тивĕç. Сирĕн хырăм та выçнă пулĕ, эпĕ вара кирлĕ-кирлĕ мар сăмахсемпе вăхăта ирттеретĕп. Клавдия Михайловна, кĕçĕр пурпĕр ниçта каймалли те çук. Ирхинехи ăс каçхинехинчен тимлĕрех теççĕ. Халь хывăнăр та сĕтел хушшине ларăр. Пĕрер курка чей тултарса парам. Сахăр çук та, вĕри шыв çапах чĕрене сыпăнтарĕ. — Дворник тимĕр кăмака çинчи чейникрен вĕретнĕ шыв тултарчĕ. Пĕр чĕл çăкăр касрĕ. Кăмакара пĕçернĕ çĕр улми кăларчĕ. — Ларăр-ха ĕнтĕ! Темле хуйхăрсан та, пулни-иртнине каялла тавăрас çук. Хăвăра пĕтерни çеç. Мĕн пуррине çырткаласа чĕрӳне сыпăнтар та вăй хуш.

Клавье фуфайкине хывса йăрхаха çакрĕ те сĕтел хушшине ларчĕ.

Çырткаланă хыççăн хуралçă Клавьене хăй вырăнĕ çине вырттарчĕ. Çывăрма канлĕ пултăр тесе хăйă сӳнтерчĕ те кил хушшине тухрĕ. Пĕччен юлсан Клавье куçĕ умне çак кунсенче пулни-иртнисем карталанса тухрĕç...

Клавье келире чухне кӑтӑш пулайнӑччӗ, ӑранчӗ те — лампадка сӳнменнипе куҫ тӗшмӗртмелӗх ҫутӑ пур. Чӳречерен пырса пӑхрӗ. Тулта тӗттӗм-ха. Кӗтнӗ май кравачӗ ҫине ларчӗ. Тӑна кӗнӗн сӑнама пуҫларӗ. Тӑрпасӑр лампӑпа лампадка тӗтӗмпе хуралнӑ чул стенасем, решеткеллӗ пӗчӗк чӳрече, халь пусарас пек лутра мачча кичеммӗн курӑнаҫҫӗ. Ҫак шӑтӑка вӑл ҫичӗ уйӑх каярах пӗтӗм хуйхи-суйхине сиресшӗн, Турра парӑнса канлӗх тупасшӑн, ҫылӑхне каҫарттарса сӑвапа тупасшӑн килсе кӗнӗ. Ун чухне вӑл вун ҫичӗ чулхи ҫепӗҫ чӗреллӗ хӗрччӗ. Мӑнастирти йӑла-йӗркесем кӑмӑл-туйӑмне, сӑнне-питне йӑлтах улӑштарчӗҫ. Халь унӑн мӗн пурӗ те пӗр ӗмӗт — ҫак тамӑкран хӑтӑлмалла.

Кӗҫех алӑк уҫӑлчӗ. Келине Софья манашка кӗчӗ те хуллен:

— Кайрӑмӑр, йӑмӑкӑм... — терӗ.

Тулта вӗсене тепӗр икӗ манашка кӗтсе илчӗҫ. Мӗн тумаллине малтанах калаҫса татӑлнӑ пирки сӑмах хушмасӑрах хапха еннелле ҫул тытрӗҫ. Кил хушши тарӑн шӑплӑхра. Пӗр чӳрече витӗр мӑчи куҫ пек ҫутӑ курӑнмасан, ахӑртнех, кунта ҫынсем вилсе пӗтнӗ тейӗн. Клавьесем ҫутӑ курӑнакан ҫурт патне пычӗҫ. Софья хуллен шаккарӗ. Ҫав самантрах алӑк уҫӑлчӗ те, Клавьесем коридора кӗчӗҫ.

— Мӗнле? — пӑшӑлтатрӗ Софья.

— Сывӑрать пулмалла. Нимле сас-чӳ те ҫук, — хуллен хуравларӗ игуменья канлӗхе упракан манашка.

Манашка йӑнӑшрӗ. Игуменйӑн лӑш выртса ҫывӑрса каяс йӑла тахҫанах ҫухалнӑ. Пулни-иртнисем канӑҫсӑрлантарни ыйхине вӗҫтернӗ. Ара, ӑҫтан тӑнӑҫ пурӑнӑн. Патшана тронран тӳнтерни минретнӗччӗ. Вӑхӑтлӑх правительство ӗлӗкхи пекех мӑнастире хӳтӗлессине ӗненсен, патша пирки ҫуралнӑ хуйхӑ сирӗлме пуҫланӑччӗ. Янашов килсе минретрӗ. Ҫав киремет ҫамрӑк хӗре тем тунӑ та пӗр сӑмахсӑрах тухса тарчӗ. Игуменья ҫыру та ярса пӑхрӗ, пурпӗр килсе курӑнмарӗ. Паян кунччен вӑл Миххапа ҫамрӑк хӗр хушшинче мӗн пулнине пӗлеймесӗрех пурӑнать. Темиҫе хут тӗпчесен те, хӗр ялан «астумастӑп» тесе хуравлать. Пурӑна киле хресченсем мӑнастир ҫӗрӗпе вӑрманӗ ҫине куҫ хуни палӑрчӗ. Вӗсем ыраш акса хӑвармалли ҫӗре самаях туртса илнӗ. Мӑнастир улӑх-ҫаранӗ ҫине кӗтӗвӗсене кӗртсе янӑ. Вӑхӑтлӑх правительствӑн тӳри-шарисене, уезд комиссарне евитлени усӑллӑ пулмарӗ. Унтан та хӑрушшине архиерей килсе хыпарларӗ. Вӑхӑтлӑх правительствӑна сирпӗтнӗ, Совет влаҫӗ туса хунӑ терӗ. Ҫав влаҫ улпутсен, мӑнастирсемпе чиркӳсен ҫӗрне, вӑрманне, пӗтӗм мулне халӑх ирӗкне туртса илме йышӑннӑ терӗ. Мӑнастир кун-ҫулӗ тӗп пуласран Совета, большевиксене хирӗҫ кӗрешӳ тапратма хушрӗ. Мӑнастир ахаль ҫынсем ҫӳремеҫҫӗ, шанӑҫлӑрах манашкӑсене хӑйсене халӑх хушшине ямалла. Ан тив, тӗнче пӗтес ҫӗр ҫине антихристсем килни ҫинчен хыпар сарса ҫӳреччӗр. Куна ыранах тӑвӗха вӑл... Пӗтӗм ҫилӗ тӑвӑлса килнипе шӑлне шатӑртаттарчӗ. Совет тени пуҫӗпех ҫирӗпленсен, мӗн тумалла? Мӑнастире килсе тустариччен тухса шусан авантарах мар-ши? Игуменья ҫӑлӑнӑҫ шыранӑн темиҫе ҫул пухнӑ мулне сӗтел ҫине кӑлара-кӑлара купаларӗ. Иккун

кётессинче лампадка ҫути ылтӑнпа ахаха йӑлкӑштарса ячӗ. Мӗн кӑна ҫук-ши кунта? Акӑ хӑлха ункисем, ҫӗрӗсем, сулӑсем, брошкӑсем. Ку туфлин ылтӑн тӑхисем Михха пӑтратса хӑварнӑ хӗрӗн, сулисем те ҫавӑн. Шучӗ ҫук пуянлӑх игуменья кӑмӑлне ҫӗклерӗ. Тути ҫинче хаваслӑ кулӑ вылярӗ. Ҫакна шанать вӑл: кун чухлӗ пуянлӑхпа таҫти шӑтӑкра та лайӑх пурӑнса ирттерӗ. Игуменья пурлӑхне вӑрттӑн шӑтӑка пытарчӗ те, лӑпланнӑ пек пулса, кравать ҫине выртрӗ. Анчах кӑтӑш пулайманччӗ — алӑка шаккани илтӗнчӗ. Игуменья шартах сиксе тӑрса ларчӗ. Туйӑннӑ пек ҫеҫ шутласа хӑй ҫине хӗрес хучӗ. Каллех шаккарӗҫ. Туйӑнни мар иккен. Ҫӗрле никам та чӑрмантаракан марччӗ-ҫке. Ӑҫта мӗн сиксе тухрӗ-ши?

Игуменья чӗтре-чӗтре алӑк патне пычӗ.

— Кам унта? — терӗ сиввӗн.

— Эпӗ... Сӑваплӑ матӑшкӑ, уҫӑр-ха!

Коридорта хурал тӑракан манашка сассине чухласан та игуменья чӗри лӑпланмарӗ.

— Ма ыйхӑран вӑратрӑн? Мӗн пулнӑ?

— Сӑваплӑ матӑшкӑ... — ёнтӗ ытарлӑ сасӑ илтӗнчӗ. — Ман сире ҫак самантрах пӗлтермелли хыпар пур...

Игуменья питӗркӗче катерчӗ кӑна — алӑк уҫӑлчӗ те пӳлӗме пилӗк манашка кӗрсе тӑчӗ. Алӑка шалтан питӗрчӗҫ. Игуменья мӗнле хӑрушлӑх ҫитнине тавҫӑрайманнипе тилӗрсе кайрӗ.

— Мӗн кирлӗ сире?! — кӑшкӑрса пӑрахрӗ вӑл.

— Сӑваплӑ матӑшкӑ... — мала тухса чӗнчӗ Софья. Анчах «сӑваплӑ» тени хисепленӗн мар, йӗкӗлтенӗн илтӗнчӗ, — пире ытлашши нимех те кирлӗ мар. Эпир тав тума кӗтӗмӗр. Эсӗ кунта патши те, турри те ху пулнипе пире пайтах асаплантартӑн. Аҫа йытӑсене йыхӑрса мӑшкӑллаттартӑн... Пуриншӗн те тайма пуҫ...

Игуменья алӑка питӗрнине курмарӗ пулсан та манашкӑсем ырӑ шухӑшлӑ маррине ӑнланчӗ. Парӑнтарма хӑнӑхнӑ сӑмахне хыттӑн каларӗ:

— Сирӗн ӑшра сатана йӑва ҫавӑрнӑ. Христос турӑ умӗнче чӗркуҫленӗр! Пуҫҫапса ҫылӑхӑрсене каҫарттарӑр! — Манашкӑсем ҫавҫавах ура ҫинче тӑни, тахӑшӗ ихӗлтетни игуменйӑна ухмаха ертрӗ тейӗн: — Ылханатӑп сире! Чунӑрсем ӗмӗр-ӗмӗр тамӑк хуранӗнче ҫунччӑр!

— Сӑваплӑ, матӑшкӑ... — каллех йӗкӗлтенӗн чӗнчӗ Софья, — леш тӗнчере тамӑк пулас тӑк, сана хуранӑн чи тӗпӗнче ӑшалантарӗччӗҫ. Мӗншӗн тесен санран ирсӗр ҫын тӗнчипе те урӑх ҫук. Анчах тамӑк текенни леш тӗнчере мар, ак ҫакӑнта вӑл. Ҫавӑнпа эсӗ ылханни ҫине суратпӑр кӑна!

Ан тив, игуменья та тӗне ӗненсех кайман пулӗ, манашкӑсем хушшинче тӗне ҫак тери хур кӳрессе сунман. Вӗсем хӑйсене хӑйсем яланах сӑпайлӑн та мӗскӗннӗн тыткаланӑ, пӗр сӑмахранах хушнине тума тӑрӑшнӑ. Апла тесен, игуменья пӳлӗмне чӑн та усал сывлӑш кӗрсе тулман-ши? Вӑл иккун умне хӑварт чӗркуҫленчӗ. Икӗ аллине ҫӗклесе юрласа ячӗ:

— Эй, таса Турӑ амӑшӗ, ҫӑл пире… Эй, атте турӑ, ҫӑл пире… Эй, ывӑл турӑ, ҫӑл пире…

— Феодосия Ларионовна!

Игуменья сасартӑках антрашма чарӑнчӗ. Пуҫламӑш хут мӑнастире киличченхи ятпа чӗннине илтрӗ вӑл. Ку ӑна кичеммӗн те темле пысӑк пӗлтерӗшлӗн туйӑнчӗ.

— Эс павранине итлесе тӑма вӑхӑт ҫук пирӗн. Эпир ҫылӑхлисен тӗнчине таврӑнма шутларӑмӑр. Анчах ҫула тухма укҫа ҫук. Эсӗ мӑнастире, пире те ҫаратса нумай мул пухрӑн. Ав, Лена йӑмӑкӑннех тем те пӗр туртса илнӗ. Вӑт… ҫав мулран пире те пай кӑлармa ыйтатпӑр…

Игуменья тинех вӗсне ҫити ӑнланнӑ пек пулчӗ: ҫаратма килнӗ. Ку уншӑн тӗне пӑрахнинчен те хӑрушӑрах. Вӑл пӗтӗм сассипе тискеррӗн кӑшкӑрса ячӗ:

— Кӑраву-ул! Ҫаратаҫҫӗ! Ҫӑ-ӑлӑ-ӑр!

Манашкӑсем хӑраса ӳкрӗҫ, анчах часах лӑпланчӗҫ. Ку пӳлӗмре пыршӑ татӑлас пек кӑшкӑрсан та никам та илтес ҫук.

— Феодосия Ларионовна! — сассине хулӑнлатрӗ Софья. — Кӑлӑхах ҫуйхашатӑр! Сирӗн сасӑ кунтан тухаймасса хӑвӑрах пӗлетӗр. Луччӑ мулна кӑларса пар та… Эпир чиперех тухса кайӑпӑр… Атту?! — манашка аллине чӑмӑрласа игуменья патнелле утӑмларӗ. Лешӗ сиксе тӑчӗ те сурчӑкне сирпӗтсе кӑшкӑрашрӗ:

— Эсир сатанасем, тухса кайӑр! Тухса кайӑр!

— Мӗн каласса тӑратӑр ҫав арҫурипе?! Ҫулса илес те ӗҫӗ пӗттӗр, — ӑс пачӗ пӗр манашки.

Ҫав самантрах икшерӗн икӗ енчен хупӑрларӗҫ те, игуменйӑна хӑшӗ кӗпинчен, хӑшӗ ҫӳҫӗнчен тытса, сӗтел хушшинчен сӗтӗрсе кӑларчӗҫ. Урайне тӑсса вырттарчӗҫ, хатӗрлесе килнӗ вӗрен татӑкӗпе аллине каялла ҫыхрӗҫ, урине тӑлларӗҫ.

— Кӑраву-ул! Сатанасем ҫулӑхрӗҫ, вӗлереҫҫӗ!

Манашкӑсем пӗлсех тӑраҫҫӗ: ыттисем ирхи кӗлле хускаличчен мӑнастиртен тухса шӑвӑнмалла. Унсӑрӑн тем курса ларӑн. Софья ҫивӗтрен тытса ҫӗклерӗ те:

— Феодосия Ларионовна, кӑшкӑрса вӑхӑта ан тӑс, кала: ылтӑнкӗмӗлӳ ӑҫта санӑн?!

— Ман нимле ылтӑн та, кӗмӗл те ҫук! Тухса кайӑр!

— Ну, юрӗ! — татӑклӑн астутарчӗ те Софья сӗтел ҫинче выртакан Евангели листисене вӑтӑрса илчӗ. Чӑмаккаларӗ. Лампадка ҫулӑмӗ ҫине тытса тивертрӗ. Игуменья патне таврӑнса:

— Эсӗ пире яланах тамӑкра ҫунтарассипе хӑратрӑн. Эпир сана ҫӗр ҫинчех ҫунтарӑпӑр. Ҫунас килмесен мулу ӑҫтине кала!

— Ман нимле мул та ҫук!

Игуменья хӑратасшӑн кӑна пулӗ тесе парӑнмарӗ. Пушшех те хытӑ ҫуйхашрӗ.

— Эй, атте турӑ, ҫылӑхӑмӑра каҫарсамах… Ирӗксӗртен усал ӗҫ тума лекет, — терӗ те Софья сӑхсӑхса илчӗ. Вара ҫунакан хута игуменйӑн ура тупанӗ ҫумне тытрӗ.

— Аяяй! Аяяй! — пусма вырттарнă сысна пек çуйхашрĕ игуменья.

Ӳт ăшаланнипе кукар шăрши тапса тухрĕ. Клавьен пуçĕ çаврăнса, кăмăлĕ пăтранса килчĕ. Алăк çумне тайăнса тăман пулсан ӳкĕччĕ те. Ан тив, игуменйăна вăл та пĕтĕм чунĕпе кураймасть те, тусăмĕсем çак териех айкашасса кĕтмен. Чарас шухăшĕ те пурччĕ — ĕлкĕреймерĕ. Игуменья тӳсĕмĕ татăлнипе:

— Калатăп... — тесе ячĕ.

Софья çав самантрах çунакан хута урайне пăрахрĕ те таптаса сӳнтерчĕ.

— Эй, атте туррăмăр, çылăхăмăрсене каçарсамах... Ирĕклĕ кунтан мар, ирĕксĕртен усал ĕç тума тиврĕ... — сăхсăхса илчĕ Софья. Игуменья кăмăлне çитересшĕн пек, ун хутне кĕнĕн çапла хушса хучĕ: «Сăваплă матăшкă, эпир сана сиен кӳресшĕн марччĕ. Ху айăплă. Кутăнланмалла марччĕ. Кала! Унсăрăн кунпах чарăнмăпăр».

— Кравать айĕнче, урай хăмине касса тунă шăтăкра. Хупăлчине уçăр... — сассине аран кăларчĕ игуменья.

Манашкăсем кравате сиктерчĕç те сакай хуппи пеккине тупса уçрĕç. Çурта çутса пăхрĕç. Унтан çăрапа питĕрнĕ арча турса кăларчĕç. Игуменья шанăçне çухатнипе текех турткалашса тăмарĕ, уçă ăçтине те каласа пачĕ. Арчана уçсан манашкăсен куçĕсем алчăраса кайрĕç: ылтăн та ахах йăлтăртатать. Вăхăт пулсан пĕр пек пайлĕччĕç. Халь камăн аллине мĕн лекнĕ, çавна иле-иле кĕсйисене тултарчĕç. Клавье алăк патĕнчен те хăпманнине асăрхасан:

— Йăмăкăм, мĕн пăхса тăратăн! Кил, кĕсйӳне тултар! Çул çинче кирлĕ пулĕ, — терĕ Софья. Хĕрĕн хăю çитейменнипе йĕкĕр ывăç тулли ылтăн йăтса пычĕ: — Тыт хăвăртрах. Вăтанмалли çук. Хăвăнне те сахал туртса илмен, — Клавье темле ирсĕр япала çыпçăнасран хăраса каялла чакса тăчĕ.

— Кирлĕ мар, кирлĕ мар, аппаçăм! Ирĕкре ылтăнсăрах выçă вилмĕп-ха.

— Хăвăн ирĕк. Кайран ан ӳпкеле! — астутарчĕ Софья.

— Çук, çук, аппаçăм, ӳпкелеместĕп!

Арча тĕпĕнче хаклă йышши япаласем татах пур та — манашкăсен урăх чикме вырăн çук. Тата васкамалла та. Кĕçех ирхи кĕлле кĕме чан çапасран хăрушă.

— Вăт çапла, сăваплă матăшкă... Пирĕншĕн те Турра кĕлту! — тесе хăварчĕç манашкăсем.

Вĕсен çулĕ çинче тата тепĕр хăрушлăх пур-ха. Хапха патĕнчи хуралçăна тем чул хăратса та хăйсем май çавăраймарĕç. Хапха уççи çавăн аллинче. Кĕтесрен кĕтессе пытанса çывхарчĕç вĕсем. Хуралçă курăнакан пулсан чарăнса сăнарĕç. Лешĕ тăлăп çухавине тăратнă та ытла ним хускалмасăр ларать. Çĕрле никам та çӳрес çуккине шаннипе çывăрса кайни паллах. Ку питех аван-ха. Манашкăсем сас-чӳ тумасăр çитрĕç те хуралçа юр çине туртса пăрахрĕç. Пусса выртса çăварне тутăрпа пăкăларĕç. Ал-урине вĕренпе çыхса кĕсйинчен уçă кăларса илчĕç...

Игуменья самай хушă тăнран тухнă пек пулса выртрĕ. Тем пулсан

та пурлӑхне илсе каясса кӗтмен вӑл. Тӑн кӗре пуҫласанах арчара мӗн юлнине курас килчӗ унӑн. Урине ҫыхнипех, авкаланса, арча патне пычӗ. Чӗркуҫленсе пӑхрӗ те пӗтӗм сассипе макӑрса ячӗ. Темиҫе ҫул пухнӑ ылтӑн-кӗмӗл арча тӗпӗнче кӑна юлнӑ. Унӑн мӗнпур пурнӑҫӗ ҫав мулраччӗ. Куҫа хупса иличчен нимсӗр тӑрса юлчӗ...

Коридорта тӑракан хуралҫа улӑштаракан манашка килчӗ. Тусӗ ҫуккипе тӗлӗнчӗ. Яланах вырӑнта пулаканччӗ-ҫке. Шала кӗнӗ-ши? Тӗпчесе пӗлесшӗн алӑк хӑлӑпне тытса туртрӗ. Алӑк ҫӑмӑллӑнах уҫӑлчӗ. Шалта макӑрнӑ сасӑ илтӗнчӗ. Манашка васкаса алӑк пуканӗ урлӑ каҫрӗ. Пӳлӗмре лампадка ҫути ҫеҫ пулсан та, игуменья темле арча патӗнче чӗркуҫленсе тӑнине асӑрхарӗ.

— Сӑваплӑ матӑшкӑ, мӗн пулнӑ кунта? — терӗ манашка ним тума аптранӑ енне.

Игуменйӑна такам юлашки мулне ҫаратма килнӗн туйӑнчӗ. Хаяррӑн кӑшкӑрашрӗ:

— Кӑраву-ул! Ҫаратаҫҫӗ! Ҫӑлӑ-ӑр!

Манашкӑсем пӗр-пӗрин ҫине тӗлӗннӗн пӑхса илчӗҫ. Коридорта хурал тӑма черет ҫитнӗ манашка игуменйӑна йӑпатса тӑна кӗресшӗн пулчӗ:

— Сӑваплӑ матӑшкӑ... — терӗ йӑвашшӑн, — никам та ҫаратма килмен кунта. Пурте хӑвӑра парӑннӑ йӑмӑкӑрсем кӑна. Лӑпланӑр та каласа парӑр, мӗн пулнӑ?

— Эсир пурте сатанасем... Тухса кайӑр! Ылханатӑп сире!

Игуменья ухмаха ернине чӑннипех ӗненчӗҫ те тек сӑмах хушмасӑрах тухса кайрӗҫ. Алӑка тул енчен питӗрсе илчӗҫ.

## III

Келире пурӑннӑ чухне хӗле кӗни ытлашшиех палӑрман пекчӗ. Халь урама тухрӗҫ те чӗтрекен пулчӗҫ. Юрӗ те тарӑн ҫуса лартнӑ иккен.

Сасартӑк мӑнастир чанӗ пушар тухнӑн янлама пуҫларӗ. Манашкӑсем шартах сиксе ӳкрӗҫ. Ҫаврӑнса тӑрсах сӑхсӑхрӗҫ. Ҫулӑм-мӗн курӑнманнипе ҫав самантра тавҫӑрчӗҫ: хуралҫа улӑштарма пынӑ манашка пӑтӑрмах тапратнӑ ӗнтӗ. Ӗлӗкхи пек полици тавраш не евитлесе тыттарас ҫук та, хӑйсем шырама тухасран хӑрушӑ. Кунтан хӑвӑртрах тасалнинчен ырри пулмӗ. Виҫӗ манашка хӑварт сыв пуллашса уйрӑлсан:

— Клавье йӑмӑкӑм, эс ӑҫталла ҫул тытатӑн? — терӗ Соня.

— Ун пирки шухӑшламан-ха, аппаҫӑм.

— Хампа пӗрлех илсе кайаттӑм. Йӑвам тӗлӗ ҫукки аптратать. Яланлӑхах уйрӑлас умӗн сана юлашки хут канаш парам...

— Тархасшӑн, аппаҫӑм...

— Аннӳ каланине чӗрӳне ил. Вӑл сана суйма пултарайман. Сан чӑн-чӑн аҫу, Николай Степанович, чунсӑр ҫын пулас ҫук. Турӑ ӑна шӗкӗрех ҫавӑрса килнӗ пулсан, тӳрех ҫавӑн патне кай. Вӑл сана йышӑнӗ.

— Ырӑ сӑмахшӑн тавтапуҫ, аппаҫӑм...

— Ёнтӗ сывпуллашма та вӑхӑт, Клавье йӑмӑкӑм... Тамӑкра чухне сана кӳрентернисем те пулчӗҫ. Каҫар, тархасшӑн, — аллисене кӑкӑрӗ ҫине хӗреслесе пуҫ тайрӗ Софья.

— Ху мана, ӑссӑрскере, каҫар... Ман пурнӑҫа упрама тӑрӑшнӑшӑн чун-чӗререн тав тӑватӑп... Кун-ҫулу телейлӗ пултӑр, — Клавье те аллисене кӑкӑрӗ ҫине тытса пуҫ тайрӗ.

— Сана та ҫавнах сунатӑп, хаклӑ йӑмӑкӑм.

Вӗсем ыталанчӗҫ. Куҫӗсенчен куҫҫуль шӗпӗртетсе анчӗ. Урӑх пӗр сӑмах хушмасӑр уйрӑлчӗҫ. Софья собор урамӗпе тӑвалла васкарӗ. Клавье ӑна куҫран ҫухаличчен пӑхса ӑсатрӗ.

Тул ҫутӑлса килни, урам хушши чӗрӗлме пуҫлани Клавьене тӑна кӗртрӗ. Куҫҫульне шӑлса типӗтрӗ те иртен-ҫӳрен ун ҫине шанмасӑр пӑхнине асӑрхарӗ. Вара ҫавӑнтах хӑй манашкӑсен тумтирӗпе пулнине аса илчӗ те хыпӑнса ӳкрӗ. Ӑҫта улӑштарса тумланмалла-ши? Шупашкарта Бернадскипе Лаврский пурӑннине пӗлет вӑл. Кӗрсен, чиперех йышӑнӗччӗҫ, тумлантарӗччӗҫ-и, тен. Ҫук, вӗсем патне кӗме юрамасть. Апла мӗнле майпа улӑштармалла-ха мӑнастир тумтирне? Пӗр май ҫеҫ: тумтирпе сутӑ тӑвакан лавккана кӗрсе мӗн те пулин илмелле. Анчах мӗнпе тӳлемелле? Вӑл ирӗксӗрех Софья аппӑшӗ сӗннипе усӑ курманнишӗн пӑшӑрханчӗ. Тӗрӗсех, унта хӑйӗн те япалисем пулнӑ-ҫке. Пӗр сулине илнӗ пулсан та шӗкӗр тумланма пулӗччӗ. Ирӗксӗрех ҫумри хӗресе сутма тивет.

Клавье лавккана кӗчӗ. Тин ҫеҫ уҫӑлнипе никам та ҫук-ха. Прилавка умӗнче тӑракан хуҫа, манашка кӗнине курсан, усал-тӗселпе тӗл пулнӑн тӗлӗнчӗ. Клавье ӑна-кӑна асӑрхамарӗ, тӳрех хуҫи патне пычӗ те:

— Ман хам ҫири тумтире улӑштарса тӑхӑнасчӗ, — терӗ.

Сутуҫин кӑмӑлӗ ахаль те пӑсӑкчӗ. Патшана пӗтерчӗҫ. Вӑхӑтлӑх правительствӑна та сирпӗтрӗҫ. Совет влаҫӗ туса хучӗҫ. Хулара ӗлӗк ҫын шутӗнче пулман мӗскӗнсем пуҫне ҫӗклерӗҫ. Ни пуянне, ни тӳрешарине уямаҫҫӗ. Пурнӑҫӑн уҫҫи-хуппи палӑрми пулчӗ... Манашка тумтирне улӑштарасшӑнне пӗлсен, тилӗрсе кайрӗ.

— Эппин... тумтире улӑштармалла-и? — ӳрӗк-сӳрӗккӗн тавӑрса хучӗ сутӑҫ. — Путакан карап ҫинчен йӗке хӳре пек тарас-и? Большевиксен урапи ҫине ларас шухӑш пур-им? Кӑлӑхах тӑрӑшатӑр, вӗсем сирӗн пек хура тумлӑ этемсене йышӑнас ҫук!

Клавье пӗр вӗриленсе, пӗр сивӗнсе кайрӗ. Ӑна куҫ кӗретех хур кӳреҫҫӗ. Ҫавӑнпа унӑн мӑнастире лекичченхи мӑнаҫлӑхӗ хускалчӗ. Вӑл пуҫне каҫӑртса ҫилӗллӗн тавӑрса хучӗ:

— Эсир мӗнле карап ҫинчен персе аннине пӗлместӗп, анчах пуҫӑра хытах анратнӑ курӑнать. Унсӑрӑн тавар илме кӗнӗ ҫынпа ӳсӗр ҫынла каласмӑттӑр. Эпӗ кампа пӗрле каяс пирки сирӗн пушшех ним ӗҫ те ҫук. Тавар сутакансем юнашарта та пулӗҫ-ха. — Клавье тухса каяс шутпа алӑк еннелле ҫаврӑнчӗ. Ҫакӑ лавкка хуҫине тӑна кӗртрӗ. Тавар илме килнӗ ҫынна урӑх лавккана кӑларса ярасси ҫӑпан тухнинчен те хӑрушӑрах.

— Тӑхтӑр-ха! — сассине пачах улӑштарчӗ сутӑç. Клавье чарӑнсан хушса хучӗ: — Эпӗ сире çиллентересшӗн марччӗ, шӳтлерӗм кӑна. Калӑр, мӗн кирлӗ сире?

Клавье шухӑша кайрӗ. Чӑнах, мӗн кирлӗ ӑна? Чаплӑ пальто илме укçи çук унӑн. Вара манашкӑсем ёçре фуфайкӑпа çӳренине аса илчӗ те:

— Ял хӗрарӑмӗсем тӑхӑнакан сарафан парӑр... Тата фуфайка... — терӗ. Сутӑç ыйтнӑ япаласене иле-иле хучӗ.

— Суйлӑр, тархасшӑн!

Клавье пӗр сарафанне тытса виçкелерӗ. Юрӑхлӑ пек шутласа:

— Çаксене илӗп... Анчах укçа çук-ха манӑн, — терӗ.

Сутӑç кӑмӑлӗ тепӗр хут пӑсӑлчӗ.

— Кунта мӑнастир мар. Ахалех илес тесен каялла таврӑн! — хатӗрленӗ япаласене каялла ывӑта пуçларӗ.

— Ытлашши ан пӑлханӑр-ха! — терӗ Клавье. — Укçа çук тени тӳлеме пултараймастӑп тени мар. Ман хаклӑ япала пур!

— Мӗн пур вара аплах...

— Халех! — терӗ те Клавье хӗресне мӑйӗнчен кӑларса илчӗ, сутӑç еннелле тӑсрӗ: — Акӑ!

Сутӑç çан-çурӑмне сивӗ тар тапса тухрӗ. Ан тив, хӑй те тӗне çирӗпех ӗненмест те, ӑна ят хурса хӗрес çактарнӑ. Ашшӗ-амӑш йӑлишӗн те пулин хӗресе пӑрахас çук вӑл. Ку манашка ним пӑлханмасӑр хывса илчӗ те таварпа улӑштарасшӑн. Хӗресӗпе пӗрле инкек парса хӑвармӗ-и?

— Мӗн тӗлӗрсе тӑратӑр? Е хӗрес сан япалусен хакне тӑмасть тесе шутлатӑр-и? Ытлараха та тӑрать вӑл. Акӑ, пӑхӑр! — Клавье вӑчӑрине пӗр пуçӗнчен тытса тӑсрӗ. Сутӑç куçӗ алчӑраса кайрӗ. Вара хӑй тӗне кӗнине, мӑйӗнче хӗрес пуррине те манса кайрӗ. Хальхи самана, хут укçа кунран-кун йӳнелсе пынӑ вӑхӑтра, кашниех ылтӑн е кӗмӗл пухма тӑрӑшаççӗ.

— Ку сирӗн чӑн та...

Сутӑç сӑмахне вӗçлемерӗ те — Клавье ӑнланчӗ. Пушӑ алпа тухса каясшӑн мар, ӗнентерме тӑрӑшрӗ:

— Ийя. Ман аттепе анне йӗс е пӑхӑр çактарса çӳрекен çынсем пулман.

Сутӑç ёштеленсе ӳкрӗ. Кирлӗ-кирлӗ мара калаçса кӑларса ярать-çке.

— Юрӗ ӗнтӗ! — килӗшрӗ вӑл.

Клавье хӗресе тыттарчӗ те суйланӑ тумне илчӗ. Каллӗ-маллӗ пӑхкаласа манашкӑн кӗпине пӑрахса тӑхӑнмалли хӳтлӗх шырарӗ.

Сутӑç айккинчи алӑка уçса сӗнчӗ:

— Çавӑнта кӗрӗр!

Клавье çухалсанах сутӑç вӑчӑрана тӑскаласа пӑхрӗ. Хӗресне куçӗ çывӑхӗнче тыткаласа пробине тупрӗ. Пӗтӗм чунӗ савӑнса кайрӗ. Чӑн та ылтӑн. Хакне те чухлать. Ку ылтӑнпа манашка хуçа хӗрӗ пек юсанма пултаратчӗ.

Клавье айккинчи пӳлӗмрен тухрӗ. Фуфайкӑпа çеç пулсан та манашка тумне хывса пӑрахнипе вӑл çамрӑк та илемлӗ. Сутӑç ирӗксӗрех хӗрхенсе пӑрахрӗ.

— Инҫете каймалла-и сан? — терӗ.

— Атӑлкассине... — пытармарӗ Клавье.

— Атӑлкассине ҫитмӗл ҫухрӑм ытла. Ҫул ҫинче лав тытма тата апатланма укҫа кирлӗ. Хӗресшӗн тумтир туянтарнисӗр пуҫне ҫӗр тенкӗ паратӑп! — терӗ те сутӑҫ ҫирӗмшер тенкӗлӗх хут укҫасем кӑларса тыттарчӗ. — Чипер ҫит!

Клавьен кӑмӑлӗ ҫемҫелчӗ.

— Тавтапуҫ... Мана ырӑ тунӑшӑн хӑвӑра ырлӑх сунатӑп.

Манашкӑсен тумтирне хывса пӑрахнӑ хыҫҫӑн Клавьене тимӗр решеткеллӗ читлӗхрен хӑтӑлнӑ, вӑй та хутшӑннӑ пек туйӑнчӗ. Урам тӑрӑх утнӑ ҫӗрте ҫакна та асӑрхарӗ: хирӗҫ пулакансен пит-куҫӗнче хаваслӑх ҫиҫет. Телейлӗ ҫынсем кӑна ҫапла пулаканччӗ. Апла тесен, пурнӑҫра мӗн сиксе тухнӑ-ши? Хӳмесем ҫинче тӗрлӗ плакатсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Клавье ирӗксӗрех чарӑнса тинкерчӗ те «Декрет о мире», «Декрет о земле» тесе ҫырнине вуласа илчӗ. Унччен те пулмарӗ — ҫамрӑк салтаксем юрласа килеҫҫӗ.

Смело, товарищи, в ногу!
Духом окрепнем в борьбе.
В царство свободы дорогу
Грудью проложим себе...

Ҫывӑха ҫитсен ҫакна та асӑрхарӗ Клавье: пӗрин те наган ҫук, ҫӗлӗкӗсем умне хӗрлӗ хӑю ҫыпӑҫтарнӑ. Клавьене килти пурнӑҫ пуҫӗпех улшӑннӑн туйӑнчӗ. Анчах ӑнкарса тӑма вӑхӑт ҫук. Вӑл сасартӑк хӑй ӑҫта кайма тухнине аса илчӗ те, канӑҫсӑрлантаракан шухӑшӗ ашшӗ ҫине куҫрӗ. Ӗлӗк ашшӗ шутланнӑ ҫын куҫӗ умне курӑнма юрамасть унӑн. Михха тем туса пӑрахма та пултарать. Амӑшӗпе кӑна курнӑҫмалла. Вӑл ӑна пӑрахмӗ. Малашнехи пурнӑҫа йӗркелеме те пулӑшӗ. Анчах хӑш ҫулпа каймалла-ши? Ҫу вӑхӑчӗ пулсан, пӑрахут ҫине ларӗччӗ те Атӑлкассине часах ҫитӗччӗ. Халь ҫуран утмалла. Хӑш ҫулпа-ши? Сӑртпа та кайма пулассине илтнӗ вӑл. Хурӑн ҫулӗ ҫине кӑна тухмалла. Ку ҫул ӑна Ӗнел ҫӗр общинине кӗрекен Ҫӑкалӑх ялнех ҫитерӗ. Унтан Атӑлкасси инҫе мар. Ҫӳресе курман ҫул яланах инҫе пек туйӑнать. Унти ҫул ӑҫӑн та таврарах тенине те илтнӗ вӑл. Ҫавӑнпа Атӑл тӑрӑх утма шутларӗ. Ку ҫулпа та ҫуран ҫӳремен те, пӑрахут ҫинче ларса пынӑ ҫӗрте ялсем ӑҫта-ӑҫта вырнаҫнине курнӑ. Унта кӗрсе выртма хваттер те хӑвӑртрах тупӑн.

Клавье Атӑл ҫинелле ҫул тытрӗ. Мӑнастир тӗлне ҫитсен ҫанҫурӑмӗ сивӗ тытнӑн чӗтресе илчӗ. Ҫук, тухса шырасан, тытса кӗресрен хӑраса мар, ҫурчӗ ытла кичеммӗн те хӑрушшӑн курӑннӑран. Ҫакна та асӑрхайман-ши вӑл маларах? Асӑрханӑ пулсан?.. Шухӑшне вӗҫлес килмерӗ унӑн. Кунта килмен пулсан...

Клавье Атӑл ҫине анчӗ. Уяр та тӳлек ҫанталӑк. Хӗвел самаях хӑпарнипе хӗлхемне ҫӗр ҫине кӑмӑллӑн сапалать. Ирех лавсем ҫӳренипе ҫул такӑрланма ӗлкӗрнӗ. Пушмак тӗпӗ якалнипе ура шуни кансӗрлет те, Клавье парӑнасшӑн мар. Ҫине тӑрса утӑмне хӑвӑртлатать. Кас пулттипе Сӗнтӗрвӑрри хулине ҫитесшӗн вӑл. Этем тени

ахаль чух та шухăшсăр пурăнаймасть, вăрăм çулта вара шухăшсем валемĕн-валемĕн купаланса килеççĕ. Тахçан пулса иртнисене те аса илетĕн, малашлăхрине ĕмĕтленсе пăхатăн. Клавье те чи малтан ултă çичĕ çула çитсен амăшĕ ĕçе çыпçăнтарма тăрăшнине аса илчĕ. Хăйпе пĕрле чăх-чĕпе, хур-кăвакала апат партаратчĕ. Пўрт ăшчиккине тасаттаратчĕ. Каярахпа, Хусанта пурăннă чухне, хăнăхнă йăлипе тарçисем тĕлĕнмелĕхне, Клавье умĕнчи ĕçе хăех тунă. Пĕрле вĕренекен тусĕсем унран кулнă, тăрăхланă та. Клавье йўпсемен. Амăшĕ мĕншĕн ĕçе вĕрентме тăрăшнине хĕр тинех ăнланчĕ. Михха хăçан та пулин хăй хĕрĕ маррине тавçăрасса кĕтнĕ вăл. Кирек мĕнле пурнăça кĕрсе ўксен те татăк çăкăрсăр ан пултăр тенĕ пулмалла. Çак тапхăр çитрĕ те-и? Ытах тесен хăй ĕçленĕ госпитале те ĕçлеме илĕç ăна. Малалла вĕренесси кăна пăшăрхантарать.

Клавье сасартăк Ванюка аса илчĕ. Амăшĕ ăна çав ачапа катаччи чупма кăларса ячĕ. Вăл хут купăс каларĕ. Анахвис çурхи шыв пек илемлĕ юрларĕ. Мĕн тери хаваслăччĕ ун чухне... Анчах кăмăл туличченех катаччи чупма пулмарĕ. Вĕсене, виçĕ ачана, Клавьесем патне кĕртсе хăварчĕç. Килте ахăр ĕçкĕ пырать. Ванюк хут купăс каласа ашшĕпе амăшне ташлаттарчĕ. Вара ашшĕ каланипе Ванюкпа Анахвис ташларĕç. Хăй ташлама пĕлменшĕн питех кулянначчĕ Клавье. Унтан Ванюкпа иккĕшне çураçрĕç.

Тепрехинче вĕсем, иртнĕ хĕлле, Хусанта тĕл пулчĕç. Ванюк пулăпа суту-илў тăвакан магазинта ĕçлетчĕ. Клавье вăлча илме кĕчĕ те, курсанах Ванюка палларĕ. Вăлчашăн укçине илмелле ăна хăйпе пĕрле лартса кайрĕ. Çавăн чухне вăл Ванюка мĕн пĕчĕкрен юратнине пусĕпех ĕненчĕ.

Тепрехинче çуркунне, мункун чухне, Энĕшкасси айлăменче тĕл пулчĕç. Вăйăра иккĕшĕ ташларĕç те вăрмана канса çўреме кайрĕç. Анчах çăхан кранклатни вĕсен савăнăçне татрĕ. Çăхан йăвине çунтарса хăварсан, иккĕшĕ Энĕш хĕррине пычĕç те моторлă кимĕ çине ларчĕç. Ванюк ăна ал вĕççĕн çĕклерĕ. Çав вăхăтра Клавье качча́на чуп тума ĕлкĕрчĕ. Халĕ те тута тĕлкĕшет-тĕр.

Тепĕр ирхине Михха вĕсене мăшăрлантарма тăчĕ. Анчах вĕсем, Ванюкпа иккĕшĕ, пĕр юн тăванĕ иккен... Сасартăках хĕрĕн кăмăлĕ улшăнчĕ. Юратупа хĕмленнĕ юн сивĕнчĕ. Тăрлавсăрах шухăшлама тытăнчĕ. Ванюкран сехĕрленсе уйрăлнăшăн хăйне хăй ятларĕ. Амăшĕ канаш панă евĕр калаçса таталнă пулсан вăл та пăрахса каймĕччĕ. Клавье те мăнастире кĕрсе асапланмĕччĕ. Çав тери маттур йĕкĕт, тăванĕ, хута кĕрĕччĕ. Вăл кутемĕн таврăннах ĕнтĕ. Тĕл пулса чунтан чуна калаçайрасчĕ.

Вунă çухрăм утнипех Клавье ывăннине туймарĕ-ха. Тепĕр вунă çухрăмĕ вара йăлтах ывăнтарса çитерчĕ. Утăмĕ пĕрре те ўсĕнмен пек туйăнать. Çитменнине хырăм выççи сисĕне пуçларĕ. Вăл пăлханнипе каç та ăша тĕпренчĕк яманччĕ. Çакăнта чĕл çăкăрпа чĕптĕм тăвар пулайрасчĕ. Çакăнтах канма ларĕччĕ, тăраймасран хăрать. Ахăртех, хытса выртăн. Темиçе лав та ирте-ирте кайрĕ. Клавье лар-

тма ыйтмарӗ. Лавҫисем хӑйсем тавҫӑраймарӗҫ. Каҫ та пулчӗ. Сӗнтӗрвӑрри инҫех мар та. Ҫапах мӗнле ҫитӗ-ши? Урисене аранаран улӑштаракан пулчӗ.

Хыҫран кресла ҫуна кӳлнӗ лав хуса ҫитрӗ те, Клавье тӳсеймерӗ:

— Ырӑ ҫын, лартса кай-ха, тархасшӑн...— терӗ вӑтаннине сирсех.

— Ӑҫталла ҫул тытатӑн?

— Атӑлкассине. Сӗнтӗрвӑррине те пулин ҫитсе выртасчӗ. Анчах хама хам та шанмастӑп, ывӑнтӑм.

— Лар !— хӗре шеллесе сӗнчӗ лавҫӑ. Клавье ҫуна ҫине вырнаҫсан, хушса хучӗ: — Эпӗ сана Сӗнтӗрвӑррине мар, хамӑр ялах илсе каятӑп. Пирӗн ял Атӑл хӗрринчех, сан пурпӗр пирӗн ял ҫумӗпе иртмелле.

Клавье тӳрех килӗшрӗ. Лавҫӑ лашине хӑваларах пачӗ. Кӗҫех Сӗнтӗрвӑрринчен иртрӗҫ. Тепӗр ҫур сехетрен вырӑс ялне ҫитрӗҫ те ултӑ кӗтеслӗ шатрун ҫурт умӗнче чарӑнчӗҫ.

— Чуну пур-и? ~ шӳтлерӗ лавҫӑ.

— Чунӑм тухман та... Ал-ура пуррипе ҫуккине туймастӑп, — терӗ Клавье. Кресла урлӑ каҫса ҫуна ҫинчен анасшӑнччӗ, ури кӳтсе кайнипе кӑшт ҫеҫ ӳкмерӗ.

— Эх, ачам... Эс чӑннипех халтан кайма пуҫланӑ иккен. Пӳрте атя хӑвӑртрах! — лашине хапха умне хӑварсах хӗре пӳрте ҫавӑтса кӗртрӗ. Килтисене хушрӗ:

— Хӑнана йышӑнӑр. Ури-аллине пӑхкалӑр-ха, тӑм илмен-и?

Кил хуҫи арӑмӗ ӑна фуфайкине, пушмакне хывма пулӑшрӗ. Аллиурине тыткаласа пӑхрӗ.

— Мухтав Турра.. Пурте шӗкӗрех... — тесе хӑвӑрт ҫӑматӑ кайса илчӗ. — Тӑхӑн-ха!

Клавье аллипе ури ӑшӑннӑҫемӗн шӗл кӑвар ҫинчи пек ҫунма пуҫларӗ. Вӑл кунашкал ыратнине нихҫан та туйман. Ирӗксӗрех куҫӗ шывланчӗ. Кӗҫех лавҫӑ лаша таврашӗсене йӑрхаха кӗртсе ҫакрӗ. Кӗрӗкӗпе тӑлӑпне хыврӗ те Клавье патне пычӗ.

— Мӗнле, тӑм илмен-и?

— Ҫук пулас... — аран хуравларӗ Клавье.

— Апла мухтав! Эп хытах хӑранӑччӗ. Ҫанталӑкӗ сивех те мар, ҫулӗ вӑрӑм. Хӗл кунӗнче кам пушмакпа ҫула тухать? Мӗн ӗҫпе ҫӳретӗн-ха капла?

Клавье нимех те шарлаймасӑр ларчӗ. Ҫак ыйту ҫине мӗн хуравламаллине пӗрре те шухӑшламан вӑл. Ҫапах та пурнӑҫра мӗн пулса иртнине пӗлтересех килмест. Мӗн каламалла ӗнтӗ? Юлашкинчен шутласа тупрӗ хӗр.

— Атте чирлесе ӳкнӗ те... Анне те сывах мар. Шупашкарти собора ҫурта кайса лартрӑм. Питех ывӑннӑччӗ. Кунта ҫити лартса килнӗшӗн тавтапуҫ...

Кил хуҫисем чунтан шеллесе пӑрахрӗҫ. Пӑх-ха ӑна, терӗҫ, ашшӗне сыватассишӗн хӗл кунӗнче пушмакпа тухма та хӑраман.

— Амӑшӗ! — евӗклӗн чӗнчӗ кил хуҫи. — Апат-ҫимӗҫ хатӗрле-ха. Хамӑн та хырӑм выҫрӗ.

— Халех! — килĕшрĕ кил хуçи арăмĕ. — Çавăнтах хĕртен ыйтрĕ: — Эсĕ мĕн ятлăччĕ-ха?

— Клавье... — кил хуçисем аван çынсем пулнине ĕненсен хăюллăнах хуравларĕ Клавье.

— Сĕтел хушшине лар, Клавье!

Апатлансан хăнана тĕпелти сак çине вырăн сарса пачĕç. Çул çинче хытах ывăннипе часах çывăрса кайрĕ хĕр. Кĕçех вăранчĕ те. Анчах хăй та çутманнипе хуçисене вăратасран ним хускалмасăр выртрĕ. Ха, темиçе уйăх мăнастирте асапланнă хыççăн хресчен пӳртĕнче-çке вăл, ирĕкре. Пĕр шухăшласан, савăнмалла пек туйăнчĕ. Савăнăçĕ килмерĕ. Малашнехи пурнăçĕн уççи-хуппи курăнманни канăçсăрлантарчĕ.

Вĕсем тăрса апатланнă çĕре тул та çутăлчĕ. Кил хуçи тултан кĕчĕ те:

— Паян шăнтнă... Сăмсана чĕпĕтме пăхать! — терĕ.

Клавье хăйĕн кĕçех тухса каймаллине аса илчĕ те сивĕпе шăннăн чĕтрерĕ. Утса çитес шанăçĕ çухалнă пек пулнипе:

— Ырă çыннăм... — терĕ кил хуçине евĕклĕн. — Ман çумра çĕр тенкĕ укçа пур. Атăлкассине çити лашапа ăсатакан тупăнмĕ-ши?

Ку хĕр укçа хакне пĕлменни паллах. Укçа йӳнелсе пырать пулсан та, çĕр тенкĕлле Атăлкассине виçĕ хут та кайса килме юрать.

— Ма çын шырас? Хамах леçсе хăварăп! — терĕ кил хуçи.

Клавье савăнчĕ. Хăварт укçине кăларса тыттарчĕ. Кил хуçи кĕçех лашине кӳлчĕ. Клавьене кресла çуна çине тăлăп тăхăнтартса çиле май пăхтарса лартрĕç, урине кĕрĕкпе чĕркерĕç.

Атăлкассине вĕсем хăй çутнă тĕле çитрĕç.

— Эп анса юлатăп ĕнтĕ, — терĕ Клавье сасартăк.

Лавçă тĕлĕнчĕ. Вăл хĕрсем патне кĕрсе лашана кăшт кантарасшăнччĕ, чей ĕçсен те ытлашши мар тесе шутланăччĕ.

— Килех ăсатмалла мар-и апла?

Клавье ĕлĕкхи пек пулсан хăна тусах ярĕччĕ. Халь хăйĕн те таçта вырнаçмалла пулать-ха.

— Ман кил çук... — аванмарлансан та тĕрĕссине каларĕ вăл.

— Мĕнле кил çук? Аçу чирлĕ выртать терĕн-иç?

— Ун чухне эп суйрăм. Тархасшăн, ан ятлăр мана. Чипер çитернĕшĕн тав тăватăп! — Клавье хăварт тăлăпне хыврĕ, урине кĕрĕк ăшĕнчен кăларчĕ те çуна çинчен сиксе анчĕ. — Каялла чипер çитĕр, ырă çын. Кун-çулăр яланах телейлĕ пултăр...

Клавье васкарах утнипе пӳлĕннĕ пек пулчĕ. Канмалла тавралла сăнарĕ. Нимле улшăну та çук пек. Ĕлĕкхи майлах хăма завочĕ ĕçленин шавĕ илтĕнет. Электричествă вăйĕпе çурнă хăмана йăтса купа туни те курăнать. Клавьен пĕр ĕмĕт кăна: Михха куçĕ тĕлне пулмасăр амăшĕ патне кĕресчĕ...

Тем вăхăтра çывăрса кайнă Клавье — астумасть, вăранса куçне уçрĕ те пӳлĕме тул çути кĕнине туйрĕ. Анчах хăй ăçтине сасартăках тавçăраймарĕ. Мăнастирти келинчех пулĕ тесе чунĕ пăшăрханчĕ. Çав

вăхăтра алăк уçăлса хупăнни илтĕнчĕ те, Клавье хăвăрт тăрса ларчĕ. Пӳлĕме хуралçă кĕнĕ иккен. Хĕр йăлтах тăна кĕчĕ, хăй кунта ма килсе лекнине аса илчĕ.

— Вăхăтсăр кĕрсе ыйхуна татрăм пулĕ?

— Çук, çук, Çитăр пичче! Ытлашшипех те çывăрнă. Кил хушшинче, урамра мĕн сас-хура пур?

Хуралçă пит-куçĕ хаваслăхпа çуталчĕ.

— Эсир хăвăра Михаил Петрович хĕрĕ мар терĕр. Çавăнпа ним пытармасăрах калатăп. Ĕнер вулăсри Советсен пĕрремĕш съезчĕ пулса иртнĕ. Çав съездра большевиксем... Николай Степанович сĕннипе Михаил Петровичăн çĕрне, вăрманне, выльăх-чĕрлĕхне халăх аллине туртса илмелле тунă теççĕ. Ара Сехмет шăпи аранах тулчĕ. Тен, халăх сучĕ умне те тăратĕç-ха. Вăт, çавнашкал, Клавдия Михайловна... Сехмет хĕрĕ пулманни аван та пулĕ-ха...

Клавьене Михха пурлăхне туртса илмелле туни мар, хуралçă пачах улшăнни тĕлĕнтерчĕ. Вăл ăна хăй кил хушшинче чупса çӳреме пуçланăранпах пĕлет. Миххапа арăмне чунтан парăннăн тыткаланине те астăвать. Ячĕшĕн кăна пулнă иккен. Тĕрĕссипе вăл Миххана темрен те ытла курайман. Хуралçă çеç мар, ыттисем те çавнашкалах пулнă. Клавье сасартăках Михха кил-çуртне вут тивертсе çунтарнине, хăйсем пăрахутпа ларса тарнипе кăна хăтăлса юлнине аса илчĕ те тарçисем Михха вăй-хăватлă чухне ăна пуç тайнă, халĕ, сехмет тĕп пуласса сиссен, пĕтĕм курайманлăхĕ çиеле тапса тухнă. Кирек мĕн пулсан та, кунта текех пурăнма юрамасть тесе шутларĕ Клавье.

— Çитăр пичче... мана тăвану пек шутласа пăхнăшăн тайма пуç сана. Куна эп нихçан та манассăм çук. Халь кайма вăхăт.

— Тăхта-ха! Кунашкал тухса кайни илемсĕр. Эпĕ яшка пекки пĕçертĕм. Сыпкала-ха. Урăх тĕлте сан валли апат-çимĕç хатĕрлесе хуниех пулмĕ хальлĕхе.

Клавье сăмахсăрах килĕшрĕ. Чăн та-çке. Сасартăках кам патне кĕрĕ вăл? Ăçта апатланĕ?

— Вăт çапла, Клавдия Михайловна... — сĕтел хушшинчен тухсан ăс парса каларĕ Çитăр пичче. — Ним вăтанмасăрах Николай Степанович патне кайăр. Вăл сире тараватлăн йышăнасса шанатăп. Тата ăнах вулăс пуçлăхĕ пулма суйланă терĕç. Вăл сире ĕç те тупса парĕ. Ытах çĕр каçма урăх хваттер тупаймасан, ман пата кил. Будка аслă мар та, вырнаçкалăпăр.

— Ырă суннăшăн тавтапуç, Çитăр пичче. Кирлĕ пулсан килĕп те. Хальлĕхе сывă пул.

Кил хушшине тухсан Клавье ниçта кайма аптранăн чарăнчĕ. Çул шыранă пек йĕри-тавра пăхкаларĕ. Хуралтă тĕлĕшĕнчен ниепле улшăну та курăнмасть. Халиччен Клавьене пурте паллатчĕç, пуç таймасăр иртекен марччĕ. Халĕ ăна çын шутлама та пăрахнă тейĕн, сывлăх сунакан та çук.

Клавье сасартăках аса илчĕ, мĕнле-ха капла, амăшне вĕлернĕшĕн сехмете пĕр сăмах шарламасăрах тухса каяс-и, айăпласран çăмăллă-

нах хăтăлтăм тесе кулма ирĕк парас-и? Çук, вăл çын вĕлернине пĕлекенсем пуррине те пулин хыпарласа хăварас.

Клавье параднăй алăк патне пычĕ. Унта малтанхи ватă швейцарах тăрать иккен. Хăй кăна хĕре аса илеймерĕ.

— Кам эсĕ? Мĕн шыраса çӳретĕн?

Камне каламасăр кĕртес çуккине чухлать Клавье.

— Эпĕ Михаил Петровичăн çухалнă хĕрĕ Клавье... — терĕ ирĕксĕртен.

Швейцар усал-тĕселпе тĕл пулнăн каялла чакса тăчĕ. Урăхла мĕнле пултăр-ха? Михха хĕрĕ çуркуннех çухалнă. Пурте вăл пусĕпех пĕтнĕ тесе шутлаççĕ. Халь тата ăçтан тупăннă? Тăн илме хăтлансан швейцар темскер каласшăнччĕ — ĕлкĕреймерĕ, хĕр сăмах хушни чарчĕ:

— Куçук пичче, туятăп: ман çири тум аташтарчĕ ĕнтĕ сире. Мĕн тăвас, килтен тухса кайсан эпĕ çавнашкал пурнăçа çаклантăм... Эпĕ чăн та Клавье. Ман аттене курас килет...

Швейцара хăйне ятран чĕнни çырлахтарчĕ. Вăл алăка уçса Клавьене кĕртрĕ.

Михха йăлтах канăçне çухатнă. Ун утине çулма килнĕ Ёнел хресченĕсем арăмĕпе иккĕшне те шаккарĕç. Вĕлересрен катер çине ларса тарни кăна хăтарчĕ. Евитлеме кайсан Лаврский кăштах лăплантарса ячĕ-ха. Ленина тытса хупма приказ пани çинчен пĕлтерчĕ, Шупашкарти паллă большевиксене те пĕтерме сăмах панăччĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ — катăрашнайсем хăйсем Улитина вырăнтан сирпĕтрĕç, вулăсри влаçа хăйсен аллине илчĕç. Кĕркуннепе Вăхăтлăх правительствăна тӳнтерсе совет влаçĕ туни çинчен хыпар çитрĕ. Совет влаçĕн пуçлăхне Ленина суйланă. Çавăнтанпа Михха тарçисен кăмăлĕ йăлтах улшăнни палăрать. Халь ĕнтĕ хирĕç пулсан çĕлĕк хывакан та сахал. Ятлама тăрсан хирĕç патлаттараççĕ. Ăна хуçа вырăнне шутламаççĕ те тейĕн. Нивушлĕ Микула каторгăран таврăнсанах киле-киле астутарнисем пурнăçа кĕрĕç? Нивушлĕ пирĕннисем вăй пухса большевиксене пĕтереймĕç? Ют çĕршыври туссем те пулăшаймĕç-ши вара? Тем тесен те ку шанăçа çухатасшăн мар-ха Михха. Ёнер вулăсри советсен пĕрремĕш съезчĕ пулмалла терĕç. Унта мĕн йышăнчĕç-ши? Иçмасса, хунĕ те пулсан кĕрсе пĕлтермерĕ. Вăл та делегат-çке. Хуçа таврашĕсем ют патшалăхсене туха-туха каяççĕ тенĕ хыпар пур. Унăн та каймалла мар-ши? Çук, тем пулсан та Михха çуралнă çĕршывне пăрахас çук.

— Михаил Петрович, ăçта эсĕ? — арăмĕн сасси илтĕнчĕ. Вăл тин çĕç вăранна-ха.

— Кунта-çке! — терĕ Михха, васкаса пычĕ. — Мĕн кирлĕ?

— Кирли-мĕнни... Эсĕ ма тарса кайнă вара? Мана пĕчченех хăварнă?

— Вырăн çинче йăваланмалли вăхăт мар, Елюк. Тĕнче çути тĕксĕмлене пуçларĕ.

Самана улшăннине Елюк питех йӳпсемерĕ. Пурнăçĕ тулăххи, мĕн кирли пурте пурри, пурне те тума ирĕк пурри килентерет ăна. Вăл таврара çук пуяна качча тухнипе те çырлахма хăтланнăччĕ. Çавăнпа хирĕçле сăмах килĕшмерĕ ăна.

— Тӗнче ҫавах ҫутӑ-ха. Сан пуҫна вара тӗтре ҫапнӑ, — сиввӗн тавӑрса хучӗ Елюк.

— Ман пуҫ пирки ҫеҫ тӗк, темех марччӗ. Мӗнле те пулин ӑс тупса пурӑнкалаттӑм. Ӗнер ав кантурта съезд пухӑннӑ. Мӗн йышӑннине пӗлместӗп. Каҫ та, паян та никам килсе систермерӗ. Аҫу та пулсан кӗрсе тухмарӗ. Ырӑ енне марри паллах. Ну, ку юрӗ-ха... Мӗн пулнине курнӑ, пуласси не курӑпӑр. Сана та вырӑн ҫинчен тӑма вӑхӑт. Выльӑх-чӗрлӗхе мӗнле пӑхнине сӑнасан та ытлашши мар. Эп ҫармӑссен енне кайса килесшӗн. Вӑрман хатӗрлекенсем патӗнче мӗн сас-хура пур-ши?

Елюк мӑшлатса вырӑн ҫинчен тӑчӗ. Хырӑмӗ палӑрмаллах мӑкӑрӑлнӑ ӗнтӗ. Питне хуратут пуснӑ.

Ҫывӑракан пӳлӗмрен тухса столовӑялла утнӑ ҫӗрте вӗсен ҫулне темле хӗрарӑм пӳлчӗ. Михха чунӗ ахаль те кӳтнӗрен тилӗрсе кайрӗ.

— Кунта кӗме мӗнле хайнӑ эсӗ, сӑрнай! Халь тухса кай!

Михха йӑвашшӑн йышӑннӑ пулсан Клавье кӑмӑлӗ кӑштах ҫемҫелӗччӗ-и, тен? Тем пулсан та, вун ҫичӗ ҫула ҫитиччен ҫак ҫуртра ӳснӗ вӑл. Михха хӑвалани чӗрине хытарчӗ. Курайманлӑхӗ ҫулӑмланса хӑпарчӗ.

— Аплах ан хӑвала! Эп нумай тӑмастӑп, халь каятӑп. Ҫакна ҫеҫ астутарса хӑварас терӗм: аннене вӗлернине никам та пӗлмест тесе савӑнаттӑн пуль?

— Мӗн терӗн эсӗ, сӑрнай?! — Михха Клавье еннелле ыткӑнчӗ.

— Ан ҫулӑх, ҫын вӗлерекен! Эп санран ним чухлӗ те хӑрамастӑп. Кунта кӗнине ҫынсем пӗлеҫҫӗ, тухманнине те асӑрхӗҫ. Сана пуриншӗн те явап тыттарӗҫ, — терӗ Клавье Миххан чашкӑракан ҫиллине пусарасшӑн. Хӗр йӑнӑшмарӗ. Кунта кӗнине ҫынсем пӗлеҫҫӗ тени пуҫ тӑрӑх пӑрлӑ шыв янӑ пекех пулчӗ. Умӗнче хайӗн хӗрӗ шутланнӑ ҫын тӑнине ӗненчӗ вӑл. Ӗлӗкхи самана пулсан полицейскисене евитлӗччӗ те, ӑна килсе пуҫтарса та кайӗччӗҫ. Халь кама евитлӗн? Катӑршнӑй Микулана-и? Ытла тӑвӑлнипе те ним тума ҫук иккен. Ура шӑнӑрӗсем ҫемҫелнипе Михха пукан ҫине персе анчӗ. Хуҫа халран ӳкни Клавье кӑмӑлне кӑштах ҫемҫетрӗ.

— Анне пӗтнишӗн хама та айӑплатӑп. Эпӗ сан хӗрӳ марри ҫинчен пӗлтермелле марччӗ. Пурпӗр уншӑнах вӗлерме кирлӗ марччӗ.

Михха пуҫне ялт ҫӗклерӗ. Шур куҫне кӑларчӗ. Ҫамрӑк арӑмӗ умӗнче тӳсме ҫук хур кӳреҫҫӗ-ҫке ӑна. Асар-писерле кӑшкӑрса пӑрахрӗ:

— Сӑрнай, аннӳне эп вӗлернӗ теме мӗнле хӑятӑн?! Тухса кай! Тем туса пӑрахӑп тата!

Упӑшки аптӑраса ӳкни Елюка хӑратса пӑрахнӑччӗ. Хӗрне парӑнса йышӑнӗ те арӑмне вырӑнне хуми пулӗ тесе шухӑшланӑччӗ. Ӗлӗк хӗр чухне те Клавье чаплинчен кӗвӗҫнӗ вӑл, ӑна чунтан курайман. Михха халсӑрлана пуҫлани Елюка чун кӗртрӗ. Упӑшки хутне кӗрсе усал сӑмах хушрӗ:

— Ха, вӗлтрен кайӑкӗ таҫти вӑрмантан вӗҫсе килнӗ те пире хӑратасшӑн! Иҫмасса, питне тӑлавар ҫӗлесе ярасчӗ.

Клавье чӗрине йӗппе тирсе илнӗн туйӑнчӗ. Анчах ҫухалса каймарӗ, тивӗҫҫӗн тавӑрса хучӗ:

— Мана вӗлтрен кайӑкӗ пулсан та юрать. Ку ман айӑп мар. Тата вӑрӑ-хурах юлашки пулниех те мар. Ылханатӑп сире! Чун-чӗререн ылханатӑп!

Михха хӑй мӗн тӑвасса та чухлаймасӑр пукан ҫӗклерӗ. Ҫапса та пӑрахӗччӗ — арӑмӗ тӑнне ҫухатманнипе тӑхтарӗ. Кайран тем курса ларӑн тата.

Михха аллинчи пукана туртса илчӗ те Елюк Клавье енне ҫаврӑнчӗ:

— Сан ылхану ҫине суратӑп кӑна. Ҫаварупа кала та сӑмсупа туртса ил!

Клавье урӑх ним чӗнмесӗрех тухса кайрӗ.

— Михаил Петрович, эпӗ ним те ӑнланаймарӑм-ҫке? — пӗр хушӑ чӗмсӗрленсе тӑнӑ хыҫҫӑн ӑшталанса ӳкрӗ Елюк.

— Суять вӑл! Лукарье хӑй вилӗмӗпе вилнине манран малтан лакей курнӑ.

— Уншӑн мӗн ҫатракаланмалли? Эп сана шанмасӑр е тӗпчес-тӑвас шутпа ыйтмарӑм. Мана Клавье сан хӗр пулман тени тӗлӗнтерчӗ. Кам хӗрӗ вара вӑл?

Клавье мӑнастирте ҫӗрессе шаннӑччӗ Михха. Вӑл ют арҫынпа ҫуралнӑ пирки никам умӗнче те намӑса кӗмӗп тенӗччӗ. Ак ӗнтӗ арӑмне ирӗксӗртен хыпарлама лекет.

— Вӑл Энӗшкассинчи катӑршнӑй Микула хӗрӗ.

— Ан калаҫ!

— Тарӑхмалла та, тӗрӗсех... Эпӗ Клавьене Ванюкпа мӑшӑрлантарасшӑнччӗ. Ачине хурлас ҫукчӗ. Анчах Лукарье вӗсем юн тӑванне систернӗ те, иккӗшӗ те килтен тухса ҫухалнӑ. Клавье мӑнастире кайса кӗнӗ иккен. Ванюкӗ халиччененех таҫта ҫӳрет...

Елюк рехетленчӗ. Вӑл курайман хӗр чӑн та вӗлтрен ҫинчи-мӗн. Паҫӑр хӑртни вырӑнлах пулнӑ. Тек килсе кансӗрлес ҫук. Ӗнтӗ упӑшкине йӑпатса кӑмӑлне уҫма та тивӗҫ.

— Унашкал сучкана пӗтернишӗн ҫылӑх та пулас ҫук!

Ҫав вӑхӑтра Елюк прапорщикпе иккӗш кӗлетре мӗн хӑтланнине темшӗн аса илеймерӗ. Айӑпсӑр пекех малалла кастарчӗ:

— Ӑна никам та ӗненес ҫук. Ҫилли тулнипе вӑл тем те пакӑлтатса ҫӳрӗ. Лӑплан та, апатланар-ха. Вара ӗҫе тытӑнар. Эпӗ кил хушшине тухса пӑхкалам. Эсӗ ҫармӑссем енне кайӑн.

Столовӑя ҫитеймерӗҫ вӗсем. Кӗтмен ҫӗртен Трифунпа Петров тата икӗ хӗрлӗ гвардеец пырса кӗчӗҫ. Елюк хӑрушлӑх килсе тухасса шутламарӗ те. Петрова палласанах чунӗ вӗчӗрхенчӗ. Ӑна пӗрле савӑшнӑ чухнехи пек йышӑнайманшӑн пӑшӑрханчӗ. Прапорщикпа улах ҫӗрте тӗл пуласшӑн тем чул ӗмӗтленнӗ. Акӑ тӗл пулчӗҫ те, кӑмӑла тивӗҫтермелли мелсем пулмарӗҫ.

Трифунсем ырӑ хыпарпа килменнине Михха тӳрех тавҫӑрчӗ. Чӗри кӑрлатса тапа пуҫларӗ. Анчах палӑртасшӑн пулмарӗ, тарҫисемпе каласма хӑнӑхнӑ сассипе чӗнчӗ:

— Мĕн кирлĕ сире?

— Ытлашши темех мар, гражданин Янашов. Эпир Атăлкасси вулăсĕнчи Советсен пĕрремĕш съезчĕ мĕн йышăннине хыпарлама килтĕмĕр. Демьян Петрович, вуласа парăр!

Елюка тĕл пулни Петров кăмăлне те хускатрĕ. Юратнăран е килĕштернĕрен мар, çак хĕрарăм пирки намăса кĕнине аса илчĕ те хăйĕнчен хăй йĕрĕнчĕ. Трифун чĕнни ăна хăйне алла илме пулăшрĕ. Кĕсйинчен хут кăларса вулама пуçларĕ:

— Атăлкасси вулăсĕнчи Советсен пĕрремĕш съезчĕ çапла йышăнать: Янашов Михаил Петрович улпут-хуçан мĕнпур çĕрне, вăрманне, заводне, выльăх-чĕрлĕхне, Атăл çыранне кăларса купаланă йывăçне, ампарти тырри-пуллине, килне-çуртне йăлтах халăх ирĕкне туртса илес.

Петров вулама чарăннă самантра Трифун сăмах хушасшăнччĕ — ĕлкĕреймерĕ.

— Халăх ирĕкне-и?! — терĕ те Михха çăварне лаш карса ахăлтатма тытăнчĕ.

— Гражданин Янашов! — хыттăн каларĕ Трифун. — Эсир ахăрашнине курса тăма вăхăт çук пирĕн. Эпир кайсан хуть мĕн хăтланăр. Халь пирĕн мула шута илмелле. Малтан çакна калăр-ха: ылтăн-кĕмĕл тавраш ăçта сирĕн?

— Ав мĕнле?! Ылтăн-кĕмĕл кирлĕ иккен сăрнайсене?! — кулма чарăнса хаяррăн эхлетрĕ Михха. — Ĕçлес килменнипе куç кĕретех çаратас тетĕр-и?!

— Гражданин Янашов! — тата хытăрах чĕнчĕ Трифун. — Пире хур кӳме пăрахăр! Эпир сирĕн пурлăхăра çаратма мар, халăх ирĕкне пама килнĕ. Тĕрĕссипе, сирĕн кунта ним те çук. Кутăнланас шутлă пулсан, уяса тăмăпăр, тытăпăр та хупса лартăпăр.

Михха тавçăрма пуçларĕ курăнать. Кутăнланнипе хăтăлса юлаймăн. Вĕсемшĕн пулсан персе пăрахасси те темех мар. Луччă сейфа уçчăр те унти мĕнпур пек укçана илсе кайччăр. Юрать-ха ылтăна тăнăçлă вырăна пытарма ĕлкĕрнĕ.

— Мейĕр, тархасшăн! Пĕтĕмпех илсе кайăр! — терĕ те вăл шалти кĕсьерен уçă кăларса ыватрĕ. Трифун ăна çĕртен илсе Михха патне пычĕ.

— Апла мар, господин Янашов, хăвăр аллăрпа уçса паратăр. Паçăрах каланă сире, кутăнланса вăхăта ан ирттерĕр!

Михха пукан çинчен йăраланса çĕкленчĕ. Никам çине пăхмасăр, Трифунсене шалалла ертсе кайрĕ. Сейфа уçрĕ:

— Илĕр, тархасшăн! Йăлтах илĕр! — терĕ.

Сейфра патша кăларнă хут укçасем кăна. Вĕсене сейфра усранинчен те тĕлĕнмерĕ Трифун. Михха патша кăларнă укçана Керенский укçинчен шанăçлăрах шутлать иккен. Ылтăн-кĕмĕл тавраш ĕ çук. Михха аллине лекекен ылтăн-кĕмĕле кăларса яманнине, пухса пынине Трифун лайăх пĕлет. Михха ӳсĕр чух мухтаннине сахал мар илтнĕ вăл.

— Ылтăнпа кĕмĕл ăçта? Керенский укçисем ăçта?

— Ылтăн тавраш çук ман. Эпĕ хут укçана ылтăн вырăнĕнчех хисеплетĕп. Керенский кăларни те пур, — тимĕрленĕ арча патне пычĕ Михха. — Акă, илĕр!

Хĕрĕхшер, çирĕмшер тенкĕлĕх касман хут укçана шпалер пек купаласа тултарнă.

— Ку аван-ха. Тарçăсене ĕç укçи тӳлеме кирлĕ. Ĕнтĕ ылтăн ăстине калăр!

— Ылтăн çук манăн! Хуть мĕнле шырасан та тупаймăр! — шартланчĕ Михха.

Ылтăна тĕплĕ вырăна пытарни паллах. Хăйсем тĕллĕн çеç шыраса тупайĕç-ши? Ирĕксĕрлесе калаттарма та хĕн. Хуçа хытă чĕреллине чухлать Трифун. Сасартăках аса илчĕ вăл: ку килте лакейсем сахал мар. Ылтăна ăçта пытарнине асăрхакансем те пулма пултарнă.

— Демьян Петрович! — терĕ Трифун. — Эсир мĕн пуррине шутлăрха. Эпĕ аялти хуталла анса пăхам...

Трифунпа салтаксем килнине курнă лакейсемпе кил хушшинче ĕçлекенсем аялти хутри пĕр пӳлĕме пухăнчĕç. Трифун çитсе ырă кун сунма ĕлкĕрейменччĕ — пĕрин хыççăн тепри ыйтусем пама пуçларĕç:

— Мĕн ĕçпе килнĕ эсир? Кантурта мĕн хыпар?

— Вулăсри Советсен съезчĕ сехметĕн мĕнпур пурлăхне шутласа йышăнма килтĕмĕр. Халех çавна та астутарас, сехметĕн пĕр япали те çухалмалла мар, пĕр япалине те харпăр хăй тĕллĕн илмелле мар, ватмалла мар. Ун пек айкашакансене революцилле çирĕп саккунпа айăплаççĕ.

Ку сăмах кашнинех килĕшмерĕ. Тепĕр çĕрте çĕр улпучĕсен пурлăхне кам мĕнле пĕлнĕ çавăн пек сĕтĕрме пĕтернĕ тенине те илтнĕ вĕсем. Çавăн пек хăтланас шутлисем те çук мар-тăр. Анчах хальлĕхе шарламарĕç. Малалла мĕн пулассипе кăсăкланса ыйтусем пачĕç:

— Пирĕнпе мĕн тăватăр?! Ăçта каймалла пулĕ пирĕн?

— Çакăнтах юлатăр. Çакăнтах ĕçлетĕр. Анчах лакей вырăнĕнче мар, пĕр танлă рабочисем пулатăр.

— Укçине кам тӳлĕ?

— Эпĕ тӳлетĕп!

— Эсĕ-и?! — кулакансем тупăнчĕç. Трифун хăй те кучер çеç пулнине пĕлеççĕ-çке вĕсем.

— Эпĕ, юлташсем, — çирĕплетрĕ Трифун. — Сехмет çĕрне, вăрманне тата ытти мулĕн пĕр пайне хресченсене валеçсе параççĕ. Юлашкинчен госхоз тумалла тесе йышăннă. Çав госхоз директорне мана лартрĕç. Çавăнпа сире çапла йыхăратăп: япаласене пурне те тирпейлĕ тыткаламалла. Çĕмĕрекен-ватакансене каçармастпăр... Тата çакă пур-ха, сехмет ылтăнне ăçта пытарнине каламасть. Сирĕн хушăра асăрханисем çук-и?

— Пулсан пире те паратăр-и? — терĕ тахăшĕ.

— Юлташсем, ку килĕшӳллĕ сăмах мар. Эпир хамăр кĕсьене чикес шутпа шырамастпăр. Хăвăрах шухăшламалла, виçĕ çул ытла пынă вăрçă Раççей хуçалăхне йăлтах начарлатса çитернĕ. Юсама ылтăн кирлĕ. Çавăншăн ыйтатăп, ăçта пытарнине асăрханисем çук-и?

— Атьăр! — терĕ пĕр лакейĕ.

Вĕсем аслă пӳртĕн тепĕр вĕçне тухрĕç. Яланах тултан питĕрĕнсе тăракан алăк патне пычĕç. Уçă Михха аллинче пулма кирлипе ун патне каясшăнччĕ Трифун. Тарçăсем хуçине пĕлтересшĕн пулмарĕç. Хăрасси халь те сирĕлсе пĕтеймен иккен-ха. Лум тупса кĕрсе пробойне тăпăлтарчĕç. Пĕчĕк пӳлĕме кĕчĕç. Кунта куç тĕлне пулмалли нимле япала та çук. Лакей урай хăмине пустарнă планкăна хирсе катерчĕ. Урай хăми пуçне сирчĕ те, шăтăка анмалли пусма курăнчĕ. Трифунсем унта анчĕç. Шăрпăк çута-çута пĕр кĕтесе çитрĕç те тăвата пысăк хуран ларнине курчĕç. Икĕ хуранĕ тулли ылтăн, икĕ хуранĕнче — кĕмĕл.

## IV

Ĕнер Атăлкасси вулăсĕшĕн историлле кун пулчĕ. Вулăсри советсен пĕрремĕш съезчĕ Миххан çĕрне, улăхне, вăрманне туртса илме йышăнчĕ. Анчах лăпланса ларма сăлтав çук. Съезд большевиксен фракцийĕ шутланă пекех иртсе пычĕ, кăлтăксем те тупăнчĕç. Тем пек тăрăшсан та ĕлĕкхи çăхансене пурне те съездран сирсе хăварма пулмарĕ. Вĕсем хăйсен шăлне аванах кăтартрĕç. Пуринчен ытла Сантăрпа Улитин айкашни тарăхтарчĕ Микулана. Хунĕ пулнă çын халĕ пуçĕпех власть тăшманĕсем майлă çаврăнма пуçланă иккен. Ӳлĕмрен Сантăрпа та кĕрешме лекĕ. Улитин тиек пулнă, халь те тиекех. Вăл хăш-пĕр çынсен кăмăлне астарса ячĕ. Михха пурлăхĕ çине тапăнмĕç тесе те калаяс çук. Большевиксем сехметĕн тĕп хуçалăхĕнчен госхоз тума шутланă. Ку вара халиччен никам туса курман ĕç. Çак ĕçе йĕркелеме Трифун пултарулăхĕ çитейĕ-ши? Нимĕçре тыткăнра пулнă хăш-пĕр çынсем вăл унта помещиксем патĕнче ĕçленĕ теççĕ. Çавсен опычĕпе усă курмалла мар-ши? Тем чул ĕç, тем чул пысăк шухăш, пылак ĕмĕт. Çавăнпа ĕнтĕ Микула хваттерне çурма çĕр иртсен тин тавраннă, çывăрнă-çывăрманах паян ир кантура килсе юлташĕсене пуçтарнă. Трифунпа Петрова тата икĕ хĕрлĕ гвардееца вулăсри съезд йышăннине пурнăçлама кăларса ячĕ. Съезд йышăнăвĕсене пурнăçлама ял советсем те кансĕрлессĕн туйăнать. Шел те, пур çĕрте те çĕнĕ влаçа пăхăнакан çынсене суйлайман. Нумай çĕрте çĕнĕ власть мĕн иккенне, ăна кам валли тунине те пĕлмен çынсене, айăпланă пек, председателе лартнă. Шалусăр çӳресе нуша куртăр тенĕ ĕнтĕ.

Микула та ыттисемпе пĕрлех ялсене тухса каясшăнччĕ, анчах съезд мĕнле иртни çинчен Шупашкара пĕлтерес шутпа тытăнса юлчĕ. Хут илсе çырма ларчĕ.

...Ашшĕне курсан ăна палласа илесси пирки ним чухлĕ те иккĕленмерĕ Клавье. Хут купăс каласа Ванюкпа Анахвисе ташлаттарнă чухнехи маттур çын халĕ те куç умĕнче-çке. Пӳлĕме кĕрсен аптраса тăчĕ. Сĕтел хушшинче шурă çӳçлĕ, шурă сухаллă арçын ларать. Ашшĕ кунашкал ватă пулма кирлĕ мар. Каялла тухса кайма та хатĕрччĕ. Ыйтса пĕлес килни тытса чарчĕ.

— Ырӑ ҫыннӑм, Николай Степановича ӑҫта тупма пулать-ши?

Микула пуҫне ҫӗклерӗ. Алӑк патӗнче фуфайка, айӗнчен ура тупанӗ вӑрӑмӗш сараппан тӑхӑннӑ ҫамрӑк хӗрарӑм тӑрать.

— Николай Степанович текенни эпӗ! — терӗ вӑл. Ҫавӑнтах кӑмӑллӑн йыхӑрчӗ: — Ав! — сӗтел умӗнчи пукана тӗллесе кӑтартрӗ, — ҫавӑнта ларӑр! — Палламан хӗрарӑм вырӑнтан та хускалманнине кура ҫинерех тӑчӗ:

— Иртӗр, иртӗр! Хăймасӑр тӑмалли ҫук. Эсир тиек кантурне мар, совет кантурне килнӗ.

Клавье пукан ҫине вырнаҫсан ыйтрӗ:

— Ӑҫтисем эсир? Мӗн ӗҫпе?

Клавье кунта килнӗ чухне чунӗ ытла кӳтнипе тӗл пулсанах тем каласа тӑкас пекчӗ. Халӗ чӗлхи ҫинчи мӗнпур хаяр сӑмахӗсем ҫава патне сирӗлчӗҫ. Чӗрине пысӑк хуйхӑ пусарнипе тӳсеймерӗ, пуҫне сӗтел ҫине хурса сасӑпах макӑрса ячӗ.

Атӑлкассине куҫнӑранпа Микула патне нумай ҫын, ҫав шутра ваттивӗтти ҫӳренӗ. Вӗсене кашнинех кунта тӗрӗслӗх шырани илсе килнӗ. Анчах ку ҫамрӑк хӗрарӑм пек пӗр сӑмах каличченех макӑрнине курманччӗ.

— Ырӑ ҫын... — Клавьене шеллесе те ӑнланнӑн чӗнчӗ вӑл. — Инкек сиксе тухнӑ пулсан макӑрнипе сиреес ҫук. Лӑпланӑр та каласа парӑр. Кам эсир? Мӗн пулнӑ? Вӑй ҫитнӗ таран пулӑшма тӑрӑшӑп...

— Клавье эпӗ... — илтӗнчӗ сасӑ.

Микула хӑйӗн хӗрӗпе тӗл пуласса асра та тытман пирки нимӗн те тавҫӑраймарӗ. Тепӗр хут ыйтрӗ:

— Кам Клавийи? Чухлаймарӑм-ҫке эпӗ?

Хӗр шучӗпе, паллах, хӑй ятне каласанах ашшӗн ӑна палламаллаччӗ. Вӑл аса илейменни унӑн ҫиллине тепӗр хут хӑпартрӗ. Хаяр сӑмахсем те тупӑнчӗҫ:

— Ӑҫтан чухлайӑр-ши эсир?! Аскӑнланнӑ та ирттернӗ. Халӗ хӑвӑрӑн телейлӗ ӑраскалӑрпа киленсе пурӑнатӑр: ман ӑҫта кайса кӗрсе каймалла-ши? Анне пурӑннӑ пулсан аптӑрамӑттӑм. Вӑл мӗнле те пулин май тупса хӳтӗлӗччӗ. Ӑна сехмет вӗлернӗ. Хуть те халех мӑя петле тӑхӑнтар та туратран ҫакӑн... — Клавье каллех пуҫне сӗтел ҫине хучӗ, ӗсӗклеме пуҫларӗ.

Микула тинкеререх пӑхрӗ те Клавье сӑн-сӑпатӗнче Ванюк сӑнӗ пуррине асӑрхама ӗлкӗрчӗ. Ним иккӗленмелли те ҫук: хӑйӗн хӗрӗ. Килтен тухса кайнӑранпа ырӑ пурнӑҫ курманни те паллӑ: ку тумтире тарҫӑра хӗн-хур тӳсекенсем кӑна тӑхӑнаҫҫӗ. Микула сасартӑках Лукарьене «Эпир ӑссӑрришӗн ача айӑплӑ мар. Хӑҫан та пулин кирлӗ пулсан пулӑшусӑр хӑвармӑп» тесе сӑмах панине аса илчӗ, чӗри ӑшшӑн тапма пуҫларӗ. Вӑл сӗтел хушшинен тухса Клавье патне пычӗ. Аллине пуҫӗ ҫине хурса ҫепӗҫҫӗн чӗнчӗ:

— Хӗрӗм...

Клавье хӑвӑрт тӳрленсе тӑчӗ. Куҫҫульне пытармасӑр:

— Мӗн терӗр эсир?

— Хӗрӗм, терӗм...

— Апла тăк йышăнатăр-и мана?

— Чĕрĕ чуна йышăнманни киревсĕр йăла. Ун пирки сан аннŭне тахçанах сăмах панă.

— Апла пулсан атте тесе чĕнме юрать-и сире?

— Юрать, хĕрĕм...

— Ой, атте... — ача чухнехи ачаш сассипе чĕнчĕ Клавье. — Чун ытла та кŭтнипе эпĕ ытлашши сăмах каласа кŭрентертĕм сана... Каçар, тархасшăн...

— Çилленмелле сăмах пулман пирĕн хушăра. Куççуле шăлса типĕт. Вара йĕркипе каласа пар: ăçта пулнă эсĕ? Халĕ ăçтан таврăнатăн?

Клавье Ванюкпа иккĕшне мăшăрлантарма тапăннинчен, Ванюкпа иккĕшĕ юн тăванне амăшĕ пĕлтернинчен пуçласа мăнастире мĕнле майпа çакланнине, унти ирсĕр йăласем çинчен, мăнастирте Миххапа мĕн пирки тĕл пулнине, çийĕнчи тумтирне çумри хĕресне сутса туяннине каласа парсан сăмахне çапла вĕçлерĕ:

— Атăлкассине эпĕ анне пулăшасса шанса килнĕччĕ. Кăлăхах пулчĕ. Анне çĕре кĕнĕ. Анчах вăл хăй вилĕмĕпе çĕре кĕнине ĕненместĕп. Сехмет вĕлернĕ ăна. Эпĕ ăссăр пуçăмпа вăл ман атте маррине, ман атте эсĕ пулнине каласа патăм... Анне пĕтнĕшĕн эпĕ айăплă... — Клавье пит-куçне аллисемпе хупăрларĕ, хул пуççийĕсем сиккелеме пуçларĕç.

Хĕрĕ çине шеллесе пăхнă май Микулан кăмăлĕ те çемĕçрĕ. Ахăртнех, çакна аса илчĕ: çамрăк чухне пуçтахланни ав мĕн кăтартрĕ ăна. Ывăлĕ тухса кайни кĕçех çулталăк çитет, ним сас-хура та çук. Çывăхра пулсан мĕнле тŭссе пурăнĕ? Арăмне, Анахвиссене аса илсе те пулин çырмалла.. Унпа пĕрле Клавье те çухалнăччĕ. Вăл тупăнчĕха. Çав тери пысăк асапра пулнă иккен. Мăнастир таврашне сăваплă вырăн, манашкăсене сăваплă çынсем тесе ĕненекен сахал пулман. Унта намăслă çуртри пекех айкашнă, хĕрарăмсен ўтне сутса пурăннă. Лукарьене Михха хăй вĕлернĕ тенине те суя теме çук. Явап тыттарма май çуккине пĕлнĕ вăл. Вĕлернине куракан пулман. Иçмасса, хĕрне обществăна юрăхлă çын тума тăрăшмалла.

— Хĕрĕм, лăплан... Паçăрах каларăм, инкеке куççульпе сирес çук. Хăвна ху алла ил. Аннŭ çĕре кĕнĕшĕн айăпа ху çине илме кирлĕ мар. Сан вырăнта пулсан такам та темскер персе ярĕччĕ. Тĕрĕссипе, пуриншĕн те аннŭпе иксĕмĕр айăплă. Анчах ун пирки урăх калаçмăпăр. Эсĕ тамăкран сывă хăтăлса тухни паха. Хĕресе хывса пăрахнăшăн ырлатăп. Пурăна-киле мăнастирти ирсĕр йăласене тăрă шыв çине кăларас пирки те шухăшласа пăхăпăр-ха. Ан тив, пĕтĕм ĕç халăхĕ пĕлсе вĕсенчен йĕрĕнччĕр. Халĕ сан пурнăçу пирки калаçăпăр. Пытармастăп, çăмăл пулмасть пире. Манăн кил-çурт та çук, шалу та тепĕр чухне ахаль пĕтет. Эсĕ ямăттипе пурăнма хăнăхнă, сан ирĕкре мĕн кирли пĕтĕмпех пулнă. Халь вăй-халу çитнĕ таран ĕçлеме тивет. Пурпĕр ĕлĕкхи апат-çимĕçе кураймăн. Çакна тŭсейĕн-ши?

— Тŭсетĕп, атте! Мăнастиртинчен хăрушă пурнăç ниçта та пулмĕ. Ĕçрен хăрамастăп эпĕ. Анне хăçан та пулин маншăн асаплă ăраскал

килессе кӗтнӗ пек мӗн пӗчӗкрен ёҫе хӑнӑхтарнӑ. Вӗреннӗ чухне Хусанта пурӑннӑ. Прислугӑсем те пурччӗ. Эпӗ пурпӗр хам умри ёҫе хамах тунӑ. Мӑнастирте чухне йывӑр ёҫ лекнӗ мана.

— Нумай вӗреннӗ-и эсӗ?

— Иртнӗ ҫуркунне гимназирен вӗренсе тухрӑм. Унпа ҫеҫ те ҫырлахман. Медсестрасен курсӗнче вӗрентӗм, госпитальте ӗҫлерӗм. Аманнӑ салтаксем мана хисеплетчӗҫ. Эпӗ тухтӑр пулма ёмӗтленнӗччӗ. Телей килмерӗ...

— Вӗренме кӗрейменшӗн ан хуйхӑр. Сывлӑху, кӑмӑлу пулсан, пултарулӑхӗ пулсан, ҫитес ҫул та кӗрӗн-ха. Пире вӗреннӗ ҫынсем питӗ кирлӗ.

— Эпӗ, атте, пӗтӗм вӑя хурса вӗренме тӑрӑшӑп. Гимназире те начарах вӗренмен.

— Питӗ аван... Вӑт ӗнтӗ йӑлтах паллашрӑмӑр...

Микула сӗтел хушшине таврӑнчӗ те, Клавьен ыран-паян мӗн тумалли, ӑҫта пурӑнмалли ҫинчен сӳтсе явасшӑнччӗ. Вара хӑй пурӑнакан хваттере илсе кайса вырнаҫтарасшӑнччӗ. Ёлкӗреймерӗ.. Михха пырса кӗчӗ. Микула пӗрре пӑхсах сехмет ырӑ шухӑшпа килменнине тавҫӑрчӗ. Куҫӗ урнӑ йытӑнни пек ҫиҫни ҫавна палӑртать. Анчах Микула ним хумханмасӑр чӗнчӗ:

— Мӗн сӑмах?

Михха чунне кӑра ҫил тулнипе сӗтел пусӗнче Клавье ларнине те асӑрхамарӗ. Пӗтӗм хаярлӑхне шӑл витӗр сӑрхӑнтарса хуравларӗ:

— Ҫапла, сӑрнай... Лукарьене мӑшкӑллани... Вӗлтӗрен ӑшӗнче ҫуралнӑ хӗрна эпӗ пӑхса ӳстерни сахал пулчӗ саншӑн. Ӗнтӗ ман мул ҫине куҫ хутӑн-и? Пӗтӗмпех туртса илетӗн-и? Лучче хама та вӗлер! Ма вӗлерместӗн?!

— Гражданин Янашов, мӑшӑрсем пирки сӑмах хускатмӑпӑр. Вӗсем вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗҫ. Йывӑр тӑприсем ҫӑмӑл пулччӑр... Эпӗ сан мулна хапсӑннӑ тени суя халап. Сан нимле мул та пулман. Эсӗ тарҫӑсен юнне сӗлӗх пек сӑхса пылпа ҫу ҫинче ишнӗ. Ман атте ёмӗр сакки сарлака-ха, Янаш Миххин те шӑпи тулӗ-ха тетчӗ. Вӑт шӑпу тулчӗ те... Сан аллунта пулнӑ мул чӑн-чӑн хуҫисен аллине куҫать. Анчах сана халех вӗлерес пирки шутламан-ха. Ку хӑвна ху тыткалама пултарнинчен килӗ. Акӑ ялпа пӗрле вӑрман касма, Атӑлтан йывӑҫ кӑларма, мольӑ хӑвалама кайӑн. Унта сана ҫӑкӑр та парӗҫ. Вӑт ҫавнашкал, господин Янашов. Халь тухса кайма пултаратӑр!

— Хӑваламасӑрах каятӑп! Анчах ытла та ҫӑмӑллӑн хӑтӑласшӑн эсӗ манран, сӑрнай! — терӗ те Михха хӑвӑрт револьвер туртса кӑларчӗ.

Клавье чӗри ҫурӑлас пек ыратса кайрӗ, вӑл ашшӗшӗн вилӗмле хӑрушлӑх сиксе тухнине ӑнланчӗ.



**Никифор МРАНЬККА**

# Ёмĕр сакки сарлака*

**Роман**

**Улттăмĕш кĕнеке**

***

Клавье чĕри çурăлас пек ыратса кайрĕ, вăл ашшĕшĕн вилĕмле хăрушлăх сиксе тухнине ăнланчĕ. Çиçĕм пек сиксе тăрса Микулана хўтĕлерĕ. Çав самантра револьверпа пенĕ сасă илтĕнчĕ. Клавье хăйне пуля тивнине те туймарĕ, пĕтĕм чун халĕпе кăшкăрса ячĕ:

— Ирсĕр! Çын вĕлерен!

Клавье тахăш вăхăтра çĕр айĕнчен тухса тăнăн туйăннипе Михха алли чăлханчĕ. Вăл тепĕр хут переймесĕрех алăкран тапса сикрĕ. Микула хăйĕн револьверне кăларса Михха хыççăн чупасшăнччĕ, Клавье урараан ўкме пуçланине курсан ун патне васкарĕ, ăна ўкме памарĕ.

— Сана тивертрĕ...

— Мана тивертни темех мар... Сана вилĕмрен хăтарнăшăн савăнатăп.

...Коля Гришăсемпе пĕрле армана каясшăнччĕ. Дежурнăйра тăма черет çитнипе ирĕксĕрех Атăлкассине юлма лекрĕ. Ыттисем тĕрлĕ çĕре саланнă хыççăн вăл, вулĕçтăвком тавраш ĕнче çўресен-çўресен, Микулапа юнашар пўлĕме кĕчĕ. Ĕç çуккипе кивелнĕ хаçатсене тыткаласа пăхрĕ, вулама хăтланчĕ. Сасартăк Микула пўлĕмĕнче пăшалпа пенĕ сасă илтĕнчĕ. Коля мĕн пулнине пĕлесшĕн чупса тухрĕ. Микула пўлĕмĕ еннелле пăрăнайнăччĕ, унтан Михха сирпĕнсе тухрĕ те Атăл еннелле чупрĕ. Коля ăна тўрех палласа илчĕ, пăшал сасси те ăнсăртран пулманнине тавçăрчĕ. Тăшмана тартас мар тесе револьверĕпе хăлаçланса хыттăн кăшкăрчĕ:

— Стой! Перетĕп!

Михха хыçра хăрушлăх пуррине сиссе хăвăрт çаврăнса тăчĕ. Тĕлленĕ-тĕллеменех револьверĕпе кĕрслеттерчĕ.

---

*Малалли. Пуçламăшĕ 2009 çулхи 2 номерте*

ЕТКЕРЛĔХ

Коля хăйне амантнипе мар, юриех çĕре ӳкрĕ. Çав вăхăтра Михха тепĕр хут печĕ те, хăй çулне пӳлекене вĕлермеллех тивертнĕ пек сунса, тарма тытăнчĕ. Сехмет хăтăлма пултарасси Кольăна хумхатрĕ. Вăл пĕтĕм вăйне пухса тĕллесе печĕ. Лешĕ, шарт сикнипе, тем çине такăннăн тирĕнсе кайрĕ. Тепĕр хушăран сиксе тăчĕ те каллех чупма пуçларĕ. Коля ĕштеленсе ӳкрĕ. Тарса хăтăлать-çке. Тивертеймерĕм-ши? Каллех печĕ.

Пăшал сассине илтсе, унтан та кунтан çынсем чупа-чупа тухрĕç. Ăçта мĕн пулса иртнине тавçăриччен Коля сассине илтрĕç:

— Сехмете хупăрлăр! Тарса хăтăлать вĕт! — Коля тăрса чупма хăтланчĕ; анчах ик-виçĕ утăм та тăваймарĕ, тинех хăйне амантнине туйса илчĕ.

Çынсем çула пӳлме пуçланине асăрхасан Михха вĕсем еннелле тĕллесе ик-виçĕ хут кĕрĕслеттерчĕ. Никама тивертеймерĕ пулин те, çынсем ăна хăвалама чарăнчĕç. Михха çулĕ çинче никам та çук. Халĕ вĕсен куçĕнчен кăна çухалмалла. Вара хăтăласса шанать вăл. Анчах нумай та каяймарĕ, урисем улшăнайми пулчĕç. Шăлне шатăртаттарса çĕр çине персе анчĕ. Çакна курсан çынсен хăравçăлăхĕ иртрĕ. Ăна тепĕр хут хупăрлама пуçларĕç. Михха çакна ăнланчĕ ĕнтĕ: тарса хăтăлма çук. Вăл сасартăках вăрă-хурахсене епле асаплантарнине аса илчĕ, унăн çӳç-пуçĕ вирелле тăчĕ. Револьверне тăнлав çине тытса курока пусрĕ. Пăшалĕ пемерĕ. Патронсем пĕтнĕ иккен.

Иккĕн-виççĕн Коля патне чупса çитрĕç.

— Мĕн пулнă сана?

— Мана нимех те пулман. Хăвăр сывă юлни паха. Анчах ыттисене калăр-ха, Сехмете çапса-туса чунне ан кăларччăр. Унпа мĕн тумалли кайран курăнĕ. Халь Микула пичче патне кайăр. Çавăнта пăшал пенĕ сасă илтĕнчĕ. Анчах хăй кантуртан тухни курăнмарĕ. Мана... мана... пульницана илсе кайăр!

Хвершăл яланхи пекех ир вăранчĕ пулин те пульницана кайма васкамарĕ. Выртакансем унта пурĕ те арçынпа хĕрарăм кăна. Пĕри вут çурнă чух пурттине ура çине лартнă. Шăнăрĕ татăлманнипе суранĕ хăвăрт тӳрленет. Хĕрарăмăн вара пӳрни шыçнăччĕ. Çапах ăшчик вырăнта мар хвершăлăн. Ытла та тĕлĕнмелле килсе тухрĕ-çке. Юлашки çултаlăкра кăна мĕн-мĕн курмарĕç-ши? Ĕмĕртен влаçра тăнă патшана вырăнтан сирпĕтрĕç. Тĕнче пĕтес пекех туйăннăччĕ — пĕтмерĕ. Вăхăтлăх правительство туса хучĕç. Вулăс пуçлăхне тиек пулнă çыннах лартрĕç. Ку ĕнтĕ халăхшăн чи паха правительство тесе шавларĕç. Çав хушăра вăрçă малаллах тăсăлчĕ. Сехмет пурнăçĕ ĕлĕкхи пекех ахăрчĕ. Вулăса большевиксем таврăнчĕç те Вăхăтлăх правительствăн халăха хирĕçле ĕçĕсене кашни утăмрах тăрă шыв çине кăларма тытăнчĕç. Халăха хăйсем май çаврчĕç. Янашова карланкинчен ярса илнĕ пекех, тарçисен пурнăçне кăшт та пулин çăмăллатрĕç. Сехмет улăхне туртса илсе çулчĕç. Ял çывăхĕнчи çĕрне акса хăварчĕç. Пурпĕр Янашов аптранипех палăрманччĕ. Пурлăхĕ те иксĕлни курăнманччĕ. Кĕçех Вăхăтлăх правительствăна та тӳнтерчĕç.

Совет влаçне туса хучĕç. Вулăсра советсен пĕрремĕш съезчĕ пулса иртрĕ. Çав съездра Янашовăн мĕнпур именине халăх аллине туртса илме йышăнчĕç. Анчах ахальтен çеç пулмарĕ-ши ку? Нивушлĕ ĕлĕкхи пуяна тĕп тăвайĕç? Вара пурнăç мĕнле майлашăнса кайĕ?

— Тем курса ларăн... — упăшки канăçсăрланнине сиссе сăмах хушрĕ арăмĕ. Çав вăхăтра чӳречене шаккарĕç.

— Кам унта? — чӳрече умне пычĕ хвершăл арăмĕ.

— Салтака персе амантнă. Хăвăртрах пулăшу кирлĕ! — илтĕнчĕ тултан арçын сасси.

— Салтакĕ ăçта? — ĕнтĕ хвершăл та чӳрече патне ăнтăлчĕ.

— Пульницана илсе кайрĕç.

Хвершăл васкаса çитнĕ çĕре висĕ-тăватă çын аманнине йăтса тăраççĕ.

— Шала илсе кĕрĕр хăвăртрах !— хушрĕ хвершăл.

Кольăна ултă вырăнлă пӳлĕме йăтса кĕчĕç. Урăх пӳлĕм çуккипе хĕрарăмми-арçынни те çакăнтах выртаççĕ. Шинелĕпе аттине хывса илсен Кольăна стена çумĕнчи койка çине вырнаçтарчĕç. Аякĕ тĕлĕнчи гимнастерки юнланнăран хвершăл ăна та хывма хушрĕ. Пуля икĕ аяк шăмми хушшинчен тачка ӳте шăтарса тухнă.

— Э-э... Эсир телейлĕ çамрăк иккен. Шăммусем шĕкĕрех. Тепĕр икĕ эрнерен строя тăма пултаратăр! — Кольăна йăпатмалла калаçкаланă май хвершăл сурана тасатрĕ, бинтпа çыхса ячĕ. — Ну вăт, халь пĕр хушă лăпланса выртăр.

Юлташĕсем кĕме тăнине курсан:

— Кайăр, кайăр! Халь вăхăт мар! — терĕ.

— Суранĕ мĕнле?

— Хăрамалли çук. Савнийĕ пулсан ăна та калăр, пĕр-икĕ эрнерен улаха тухма пултарать.

Коля юлташĕсем сирĕлме ĕлкĕрейменччĕ — Микула Клавьене ал вĕççĕн йăтса кĕчĕ.

— Алексей Васильевич, салам...

— Салам, Николай Степанович... Ку хĕрарăма тата мĕн пулнă?

— Сехмет персе амантнă. Тĕрĕссипе, вăл мана тесе пенĕччĕ. Ку хĕр ача иксĕмĕр хушша кĕме ĕлкĕрчĕ. Мана вилĕмрен çăлса хăварчĕ.

Хвершăл тĕлĕнчĕ. Паттăр хĕр кам таврашне ыйтса пĕлĕччĕ — вăхăт мар пек туйăнчĕ. Тинкеререх пăхсан таçта курнă та пек туйăнчĕ. Тавçăраймарĕ кăна. Клавье йынăшса яни ăна хăвăрт пулăшу памаллине аса илтерчĕ.

— Хальхи саманара аптрамалла ĕнтĕ... Переççĕ те переççĕ пĕрне-пĕри...

— Пĕрне-пĕри мар, Алексей Васильевич, ĕç çыннисен ĕмĕрхи тăшманĕсем пире переççĕ... — хвершăл шухăшне тӳрлетрĕ Микула.

— Пулĕ те... пулĕ те... Çиелти тумне хывасчĕ.

Микула йăтса тăнă çĕртех санитарка хĕр пушмакне хывса илчĕ. Сылтăм аллине фуфайка çаннинчен кăларнă чухне Клавье сасăпах йынăшса ячĕ.

— Хӗрӗм... мӗнле те пулин тӳсме тӑрӑшӑр. Ҫиелти тумтире хывмасӑр выртттарма та, эмеллеме те май ҫук... Тӳсӗр кӑштах...

Клавье тутине татса илес пек ҫыртрӗ. Икӗ куҫӗнчен куҫҫулӗ пӑчӑртанчӗ. Ӑна хӗрарӑмпа пуҫа-пуҫӑн кравать ҫине выртттарчӗҫ. Хул калакӗ тӗлӗнчен пуҫласа тӑршшӗпех кӗпе юнланнине курсан, ӑна та хывтарчӗ хвершӑл.

Клавье хӑйне амантнине, тӳсме ҫук ыратнине те маннӑ пек пулчӗ. Питне-куҫне намӑс хӗлхемӗ ҫунтарса илчӗ. Умӗнче ашшӗпе хвершӑл тӑраҫҫӗ. Пӳлӗм тепӗр енче пӗр арҫынпа каччӑ пӑхса выртаҫҫӗ. Вӑл хӑйӗн таса ӳтне ку таранччен никам арҫыннине те кӑтартман-ҫке.

— Ним те ан вӑтанӑр... Шел те, пирӗн кунта хӗрарӑм тухтӑр ҫук, — терӗ Алексей Васильевич, ун шухӑшне сиснӗн.

Кирек мӗн тусан та килӗшеп тенӗн, Клавье куҫне пытарчӗ. Кӗпине касса сирсен ҫакӑ паллӑ пулчӗ: пуля хул тӑпси айне лекнӗ те шӑтарса тухайман.

— Хӗрӗн телей пур, — терӗ хвершӑл, Микула пӑшӑрханнине туйса. — Турӑ ӑна качча тухса ача-пӑчаллӑ пулма чӗрӗ хӑварнӑ. Пуля чӗре тӗлне лекмен. Тарӑнах та кӗмен. Касса кӑларма май пур.

«Телейлӗ» тенине илтсен, «манран телейли кам пултӑр ара» тесе хурлӑхлӑн шухӑшларӗ Клавье. Касса кӑлармаллине пӗлсен, ҫан-ҫурӑмне сивӗ тар тапса тухрӗ. Госпитальте ӗҫленӗ чухне салтаксем операци хыҫҫӑн епле асапланнине тем чул та курнӑ-ҫке.

— Сирӗн ҫывратмалли эмел пур-и? — терӗ Клавье шиклӗхне пытараймасӑр.

— Уншӑн ним те ан пӑшӑрханӑр. Касса кӑларнине сисмесӗрех юлатӑр! — йӑпатрӗ хвершӑл. Ҫӑмӑл операцисене халиччен те тукаланӑ вӑл. Ҫавӑнпа ним шухӑшламасӑрах марлине эмелпе нӳрлентерчӗ те унпа Клавье сӑмси-ҫӑварне хупларӗ. Шутлама хушрӗ.

Клавье темиҫене шутласа ҫитерсен аташма пуҫларӗ. Юлашкинчен шӑпланчӗ. Санитаркӑпа Микула пулӑшнипе хвершӑл пульӑна часах касса кӑларчӗ. Суранне тасатса бинтпа ҫыхрӗ.

Клавье ҫаплах туйми ҫывӑрнине кӑштах пӑхса тӑчӗ те Микула сасартӑк Кольӑна аса илчӗ.

— Ҫамрӑк салтак суранӗ мӗнле? — ыйтрӗ вара.

— Хӑрамалли ҫук. Пуля аяк шӑмми хушшипе ҫемҫе ӳте шӑтарса тухнӑ. Пӗр-ик эрнерен строя тӑма пултарать.

— Апла мухтав! Вӗсене сыватма тӑрӑшнӑшӑн сире тав тӑватӑп! — хвершӑл аллине тытса чӑмӑртарӗ Микула.

— Пирӗн ӗҫӗ ҫав, Николай Степанович.

Микула Коля патне пычӗ:

— Тезка, хӑвна мӗнле туятӑн?

— Сиккипе, Микула пичче! — ыратнине уямасӑр хуравларӗ Коля.

— Маттур, тезка! Хӗрлӗ гварди ретӗнче тӑни кӑлӑхах пулман саншӑн. Тӗл пеме вӗреннӗ. Тӑшман тарса хӑтӑлаймарӗ. Тавтапуҫ!

— Хам та хӑранӑччӗ. Сан кабинетра пӑшал сасси пулсанах ырӑ мара тавҫӑртӑм. Пӑхатӑп — кантуртан Сехмет вирхӗнсе тухрӗ. Ним

иккӗленмесӗрех ҫаван ӗҫӗ ку тесе шухӑшларӑм. Анчах сире хӳтӗлекенӗ кам пулчӗ вӑл?

— Вӑл, тезка, ман хӗр... Клавье ятлӑ... — терӗ те Микула, ҫамрӑк ҫын ӗненмесӗр те тӗлӗнсе пӑхнине асӑрхасан, хушса хучӗ:

— Ун ҫинчен тепӗр чухне каласа парӑп-ха. Халь ун-кун шухӑшласа хӑвна ху ан хумхантар. Сывалма тӑрӑш...

***

Микулапа хершӑл пульницаран тухнӑ ҫӗре Михха тавра эшкер халӑх пухӑнма ӗлкӗрнӗ. Михха пусма вырттарнӑ выльӑх пек чӗтрет. Халь ярса илӗҫ те таткаласа-ҫурса пӗтерӗҫ. Халӑхӗ чӑннипех тӑвӑлчӗ. Анчах Микула хушса хӑварнипе хӗрлӗ гвардеецсем ӑна ҫулса илме ирӗк памарӗҫ.

— Мӗн кӗпӗрленсе тӑнӑ унта? — утнӑ ҫӗртех ыйтрӗ хершӑл.

— Сехмете хупӑрласа илнӗ. Тем туса пӑрахасран хӑрушӑ. Ӑна халӑх сучӗ умне тӑратмалла.

Вӗсем ҫывхарнине курсан халӑх пушшех шавласа кайрӗ.

— Пуҫтармалла ӑна!

— Майӗнчен чул ҫыхса Атӑла чӑмтармалла?

— Юлташсем! — лӑпкӑн чӗнчӗ Микула. — Вӑл такама та хур кӑтартнӑ. Ҫапах хальлӗхе эпир ӑна чӗрех хӑварӑпӑр. Алексей Васильевич суранне ҫыхса ярӗ те халӑх сучӗ умне тӑратӑпӑр. Ун чухне пуриншӗн те явап тытӗ!

— Ерекен чирпе выртакансен пӳлӗмне илсе кайӑр, — терӗ хершӑл. — Унта никам та кансӗрлес ҫук ӑна.

— Юлташсем, тытӑр та хершӑл калакан пӳлӗме илсе кайӑр! — терӗ Микула.

Миххана пӗчӗк пӳлӗме йӑтса кӗчӗҫ. Кунта хершӑл та, санитарка та час-часах кӗрсе тухманнипе урайне тусан пуснӑ. Халь ку никама та шухӑшлаттармарӗ. Атти-шӑлаварне хывса илчӗҫ те Миххана койка ҫине вырттарчӗҫ. Пуля купарчинчен аяларах пӗҫҫе лекнӗ те витӗр тухайман.

— Господин Янашов, ытлашши ан пӑшӑрханӑр, пуля шӑмма тивмен, вырнаҫса ларӗ те утма кансӗрлемӗ, — терӗ хершӑл.

— Ну, вӑт... Ӗмӗр сакки сарлака тени ҫакӑ ӗнтӗ вӑл... Шӑпу тулчӗ те... Халӑх тӳртса ҫурасран хӑтӑлни Миххана чун кӗртрӗ.

— Шӑпа тулнӑшӑн ӳпкев ҫук. Эп хам ӗмӗре мухтавлӑ пурӑнса ирттернӗ. Эсир, сирӗн йышшисем ман умра ҫӗр ӑманӗсем вырӑнӗнче кӑна пулнӑ. Сана персе пӑрахайманшӑн кӑна кулянатӑп. Вӗлтрен ҫинче ҫуралнӑ хӗр чӑрмантарчӗ. Ӑна тав ту...

— Кам ӑҫта ҫуралнине ниме те пӗлтермест. Ҫуралсан мӗнле ҫын пулнине кура хаклама тивӗҫ. Эс ав аҫу-аннӳренех ҫуралнӑ-и, тен, анчах пурӑна киле ҫӗлен-калтана тухнӑ.

Михха пӑлханса кайрӗ.

— Сӑрнай, ҫухал куҫ умӗнчен! Кураймастӑп эп сана! Пӗтӗм чунтан килӗштереймӗстӑп!

— Ну, юрӗ, мӗн павранипе ҫитӗ, — терӗ те Микула хӗрлӗ гвардеецсене хушрӗ. — Хайне хай тем туса пӑрахӗ. Лайӑх сыхлӑр.

Урамра мӗн пулнине каярах илтнӗ Натюш чупса ҫитрӗ. Микулана тӗл пулсанах:

— Сехмет сана пенӗ тенине илтрӗм те чун юлмарӗ. Чӑнах-и ҫав хыпар? Чиперех-и эсӗ?

— Чиперех. Клавье ҫӑлчӗ.

— Мӗнле Клавье? — тӗлӗнчӗ Натюш.

— Ман хӗр вӑл... Михха патӗнче ӳснӗскер.

— Кирлӗ мара ан калаҫ-ха, Николай Степанч.

— Тӗрӗсех, Натюш. — Вара Микула ӗлӗк мӗн пулса иртнине кӗскен каласа пачӗ те сӑмахне ҫапла вӗҫлерӗ: — Вӑт ҫав хӗр хушша кӗрсе тӑрса вилӗмрен ҫӑлса хӑварчӗ. Халь хай пульницара выртать. Пульлине хвершӑл касса кӑларчӗ.

Микула ирӗксӗртен Лукарье ҫумне ҫыпҫӑннине ӑнланчӗ пулин те, Натюш кӑмӑлӗ Клавье енне ҫаврӑнмарӗ. Вӑл сасартӑках Анахвиспе Ванюк уйрӑлнӑшӑн Клавье айӑплине аса илчӗ. Микула Натюш пӑлханнине сирме тӑрӑшрӗ:

— Коля маттур хӗрлӗ гвардеец, Сехмете тартман, персе ӳкернӗ. Хӑй те кӑштах аманнӑ.

— Аманнӑ?.. Халӗ ӑҫта вӑл?

— Пульницара. Пӑшӑрханма кирлӗ мар. Тепӗр икӗ эрнерен ура ҫине тӑратӑн терӗ хвершӑл. Атя, мӗн те пулин ҫырткалама илӗпӗр те кайса курӑпӑр.

Хӑйсем ҫӗҫ юлсан Коля пуҫӗнче тепӗр хут тӑрлавсӑр шухӑшсем явӑнма тытӑнчӗҫ: «Микул пичче мӗншӗн ман хӗр терӗ ӑна? Вӗсен Ванюкран урӑх ача ҫукчӗ-ҫке». Коля пуҫне ҫӗклесе Клавье еннелле тинкерчӗ. Унта шурса кайнӑ хӗр выртать. Таҫта тӗл пулнӑ пекех-ҫке хӑй. Ӑҫта курнӑ-ши?.. Ҫапла... Сасартӑках аса илчӗ Коля. Мӑн кун кунӗ, Энӗшкасси айлӑмӗнче, вӑйӑра курнӑ ӑна. Ванюкпа иккӗш ташларӗҫ. Михха хӗрӗ тетчӗҫ ӑна — Клавье. Вӑл таҫта ҫухалнӑ теместчӗҫ-и вара? Тупӑннӑ-шим? Ахаль тумпа юлнӑскер, хӗсӗк пурнӑҫпа тарӑхни паллах. Ванюкпа иккӗшӗ пӗрле пулманши?.. Тинкернӗҫемӗн, темӗн, тути-ҫӑварӗ Ванюкӑнни пекех курӑнса кайрӗ.

Коля пуҫне минтер ҫине хурайнӑччӗ — юлташӗсем килсе кӗчӗҫ.

— Чумари юлташ, хӑвна мӗнле туятӑн?

— Сиккипе...

— Эпир хӑраса ӳкмерӗмӗр вӗт.

— Явӑл пуҫӗ, вӗлерме те пултарнӑ!

— Маттур эсӗ, Сехмете тартман!

— Эсир те ҫаплах тӑвӑттӑр, тус-йышсем. Чӑн та, Сехметӗн шӑпи тулма вӑхӑт ӗнтӗ.

— Николай Степановича вилӗмрен ҫӑлнӑ хӗр?..

— Ав выртать. Хул калакне кӗрсе ларнӑ пульлине касса кӑларнӑ хыҫҫӑн ҫывӑрать-мӗн.

Хӗрлӗ гвардеецсем ун ҫине ӑмсанса пӑхрӗҫ. Пит-куҫӗ, шуранка пулсан та, ытарма ҫук илемлӗ.

— Кам хӗрӗ-ши? — кӑсӑкланчӗҫ каччӑсем. — Ӑҫтисем?

Коля Микуларан мӗн илтнине каласа парасшӑнччӗ, анчах хальлӗхе тӑхтама тӗв турӗ.

— Пӗлеймерӗм-ха ҫав, — тесе кӑна ирттерчӗ.

Хӗрлӗ гвардеецсем ун-кун ҫинчен калаҫкаларӗҫ те Кольӑна хӑвӑртрах сывалма ырӑ сунса хӑварчӗҫ.

Кӗҫех Клавье йынӑшса ячӗ. Тӑна кӗрсе куҫне уҫмасӑрах вӗтелене пуҫларӗ. Санитарка савӑт-сапа илсе пырсан пуҫне ҫӗклерӗ. Клавье шӗл! хӑсса ячӗ. Пуҫне тепӗр хут минтер ҫине вырнаҫтарсан, астумасӑр аллине ҫӗклеме хӑтланчӗ те ыратнипе йынӑшса ячӗ:

— Ай-йой-йай...

Куҫне уҫрӗ. Анчах тӑна кӗрсе ҫитеймен пирки хӑй ӑҫтине аса илеймерӗ. Унталла-кунталла пӑхкаланӑ май шур халатлӑ хӗрарӑма курсан:

— Ӑҫта эпӗ? — терӗ.

— Пульницара эсӗ, хӗрӗм...

Клавье йӑлтах тӑн илчӗ. Ун куҫӗ умне Михха тискер кайӑкӑн тухса тӑчӗ. Шӑлне йӗрчӗ. Куҫне чарнӑ. Хӗр йӗрӗннӗн ҫӳҫенсе илчӗ. Ҫав тискертен тӑван ашшӗне ҫӑлса хӑварнӑшӑн савӑнчӗ. Тӑван ашшӗ кӑмӑллӑ ҫын пек-ха, пӗтме памӗ. Клавье куҫӗсем шывланчӗҫ. Санитарка ҫакна асӑрхаса йӑпатма васкарӗ:

— Ан пӑшӑрхан, хӗрӗм. Ёнтӗ хӑрушлӑх иртнӗ: ӳт ӑшне кӗрсе ларнӑ пульӑна чиперех касса кӑларнӑ. Кӗҫех сывалӑн терӗ хвершӑл. Лӑпкӑн вырт. Эп кӗҫех сӗт илсе килӗп.

Санитарка кружкӑпа сӗт йӑтса килчӗ.

— Хӗрӗм, ӗҫ-ха!

— Аюк... Ман ӑша халь ним те анас ҫук.

— Ӗҫес пулать, хӗрӗм. Чӗрӳ сыпӑнтӑр. — Ҫапла сӗне-сӗне Клавьене сӗт ӗҫтерчӗ санитарка.

Микулапа Натюш кӗнине курсан Клавье аптраса ӳкрӗ. Ашшӗ мӗнле йышӑнӗ-ши ӑна? Хӗрарӑмне палламан пирки ун ҫинчен шухӑшлама пӗлмерӗ вӑл. Ҫакна кӑна асӑрхарӗ: вӑл пӳлӗме кӗрсенех чарӑнчӗ те, Клавье ҫине нимле мар пӑхса, тӳрех тепӗр пуҫӗнче выртакан ҫамрӑк патне пычӗ. Микула Клавье умне пырса тӑчӗ.

— Хӗрӗм, хӑвна мӗнле туятӑн? — терӗ.

Клавье чӗрине ӑшӑ хум сӗртӗнчӗ.

— Аван... — пӑшӑлтатрӗ ҫепӗҫҫӗн.

— Апла савӑнмалла... — аллине Клавье пуҫӗ ҫине хучӗ Микула. — Сан валли кӑштах ҫырткаламалли илсе килтӗм....

— Чӑрманмалли ҫукчӗ... Халь ҫеҫ ӑшӑ сӗт ӗҫтерчӗҫ те, ман ним те ҫиес килмест.

— Ҫиес пулать, хӗрӗм... Ахальлӗн час сывалаймӑн.... — Микула ҫыххине салтса тумбочка ҫине хучӗ. Кулачран пӗчӗк чӗл касса илсе ҫу сӗрчӗ. Пӗр ҫӑмартине шуратрӗ. Ӑшшӑн сӗннине ытараймасӑр, Кла-

вье ҫу сӗрнӗ кулачне ҫирӗ, ҫӑмартине те тутанса пӑхрӗ. Анчах урӑх йышӑнмарӗ. Мӗн юлнине сунтӑха хурсан Микула Натюша чӗнчӗ.

— Кил, паллаштарам сире! — терӗ.

Клавьене пула Анахвиспе Ванюкӑн уйрӑлма тивнине манайман пирки кӑмӑлӗ кӑшт кӳтнипех Натюш Коля патӗнчен пӑрӑнчӗ, шуранка хӗр патне пычӗ.

— Вӑт, паллашӑр, ку ман хӗр — Клавье... Ку вара — ман мӑшӑрӑм Натюш, ав ҫав ҫамрӑкӑн аппӑшӗ, — терӗ Микула.

Клавье чӑр пӑхрӗ. Ванюк амӑшне, Анука, Михха патӗнче хӑнара тӗл пулнине астӑвать вӑл. Ку урӑх хӗрарӑм. Ҫавӑнтах Ванюк амӑшӗ пуҫне хунине аса илнипе чунӗ ютшӑнма хӑтланчӗ. Ҫакна сиссе Натюш малтан хӑйӗн ыр сӑмах каламаллине тавҫӑрчӗ. Ҫитменнине, упӑшкине вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑ хӗр ҫине сӳрӗккӗн пӑхни аван та мар.

— Паллашма хавас. Шанатӑп, сывалсан пӗрле пулӑпӑр... — терӗ вара евӗклӗн.

Клавье куҫӗ шывланчӗ. Ара, питех тӗлӗнмелле-ҫке. Ун тӗлне ырӑ сынсем тупӑнчӗҫ. Халь хӑйсен ҫемйи пекех йышӑнаҫҫӗ.

— Тавтапуҫ ырӑ сӑмахӑршӑн... — юлашкинчен хуллен хуравларӗ Клавье.

— Ну, вӑт... лӑпкӑ вырт. Кӑштах пушансан эпӗ татах килетӗп. Кирлӗ-кирлӗ марри ҫинчен шухӑшласа пуҫна ан ват.

— Юрать...

— Эпир каяр-ха ӗнтӗ...

Вӗсем кайсанах Клавье куҫӗ умне Ванюкпа Анахвис тухса тӑчӗҫ. Иккӗшне уйӑрнӑшӑн хӑйне айӑплӑ шутларӗ. Вӗсем савӑнатчӗҫ. Клавье пырса татрӗ вӗсен савӑнӑҫне. Ванюка Анахвисрен уйӑрса хӑйпе пӗрле илсе кайрӗ. Халь мӗн шухӑшлать-ши ҫав хӗр? Ӑҫта-ши вӑл?

Микуласем кайсан Коля пуҫне паҫӑрхи шухӑшсемех шӗкӗлчеме тытӑнчӗҫ. Клавьене палласа илсенех тӑвӑлнӑччӗ вӑл. Аппӑшӗн телейне ҫак хӗр татнӑ-ҫке. Анчах халь вӑл хӑйне шеллемесӗр Микулана вилӗмрен хӑтарнине пӗлсен, кӑмӑлӗ ҫемҫелчӗ. Микула ӑна хӑйӗн хӗрӗ тесе йышӑнни вара тӗлӗнмеллипех тӗлӗнтерчӗ. Иккӗшне ҫак пӳлӗме вырттарнӑранпа шухӑш сукмакӗпе таҫта та ҫитсе ҫапӑнчӗ ӗнтӗ вӑл. Кӑшт тавҫӑрнӑ пек те пулчӗ. Михха арӑмӗпе тахҫан пулнӑ мыскарана кам илтмен-ши? Паттӑрне ҫеҫ никам та пӗлмен. Микула пулман-и эппин ҫав паттӑр? Клавье пит-куҫӗнче Ванюк сӑнарӗ пурри те ҫавнах систермест-и?.. Анчах Клавье суранӗ йывӑррипе каласҫтарса хумхатасшӑн пулмарӗ. Ҫапла нумайччен ним шарламасӑр выртрӗҫ вӗсем. Юлашкинчен Клавье тӳсеймерӗ — вӑй кӗнӗ пек туйӑннипе хуллентерех чӗнчӗ:

— Эсир... пухура хут купӑс каласа Ванюкпа иксӗмӗре ташлаттарманччӗ-ши?

— Ташлаттарнӑ... — килӗшрӗ Коля. Хускалнӑ калаҫӑва сыпӑнтарса ярасшӑн хушса хучӗ: — Тен, ытлашши сӑмах пулӗ те, йывӑра ан илӗр те, ман ҫакна пӗлес килет. Мӗнле-ха Михха хӗрӗнчен Микула пичче хӗрӗ пулса тӑтӑр эсир?..

Ҫак сӑмаха темиҫе кун маларах илтнӗ пулсан, Клавье намӑс харамӗпе ҫунсах кайӗччӗ. Халь, Микула ют ҫынсем умӗнчех хӑй хӗрӗ тесе йышӑннӑ хыҫҫӑн ытлашши пӑлханса ӳкмерӗ. Тата паян мар тӑк ыран, Кольӑна мар тӑк тепӗрне пурпӗр каласа пама лекӗ тесе шутларӗ те:

— Чӑн япалашӑн ма йывӑра илес, — терӗ. — Эпир Ванюкпа иксӗмӗр те Николай Степанович ачисем, пире анне йӑлтах каласа пачӗ.

— Вара?..

— Вара-и?.. — Клавье самантлӑха чӗмсӗрленсе выртрӗ те хӑй илтнӗпӗлнӗ таран каласа пачӗ. Шухӑшне ҫапла вӗҫлерӗ: — Ванюка эп мӗн пӗчӗкрен юратнӑ. Хусанта тӗл пулсан пушшех те. Иксӗмӗре мӑшӑрлантарма сӑмах татнине ӑраскал пӳрни тесе шутланӑ.

Ак ӗнтӗ Ванюк мӗншӗн килтен тухса кайнине те тавҫӑрса илчӗ Коля. Хӑй пулсан та тӳсес ҫукчӗ. Намӑса ӑҫта хурӑн. Пуриншӗн те Микула айӑплӑ пек шутласа, ӑна ҫилленме те хатӗрччӗ. Анчах урӑххи кӑсӑклантарнипе сӳрӗк кӑмӑлне сирме тӑрӑшрӗ.

— Вӑл сире юратнӑ-и? — хӑю ҫитерсе ыйтрӗ Коля.

— Ҫавна калама пултараймастӑп. Ун пирки хам тӗллӗн те нумай шухӑшланӑ. Малтанах юратать пек туйӑнатчӗ. Пухура пуҫӗпех урӑхла кӑтартрӗ хӑйне. Анахвис пӑрӑнса утнине асӑрхарӗ те канӑҫсӑрланса ӳкрӗ. Мана пӑрахса каясшӑнччӗ. Хам ҫине тӑнипе чарӑнса юлчӗ пулмалла. Мӑшӑрланма та ирӗксӗртен килӗшрӗ пек туйӑнать...

— Халь юрататӑр-и ӑна? — терӗ.

— Юрататӑп... — ним иккӗленмесӗр ҫирӗплетрӗ Клавье. Коля пӑлхана пуҫланине асӑрхасан хушса хучӗ:

— Анчах качча юратнӑ пек мар, харпӑр хӑй тӑванне юрататӑп пек кӑна. Шел, ҫук вӑл... Кунта пулсан ӑнланӗччӗ те, мана хур кӳрекенсенчен упрӗччӗ.

Коля тем каласшӑнччӗ те — ӗлкӗреймерӗ, кулса ячӗ. Ҫакӑ Клавьене кичемлентерчӗ.

— Ма аплах кулатӑр? — терӗ хӗр.

— Ҫук, ҫук, Клавье! — пуҫламӑш хут хӗре ятран чӗнчӗ Коля. — Пӗррехинче пулса иртнине аса илтӗм те кулмасӑр тӳсеймерӗм. Каласа парсан хӑвӑр та ахӑлтататӑр...

— Калӑр эппин...

— Эпир Ванюкпа сӗм вӑрманта, Элнет юхан шывӗ хӗрринче. Вӗри кӗл ҫине аҫам сарнӑ та ҫывӑрма выртнӑ. Ыйхӑ килмест. Апла мӗн те пулин паврамаллах. Эпӗ хайхи: «Юман паттӑр, — терӗм, — Турӑ умӗнче пек каласа пар-ха, Сехмет хӗрӗ качча пырас тӑк, илетӗн-и?» Ванюк ҫухалса кайрӗ. Ним хуравлама аптранипе ҫав ыйтӑвах мана пачӗ. «Юман паттӑр, — терӗм каллех. — Ҫын ҫине персе ан вырт, Михха хӗрне манпа мар, санпа ҫураҫнӑ». Вӑл каллех: «Енчен санпа ҫураҫнӑ пулсан мӗн тӑвӑттӑн?» — терӗ. Эпӗ: «Алӑк кутӗнчи шӑпӑр вырӑнне тӑратма кирлӗ пулсан, конешнӑ, килӗшетӗп», — терӗм. Ванюк эрленчӗ пулмалла. Мана ҫине тӑрсах ӑнлантарма пикенчӗ: «Чумари юлташ, — терӗ, — эс мана пуҫран ҫапнӑ пекех тӗлӗнтеретӗн.

Хӗрпе каччӑ пӗр-пӗрне юратсан, ашшӗ-амӑшӗсем хирӗҫ пулмасан, ҫӗнӗ кине шӑпӑр вырӑнӗнче усрамӗччӗҫ. Сехметӗн ҫур пурлӑхӗ кӗрӳ аллине куҫӗччӗ». «Ой, шеремет! Эс чӑнласах Сехмет кӗрӳшӗ пуласшӑн иккен!» — терӗм те ахӑлтатса кулма пуҫларӑм. «Ахӑрса кӑмӑлна пытарма ан тӑрӑш, Чумари юлташ. Клавье килӗшсен, хӑрах уран сиксех качча илетӗн!» — терӗ вӑл. Эпӗ кулма чарӑнтӑм. Шӳтлемесӗр тавӑрса хутӑм: «Йӑнӑшатӑн эс, Юман паттӑр! Хамӑнне Сехмет пурнӑҫӗпе нимпе те улӑштарас ҫук. Вӑл пуян, анчах юмахри пек ылтӑн читлӗхре. Эпӗ чухӑн пулин те ирӗкре, ытарма ҫук уҫӑ сывлӑшра. Хӗвелӗ, ҫӑлтӑрӗ, кӑвак тӳпи, вӑрманӗ, юхан шывӗ — пурте ман ырлӑхшӑн. Ыран акӑ пуҫ тӳпинчен ура тупанне ҫити йӗпенӗпӗр. Сехмет ҫак пархатарлӑха нихҫан та курас ҫук. Ҫапла, Юман паттӑр, Сехмет тавращне ман ҫума ан тӗк. Санпа ҫураҫнӑ — эсех хӑтана кай!» Ҫакӑнпа пирӗн сӑмах вӗҫленчӗ. Эпир сӑмах хускатнӑ хӗр ав кам пулнӑ иккен. Веҫех ӑнлантӑм.

Йӗкӗтсем хӑй ҫинчен калаҫнине илтсен Клавье кӑмӑлне те кулӑш хӗлхемӗ кӗрсе ӳкрӗ. Анчах Коля сӑмахӗнче Миххана чунтан курайманлӑх пурри, ҫав туйӑм Клавье ҫине ӳкме пултарасран шикленсе куллине сирчӗ. Миххапа Коля йышшисем хушшинче урлӑ каҫма ҫук тӗпсӗр ҫырма. Пуҫламӑш хут Клавье пуҫне иккӗленчӗк шухӑш пырса кӗчӗ: Ванюкпа иккӗшне чӑннипех мӑшӑрлантарасшӑн пулнӑ-ши вӗсем? Ҫакна тӗрӗслесшӗн Клавье: «Ванюк маншӑн никам та мар, тӗнчере ун йышшисем тем чухлех», — тенӗччӗ. «Тӗрӗс... — тенӗччӗ ун сӑмахне ҫирӗплетсе Миххa. — Пуян хӗрӗн унашкал сӑрнайпа мӗн ӗҫ...» Апла мӗн пирки мӑшӑрлантарасшӑн пулнӑ вӑл? Николай Степановичран хӑраса мар-и? Унпала хурӑнташлансан тапӑнас хӑрушлӑх пӗтет-ҫке. Ванюк паттӑррине, хута кӗме пултарассине курса мар-и? Апла нихҫан та телейлӗ пулас ҫукчӗ вӗсем. Коля Миххa пурнӑҫне хӑйӗннипе тем парсан та улӑштарасшӑн мар пек калаҫни Клавье чӗрине ӑшӑтса ячӗ. Ку ҫамрӑк та Ванюк пекех маттуррине ӑнланчӗ вӑл. Уншӑн ҫут ҫанталӑк пурлӑхӗ, илемӗ пуянлӑхран хаклӑрах. Клавьен те ҫак ҫул ҫине тӑма тивет-ҫке ӗнтӗ. Анчах ури шуҫасран кам алӑ тӑсса парӗ ӑна? Ашшӗ ҫине ҫеҫ таянни ӗмӗрлӗхе пулас ҫук.

***

Ульяна аллӑ сакӑр ҫула ҫитнӗ ӗнтӗ. Хӑй ӗмӗрӗнче мӗн тери хуйхӑ тӳсни ҫӗр ҫынна та ыташшипех ҫитмелле. Вӑхӑтсӑрах курпунӗ палӑрнӑ пулин те, чӗре хӑвачӗ иксӗлмен-ха ун, ӑс-тӑнӗ ҫав-ҫавах таса, уҫӑмлӑ. Анчах пурӑна киле тунсӑх ытларах та ытларах пусара пуҫларӗ. Вӑл пӗччеңҫӗ пекех-ҫке. Натюш хӗрӗпе Коля мӑнукӗ Атӑлкассинче, хутран-ситрен кӑна килсе каяҫҫӗ. Анахвис мӑнукӗ ытларах шкулта, ялти ӗҫпе сыхӑннӑ. Ҫакнашкал тунсӑх вӑхӑтра яланах Наума кӗтет вӑл, унпала пӗр-ик сӑмах та пулин калаҫса кӑмӑлне ҫӗклесшӗн. Наум съездран таврӑнасса кӗтмелле Ульяна ҫӗр улми кукли пӗҫерсе кӑларчӗ. Хӑй ҫутнӑ вӑхӑталла Анахвис та килсе ҫитрӗ.

— Ой, кукамай хырӑм выҫрӗ-ҫке! — терӗ.

— Выçрĕ пуль, ачам, выçрĕ пуль... Ав кукăль пĕçерсе кăлартăм, — терĕ те Ульяна пĕр кукăльне касса сĕтел çине хучĕ.

— Çынсем съездран таврăнаймарĕç-ши?

Кукамăшĕ ку ыйтăва мĕн пирки панине чухлать Анахвис. Наумпа иккĕшĕ тахçантанпах варлине те сиснĕ. Çавăнпа хаваспах хуравларĕ:

— Таврăннă, кукамай. Наум пичче шкула кĕрсе çыру пачĕ.

— Камран-ши?

— Хусантан...

Хусантан тенĕрен, Зина çырнине пĕлет те Ульяна. Çак хĕр те хускатать ун чĕрине. Унпа тĕл пулман тăк Ванюк паян кун та килтехчĕ. Анчах ăçта вăл халь — никам та пĕлмест.

— Айтурах, çав Наум тенипе... Ма тӳрех кунта килмерĕ-ши?

Кукамăшĕ Наумпа вăрах тĕл пулмасан епле асапланнине пĕлет Анахвис. Халь шăп çавăн çинчен сăмах хускатма вырăнлă пек туйăнчĕ ăна.

— Кукамай, — çемçен чĕнчĕ вăл, — эпĕ ытлашши те калаçатăп-и тен, ан çиллен...

— Унашкалах мĕн пулчĕ тата? — çуйланса ыйтрĕ Ульяна.

— Манпа темех пулман-ха, эс асапланни шухăшлаттарать мана, кукамай. Натюш аппапа Коля Атăлкассинче пурăнаççĕ. Эпĕ те тепĕр чухне яра куна килте çук. Каçсерен улаха чупатăп. Пĕччен пурăнма кичем сана.

— Кичем тесе мĕн тăвас, хĕрĕм?

— Наум пиччене чĕнсе ил. Пурăнтăр пирĕн патăрта. Унăн та ĕмрипех пĕччен нушаланас килмест пулĕ?

Ку Ульянан чи хаклă ĕмĕчĕ-çке. Çапах мăнукĕн сăмахĕ вăтантарчĕ ăна.

— Килес пулсан çаплаччĕ те... — терĕ вара çурма сасăпа.

— Эсĕ çинерех тăрса йыхăр, кукамай. Вăл та тунсăхласа çитнĕ, паллах. Çынран мĕн вăтанмалли ĕнтĕ?

Ульяна урăх ним те калаймарĕ. Пĕр кукăльне кипкепе чĕркесе хул хушшине хĕстерчĕ те тухса кайрĕ.

...Наум Атăлкассинчен таврăнсан хăй пурăнакан пӳлĕме кĕчĕ те хăй çутса ячĕ. Кăмакана ирех хутса çунтарнăран пӳлĕмре ăшă-ха. Çавăнтах хуçнă çăпатине тирме ларчĕ. Ирĕксĕрех çакна аса илчĕ: çыру панă чухне Анахвис ăна тӳрех хăйсем патне пыма хушнăччĕ. Наум ялан унта çӳрени аван мар пек шутларĕ те — каймарĕ. Халь акă ӳкĕне пуçларĕ. Ульяна килсе кĕни Наумшăн йăлтах кĕтмен çĕртен пулчĕ. Вăл халиччен кунта килсех çӳременнипе Наум пăшăрханса ӳкрĕ. Ульяна килĕнче темле инкек сиксе тухман пулĕ те... Анчах унăн яланхи майлах çепĕç сасă пулни Наума лăплантарчĕ.

— Килех, килех! Тĕпелерех ирт! — йыхăрчĕ вăл хаваслăн.

— Ма пымарăн? Анахвис каларăм терĕ-çке.

— Темĕн, аван мар пек туйăнчĕ. Ахаль те çынсем калаçаççĕ...

— Чĕлхисем тутăхнă пулсан якатчăрах. Пире уншăн ним те пулас

çук... Вăт эс пыманнипе хамăн килме лекрĕ. Ăшă кукăль кайса çитерем-ха çавна терĕм.

— Чăрманмах кирлĕ марччĕ...

— Мĕн чăрмавĕ-ши? — Ульяна кунта пурăнакан çын пекех кукăльне сĕтел çине хучĕ те сăхманне хывса çакрĕ. Кăмака умĕнчи кĕтесрен çĕçĕ илсе килчĕ.

— Кил, кукăль кас, — терĕ.

Наум чĕри ăшшăн хăпартланса тапма пуçларĕ. Чунтан юратакан хĕрарăмĕ кукăль илсе килнĕ.

— Кукăль касасси çармăс енчен вут турттарассиех мар-ха, касма пулĕ... — текелесе пуканне сĕтел умнерех лартрĕ те Наум хушса хучĕ:

— Капла улах кукăлĕ çинĕ пекех туйăнать.

— Çапла пултăр тесе килтĕм те. Анчах каччин нимле кучченеç те çук-ха, кукăле каялла илсе каяс мар-ши?

— Унашкалах мар-ха, Ульяна. Каччин те кучченеç пулĕ, намăса пĕлмен çынах мар, — Наум алăк патĕнче çакăнса тăракан сăхман кĕсйинчен тăвата кĕлентĕр илсе пычĕ. Вăт, ман кучченеçе те астивсе пăхăпăр. Эп ăна сан ятпах илсе хунăччĕ.

— Ырă суннăшăн тавтапуç... — именчĕклĕ тухрĕ Ульяна сасси.

Савнă хĕрарăм пĕçернĕ ашпа çĕр улми кукли ăшăлла ытла та тутлĕ-çке. Наум васкамасăр та тăраниччен çирĕ. Ульянашăн кĕлентĕр пылпа юрса пĕçернĕ пекех пулчĕ.

— Кантурта мĕнле унта... Съезд мĕнле иртрĕ? — сĕтел хушшинчен тухсан кăсăкланчĕ Ульяна.

— Эпир... большевиксем шутласа хунă пек иртрĕ, Ульяна. Сехметĕн мĕнпур пурлăхне халăх ирĕкне туртса илмелле тесе йышăнчĕç. Платун Павăлĕн арманне те...

— Аранах шăписем тулчĕç эппин...

— Çапла, Ульяна... Мана арманта ĕçлеме уйăрса лартрĕç. Ыранах унта мĕн пуррине шута илсе йышăнма хушрĕç.

— Айтурах, эп пĕччен юлатăп-çке...

Ульяна салхуллăн калаçни Наум чĕрине пырса тиврĕ. Йăпатма васкарĕ:

— Ульяна, ан пăшăрхан. Инçе каймастăп-çке. Ĕçне хăнăхсан, каш-ни каçах килме пултаратăп.

— Çапах та... — терĕ те Ульяна темĕн шухăша кайнă пек пулса ларчĕ. Вара хуллен хушса хучĕ:

— Наум, итле-ха... Мĕн тесе тарăхса пурăнмалла пирĕн? Ма пирĕн пата куçса пырасшăн мар эс? Паян та Анахвис... кукамай, Наум пиччене ма хамăр пата йыхăрмастăн терĕ. Чăнах, пĕччен... сансăр пуçне питех тунсăх мана... Вилнĕ упăшкам каçарĕ... Эпĕ те çынах-çке...

Ульяна сĕнни Наумăн хăюлăхне те çĕклерĕ. Вара унпа юнашар пырса ларчĕ те аллине хул пуççи çине хучĕ.

— Ульяна... Эп калас сăмахах каларăн эсĕ. Тахçантанпах асапланатăп: мĕншĕн Ульянапа пĕрлешместпĕр эпир тетĕп. Хăю çитерейместĕп кăна. Ман пирки ят илтесрен хăратăп. Килĕшетĕн пулсан,

арманти ĕçе йĕркелесе таврăнатăп та ăраскалăмăрсене ĕмĕрлĕхе тĕвĕлĕпĕр...

Ульяна чĕри çамрăк чухнехи пекех савăнăçлăн тапма пуçларĕ. Сисмесĕрех пуçĕпе Наум кăкăрĕ çумне йăпшăнчĕ. Иккĕшĕн тутисем тĕл пулчĕç.

***

Кукамăшĕ тухса кайсанах Анахвис çыру вулама ларчĕ. «Хаклă тусăм, — тесе çырнă унта, — ман пурнăç хуллен пулсан та малаллах шăвать. Вĕренӳ те ăнсах пырать. Ванюкран ним сас-хура çукки кăна чĕрене çунтарать. Ах, пĕр курса пĕр калаçайрасчĕ. Ати кăмăлли, юратакан тусăм пурри кăна чуна йăпатать. Каникул вăхăтĕнче Атăлкассине пырсан тĕл пулăпăр-ха. Ун чухне пурин çинчен те калаçăпăр. Ачасене вĕрентме çăмăл мар, тусăм. Турă тӳсĕм те вăй-хăват патăр сана. Пурнăçу, ĕçӳ ăнса пытăр. Пысăк салам яратăп. Аннӳне те манран пысăк салам. Зина».

Ванюк арăмĕн çырăвĕ яланах Анахвис аса илĕвĕсене хускатнă. Халĕ те вăл, халсăрланнă пек пулса, стена çумне тайăнчĕ те куçне хупрĕ. Çав самантрах куçĕ умне пулни-иртни тухса тăчĕ. Утă çулма тухас умĕн кĕтмен çĕртен вĕсем патне палламан арçынпа çамрăк хĕр килчĕç. Малтанах Анахвис тĕлĕннĕччĕ. Хĕрĕ Ванюк арăмĕ иккенне пĕлсен тӳсеймерĕ — çенĕхри шăналăк айне тухса выртрĕ. Ванюкпа Клавье уйрăлнине пĕлсен, Микула пиччĕшĕ таврăнсан, Ванюкпа тепĕр хут туслашас шанăç пур пек туйăнатчĕ. Ĕнтĕ пуçĕпех пĕтрĕ. Ах, Ванюк, Ванюк, мĕнле ача пултăн-ши эсĕ? Пĕринчен уйрăлма ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрмен теприне тупса янă. Хĕр чĕри епле çуннине кам пĕлĕ-ши? Унтан хĕрӳ ĕçе путнипе хуйхă кăшт тамалнă пек пулнăччĕ. Вăхăт нумаях та иртмерĕ — тепĕр тĕл пулу сиксе тухрĕ.

Зина Атăлкассине каçалапа çитрĕ те лав тытасшăнччĕ. Укçи ним чухлех те юлманнипе ку шухăша сирчĕ. Каяс çĕрте темле-ха, те вырнаçайрăп, те вырнаçаймăп. Халех лавсем тытса çӳресен татăк çăкăрсăр юлăн. Энĕшкассине пĕр кун кайнă çулпах утма шутларĕ.

Хĕвел вут тивертес пек хĕртнĕрен çĕр пичĕ çуркаланнăччĕ. Çул çинче ура сыппи таран тусан. Лав-мĕн иртсе кайсан çĕкленекен тусан тӳпене хупăрлать, кунашкалнех курман Зина. Чăматанĕ те йывăрччĕ те, чăм шывах ӳкрĕ вăл. Кăшт та пулин уçăласшăн сухави тӳмине вĕçертсе ячĕ, тутăрне илсе алла тытрĕ.

Пынăçемĕн Зина çакна асăрхарĕ: тырă выракансем тӳсме çук шăрăхра та пуç çĕклемесĕр ĕçлеççĕ. Ӳснисем çеç мар, вĕсемпе пĕрле çамрăк ачисем те мĕкеçленеççĕ. Çулпа пыран ют çын çине çаврăнса та пăхмаççĕ. Вĕсен айккинелле пăхкалама вăхăт çук çав. Пулнă тырра пухса кĕме васкамалла. Пăр çапса каясран е çил-тăвăл силлесе хăварасран хăрушă.

Зина çул хĕрринчи часавай тĕлне çитрĕ. Сала ячĕ те курăнать ĕнтĕ. Вăл часавай сулхăнне пычĕ.

Хулари часавайне тирпейлесех тăраççĕ. Куна йăлтах юхăнтарса

янӑ. Турӑшсем вырнаҫтармалла шӑтӑксем пушах. Лампатка сӑнчӑрӗ кӑна ҫакӑнса тӑрать. Зина кичемленчӗ. Анчах хӑнахнӑ йӑлапа кӑкӑрӗ ҫине хӗрес хурса илчӗ те сулхӑн енчи ҫерем ҫине вырнаҫрӗ. Ӑш хыппи иртмерӗ. Ҫӑвар тӳпине, тутине нӳрлентерес шухӑшӗпе чӗлхине пӑтраткаларӗ те пӗтӗмпех тусан ҫыпҫӑннине туйрӗ. Ҫакӑнта шӑнкӑртатса юхакан ҫӑл шывӗ пулсан епле аванччӗ. Зина тавралла сӑнарӗ. Шыв тавраш ниҫта та курӑнмарӗ. Ӑш хыпнине сирме пӗр май ҫеҫ — хӑвӑртрах яла ҫитмелле.

Кӗҫех салана кӗчӗ вӑл. Хӗрринчи кил чӳречине шаккарӗ, никам та хирӗҫ чӗнмерӗ. Тепӗр килӗн чӳречине шаккарӗ, унта та ҫавах. Зина тӗлӗнчӗ: мӗнле-ха, икӗ килӗнче те никам ҫук. Урамра ача-пӑча кӑна чупса ҫӳренине курсан, ӗҫе юрӑхлисем пурте уй-хирте пулнине аса илчӗ.

— Инке, кама шыратӑн? Кам кирлӗ сана? — кӑсӑкланчӗ аслӑрах ачи.

— Никама та шырамастӑп, ачасем... — кӑмӑллӑн хуравларӗ Зина. — Ман шыв ӗҫес килет.

— Халех, инке! — чӑнкӑртатрӗ пӗр хӗр ачи. Киле кӗрсе витрепе шыв илсе тухрӗ. — Ӗҫ!

Зина кана-кана ӗҫсе чунне уҫӑлтарчӗ те хӗр ачана тав турӗ.

Хӗвел анса ларнӑ тӗле Энӗшкасси ялӗ курӑнма пуҫларӗ. Сасартӑках Зинӑна шиклӗ шухӑш пырса ҫапрӗ. «Ванюк таврӑнман пулсан? Вара ӑҫта, кам патне каймалла? Ан тив, ашшӗ ырӑ ҫын пекехчӗ те, пӗрре курнипех ун кӑмӑлне ӑҫтан чухлайӑн? Ванюк таврӑниччен хӑй патӗнче усрама килӗшсен те, эп ҫӗр ӗҫне хӑнӑхман-ҫке. Ним усӑ та кӳреймен ҫынна камӑн усрас килӗ?» Зина килтен тухса тарнипе пысӑк йӑнӑш тунӑн ӑнланчӗ те урисене тӑлласа янӑн аран улӑштаракан пулчӗ. Йӑлтах халран ӳкнипе чӑматанне ҫул хӗррине лартрӗ. Ирӗксӗрех куҫҫулӗ шӗпӗртетсе анчӗ. Аллипе пит-куҫне хупларӗ.

Шӑп ҫав вӑхӑтра Анахвис вырнӑ тыррине ҫӗмел турӗ те киле май хускалчӗ. Кун каҫиччен тырӑ вырса йӑлт ывӑнса ҫитнӗ хӑй. Яланхиллех куҫӗ умне Ванюк тухрӗ, анчах вӑл авланнине аса илчӗ те, чунӗ кӳтме хӑтланчӗ. Тем чул манма тӑрӑшсан та манайманшӑн тарӑхрӗ. Урӑх каччӑсем те пур-ҫке. Гришӑнах илер акӑ. Вырӑс каччи ӑна епле юратса пӑрахнине такам та сиснӗ ӗнтӗ. Каччи те самай чиперскер. Анахвис чӗри темшӗн никам еннелле те выртмасть. Нивушлӗ вӑл та амӑшӗ пекех пӗр каччӑпа ӗмӗрне ирттерӗ. Амӑшӗн ҫавнашкал пулма сӑлтавӗ те пулнӑ. Васли мӗн ҫӗре кӗричченех ӑна юратнӑ. Ванюк пуҫӗпех урӑх ҫын. Ҫапла шухӑшласа Анахвис чӑматан ҫинче питне-куҫне хупласа ларакан хӗр тӗлне ҫитрӗ те чарӑнчӗ. Хулара тӑхӑнса ҫӳрекен тумлине асӑрхасан, кунталли ҫын маррине тавҫӑрчӗ. Анчах мӗн пирки пит пӑшӑрханать. Ывӑннипе-ши е мӗнле те пулин хуйхӑ пусарнипе? Тен, пулӑшу кирлӗ ӑна?

— Ырӑ ҫын, мӗн пулнӑ сире?

Кӗтмен сасӑ пулнипе Зина шарт сикнӗн тӳрленсе ларчӗ. Умӗнче хул пуҫҫийӗ ҫине ҫурла хунӑ ҫын тӑнине курсан, ҫухалнӑ пек пулчӗ, хирӗҫ ним те чӗнеймерӗ.

— Ăçталла çул тытатăр? — калаçтарасшăн татах чĕнчĕ Анахвис.

— Энĕшкассинеччĕ те...

— Энĕшкассине?.. — тĕлĕнчĕ Анахвис.

— Ийя... Ыβаннипе канма лартăм... — терĕ Зина, урăх ним калама аптранă енне.

Анахвис сасартăках тавçăрса илчĕ те сисмесĕрех çилĕ тăвăлса килчĕ. Мĕнпур инкекĕ çак хĕр пирки пулнăн туйăнчĕ. Ванюкпа иккĕшĕ мăшăрланнине пĕлсен куççуль сахал тăкнă-им? Анахвис тек сăмах чĕнмесĕр пăрăнса каясшăнччĕ — ĕлкĕреймерĕ, Зина чĕнни тытса чарчĕ.

— Йăнăшатăп пулсан каçарăр та... Эпĕ сире Николай Степанович патне килсен курнă пек астăватăп, — терĕ.

Анахвисе ырă мар ĕç тунă çĕрте тытăннăн туйăнчĕ. Чăнах, мĕн пирки çиллентĕм-ха? Эпĕ Ванюка юратнине пĕлнĕ-им вăл? Пуриншĕн те Ванюк айăплă. Тата ăна темле инкек килĕнчен хăваласа кăларни паллах. Ахальлĕн çак тери салху пулмĕччĕ.

— Эсир йăнăшмастăр. Иксĕмĕр чăн та пирĕн патăрта тĕл пулнă. Эсир Ванюка шыраса пынăччĕ.

Зинăна пĕр-пĕрне пĕлсе пурăнакан тусăмĕпе тĕл пулнăнах туйăнчĕ.

— Эпĕ ун чухне сирĕнпе пĕр-ик сăмах калаçса уйрăласшăнччĕ. Эсир пăрахса кайни пăшăрхантарчĕ мана, — терĕ Зина.

Мĕншĕн тухса кайнине епле калăн-ха. Аван мар пулсан та суймах тивет.

— Пахчара васкавлă ĕç пурччĕ те кайма лекрĕ. Халь кам патне çул тытатăр?

— Ванюк патне. Вăл таврăннă-ши?

— Таврăнман.

Çак сăмах пуласса кĕтнĕ пулин те, Зина чĕри тапма чарăннăнах туйăнатчĕ. Анахвис ăна пĕтĕм чунĕнчен шеллесе пăрахрĕ. Кирек мĕн пулсан та, çул çинче макăрса ларни аван мар. Иртен-çӳрен пĕлсен Микула пиччĕшне намăса кĕртĕç.

— Зина... — ăшшăн чĕнчĕ Анахвис.

Зина аллисене пит-куçĕнчен катерчĕ. Куççульне шăлса типĕтсен пуçне çĕклерĕ.

— Эсир ман ята пĕлетĕр-и?

— Хамăр патăрта пулнă çын ятне ма пĕлмĕп-ши? Тата эпир Микула пиччесемпе пĕр килти çынсем пек пурăнатпăр. Ванюк маншăн тăван шăллămпа пĕрех. Атьăр пирĕн пата каяр. Кунта куççуль юхтарса ларни аван мар. Иртен-çӳрен тем шухăшлĕ.

— Ати килте-и?

— Вăл Атăлкассинче.

— Апла эпĕ иртсе килнĕ-çке.

— Ку темех мар. Микула пичче Шупашкара кайнă-ха. Вăл таврăниччен хамăр патăрта пурăнатăр.

Зина килĕшрĕ. Тăрса чăматанне йатрĕ.

— Ванюкран нимле хыпар та пулман-ши?

— Ҫук... — ассӑн сывласа хуравларӗ Анахвис. Самай вӑхӑт чӗмсӗрленсе пынӑ хыҫҫӑн хушса хучӗ: — Ванюкран хыпар пуличчен килтен тухмалла марччӗ пуль те...

Зина Анахвис ӑш кӑмӑллине ӗненчӗ. Ӑна, ҫул хӗрринче макӑрса лараканскере, ҫывӑх тусӑмӗ пек йышӑнса хута кӗчӗ, халь хӑйсем патне илсе каять. Ярославльре мӗн пулса иртнине ма пытарас унран? Вара вӑл ашшӗпе амӑшӗ ӑна пӑрахут хуҫи ачине качча парасшӑн пулнине пӗлтерчӗ, хӑй вӑрттӑн тухса тарнине те пытармарӗ.

Анахвис Зинӑна пушшех юратса пӑрахрӗ. Ҫӗрме пуян ҫын ачине, ашшӗ-амӑш килӗнчи лайӑх пурнӑҫа пӑрахса хӑварма хӑю ҫитернӗскер, Ванюка пӗтӗм чунӗнчен юратни паллах. Мӗн тери ырӑ та тӳрӗ хӗрарӑм... «Ванюк, Ванюк, мана ҫеҫ мар, ыттисене те тарӑхтаратӑнҫке. Ма ҫавнашкал путсӗр ҫынна тухрӑн-ши эсӗ?» Анчах йӑмша хӑтланнӑ кӑмӑлне хӑварт хытарчӗ. Юнашар утса пыракан ҫамрӑк хӗрарӑма йӑпатма кирлине аса илчӗ.

— Тӗрӗс тунӑ эсир, Зина... Хам пулсан та уяса тӑмӑттӑм. Юратуран ырри тӗнчери нимӗн те ҫук. Ванюк пирки ним те ан иккӗленӗр. Вӑл сӑмах тунине улӑштарас ҫын мар. Кӗҫех таврӑнӗ те иксӗр телейлӗ пулӑр.

— Эсир калашле пултӑрччӗ...

Вӗсем Энӗшкассине ҫитсе пус хапхинчен кӗчӗҫ. Ҫак вырӑнта митинг пыратчӗ. Зина Ванюк ашшӗне пуҫламӑш хут курсанах килӗштерсе пӑрахнӑччӗ. Каллех ҫав кил-ҫурт тӗлне ҫитрӗҫ. Анахвис Зинӑна пӳрте кӗртрӗ.

— Кукамай, кукамай! — хаваслӑн чӗнчӗ вӑл, — хӑна тупса килтӗм, йышӑн!

Ульяна хӑнана палларӗ те, чунӗ кӳтсе килчӗ. Ҫак ҫамрӑк хӗрарӑмпа ашшӗ Микула патне килсе кайнӑ хыҫҫӑн Анахвис макӑрнине сахал курман вӑл. Каярах Анахвис лӑпланни, хӑйне ним пулман пек тыткалама тӑрӑшни тӑнӑҫлантарнӑччӗ. Ванюк авланнӑ тени ахаль сӑмах кӑна пулман иккен.

Ульяна сӑмах чӗнмесӗр тӑни пӑшӑрхантарчӗ Зинӑна. Вара хӑй камне аса илтерме шутларӗ.

— Эсир мана паллаймарӑр курӑнать. Эпӗ Ванюк мӑшӑрӗ, — тесе хучӗ. — Эпир кунта аттепе килсе кайнӑччӗ.

Ульяна аванмарланса кайрӗ. Вӑл пуҫне ҫавракан ӳрӗк-сӳрӗк шухӑшсене сирсе ывӑтрӗ те кӑмӑллӑн чӗнчӗ:

— Паллатӑп, хӗрӗм... Килях, — терӗ.

Анахвис кукамӑшне ӑнланчӗ. Хӑй те малтан анкӑ-минкӗленсе кайнӑччӗ-ҫке. Кукамӑшӗн кӑмӑлне ҫӗклесшӗн сӑмах хушрӗ:

— Эпир мӗнле тӗл пулнине пӗлместӗн-ха эсӗ. Ана ҫинчен тухрӑм та килелле утатӑп. Ҫул хӗрринче пӗр ҫын лара парать. Патне ҫитрӗм те Ванюк арӑмӗ пулчӗ кайрӗ. Атӑлкассине таврӑнма Микула пичче килте ҫук. Ҫавӑнпа хамӑр пата илсе килтӗм.

— Пит аван, пит аван, хӗрӗм... Тӗпелерех ирт-ха, хӗрӗм, килти пек пул.

Зинăна тăван килĕнчи пекех туйăнчĕ. Çул çинче чĕрене ыраттарса пынă хуйхăлла шухăшсем сирĕлнĕ пек пулчĕç. Вăл чăматанне алăк патне хăварса тĕпеле иртрĕ, сак çине ларчĕ.

Апат çисен Анахвиспе Зина çенĕхри шăналăк ăшне кĕрсе выртрĕç. Ирхине Анахвиспе пĕрле Зина та тырă вырма тухрĕ. Анкарти утине çулнă чухне çурла тыткаласа курнăскер, халь те аптраса тăмарĕ. Микуласем Шупашкартан таврăнсан Зина Атăлкассине кайрĕ. Анахвиспе иккĕшĕ тăван пекех уйрăлчĕç.

Унтанпа самай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Зина Хусанта медицина институтĕнче вĕренет. Ванюкран çав-çавах хыпар çук. Анахвис куçĕ шывланчĕ. Вăл Зинăна та, хăйне те шеллерĕ. Пĕтĕм айăпа Ванюк çине тиерĕ.

***

Наумпа Ульяна хăйсем те сисмесĕрех çывăрса кайнă. Тем вăхăтран Ульяна тăлăп айĕнчи ăшăпа вăранчĕ. Юнашар çын пуррине туйса, сасартăках тăна кĕчĕ. Айтурах, çылăха кĕтĕмĕр-иç... Çынсем курса тăрассăн сунса куçне уçрĕ. Пÿлĕмре пăч тĕттĕмми кăштах лăплантарчĕ. Апла пулсан, никам та курман-ха. Тепĕр тесен, камран хăрамалла? Мĕн пуласса пĕлмесĕр выртман-çке. Ульяна йăшăлтатнипе Наум вăранчĕ. Ним сăмах чĕнмесĕр ăна ыталаса кăкăрĕ çумне чăмăртарĕ. Ульяна чĕри сар çу пек ирĕлчĕ. Арçын ытамĕ ытла та савăнтарать-çке. Анчах тăн-пуç тăрлавлă ĕçлеме тытăннă май çепĕççĕн пăшăлтатрĕ:

— Айтурах, Наум... Тăмалла пуль. Тул та çутăлать-и, тен. Кирек мĕнле пулсан та, çынсем хускалсан, тухса утма аван мар.

Наумăн питех уйрăлас килмест те, ним тума та çук. Мăшăрпа тăлăп айĕнче пылланса выртма питех аван та... уйрăлмаллах. Ульянана пăчăртаса чуп турĕ те Наум тăрса хăй çутрĕ.

— Апла армана каятăнах-и?

— Ийя, Ульяна. Ĕçе йĕркене кĕртсенех килетĕп.

— Тÿрех ман пата кĕр ĕнтĕ. Ку килте упа пек пĕччен пурăннипе çитĕ. Шăмат кун мунча хутăпăр.

— Юрĕ, Ульяна. Тÿрех сан пата пыратăп.

Хапха умĕнче тепре чуп туса уйрăлчĕç. Ульяна унталла-кунталла пăхкаларĕ те, хăш-пĕр килте хăй çути пуррине асăрхарĕ. Тухăçран кăвак çутă килни палăрчĕ. Çавăнпа уттине хăвăртлатрĕ. Чĕри вара нихçанхинчен те хавалсăрах. Утнă çĕре те утса, чупнă çĕрте чупса тенĕ пек хăйсен тĕлне çитрĕ. Хăй çути пур иккен. Анахвис ыйхăран вăраннă-ши вара? Ун куç умне мĕнле курăнмалла? Ыйтсан-тусан мĕн каламалла? Ульяна хĕр чухне ашшĕ-амăшĕнчен вăтаннă пекех хуллен те ним сасă тумасăр пÿрте кĕчĕ. Анахвис çывăрать иккен. Лампине кукамăшне кĕтсе сÿнтермен ĕнтĕ вăл. Ульяна çăмăлраххăн сывласа ячĕ. Тахçанах килнĕ пек курăнасшăн кĕнчелеççи тытса ларчĕ. Йĕке çĕре шăйлатса ÿкнипе Анахвис вăранчĕ. Куçне уçса пăхрĕ те кукамăшĕ сÿс арласа ларнине асăрхарĕ.

— Эс килсе кӗнине те туйман эп, — терӗ.

— Ытла та канлӗ ҫыврататӑн та, вӑратас темерӗм.

Кукамӑшӗн сасси темле ҫамрӑкланнӑн илтӗнчӗ, пит-куҫӗ те улшӑннӑ пек туйӑнчӗ. Ҫапах Анахвис тӗпчеме шутламарӗ, ӗнер хӑй хускатнӑ сӑмахне кӑна хушса хучӗ:

— Наум пичче пирӗн пата пурӑнма куҫас пирки мӗн каларӗ?

— Килетӗп терӗ. Анчах паян армана каять-ха вӑл.

Анахвис вырӑн ҫинчен тӑрса тирпейленчӗ.

— Выльӑх-чӗрлӗхне хам та пӑхкалӑп. Эс апатланкала та каймалли ҫӗре кай.

— Вӑхӑт пур-ха, кукамай. Тата кил хушшинче сана ӗҫлеттерсе намӑса кӗрем мар.

Анахвис васкаса кил хушшине тухрӗ. Уяр та сивӗ ҫанталӑк питекуҫа асӑрханса чӗпӗтсе илчӗ. Анахвис уҫӑ сывлӑша кӑкӑр туллин ҫӑтрӗ те хӑвӑрт аслӑк ҫине хӑпарчӗ. Уратаран ыраш улӑм антарчӗ. Ӗни-сурӑххисене витерен кӑларчӗ. Лашине урамалла ҫавӑтса тухрӗ. Хӑй витре ҫакса шыв патне утрӗ.

Ҫӑл кутӗнче ахаль чухне те хӗрарӑмсем йышлӑ та, паян ярмаркка тейӗн, шутласа кӑларайми пухӑннӑ. Сӑлтавӗ те пур ҫав. Ӗнер вулӑсри съезд пулнӑ. Унта Миххан пӗтӗм мулне туртса илмелле тунӑ хыпара каҫах илтнӗ те халь ҫавӑн ҫинчен хӗрӳллӗ сӑмах пырать. Ялти ҫурт-йӗрӗ те Энӗшкасси ирӗкӗнче ӗнтӗ. Ҫапла Микулапа Натюш тата ытти большевиксем калани те пурнӑҫланчӗ. Анчах Миххан ялти кил-ҫурчӗпе, пахчи-ҫырлипе кам усӑ курӗ-ши? Ҫӗрне, вӑрманне, Атӑлкассинчи пурлӑхне кама пайласа парӗҫ-ши?

Анахвис ҫывхарнине курсан шӑпланчӗҫ. Халь ялта Анахвис пек хисеплӗ ҫын ҫук та-и, тен. Вӑл вун сакӑр ҫулхи хӗр ача иккенне те маннӑ. Халӗ вӑл ял совет секретарӗ-ҫке. Ачасене вӗрентет. Унашкал ултӑ ҫул вӗренни ялӗпе те ҫук-ха. Ванюк пурччӗ те, вӑл таҫта ҫӳрет. Ҫавӑнпа Анахвисе учитель ӗҫне шанса панӑ. Сехмет пурнӑҫӗ пирки вулӑсри съезд мӗн йышӑннине ҫак хӗр пӗлмеллех.

— Ырӑ кун пултӑр!— кӑмӑллӑн саламларӗ Анахвис хӗрарӑмсене, ҫавӑнтах хушса хучӗ: — Мӗн халаплатпӑр?

Хӗрарӑмсен чӗлхи каллех уҫӑлчӗ. Пӗрин хыҫҫӑн тепри ыйту пачӗҫ:

— Сехмет пурлӑхне чӑн та туртса илмелле тунӑ-ши?

— Ялти кил-ҫуртне те-и?

— Выльӑх-чӗрлӗхне ӑҫта хурӗҫ ӗнтӗ?

Ҫав хушӑра тахӑшӗ йӗлпӗрсе кулни илтӗнчӗ:

— Кӗтсех тӑр, сан кил хушшине пӗрер ӗнине кӗртсе ярӗҫ!

— Ятлисем пайсӑр юласран хӑрушӑ!

Ятлӑ ҫынсене шанмасӑр калаҫни Анахвисе тарӑхтарса ячӗ. Ҫавӑнпа вӑл пӗтӗм чӗринчен ӳпкелесе илчӗ:

— Ятлисем камсем вара вӗсем? Вулӑсра Микула пиччепе Натюш аппа пур. Хамӑр яла илсен, Наум пичче пур, эпӗ те ятлӑ пеккисен шутӗнче. Апла Сехмет мулне эпир пайласа илетпӗр-и? Сире нимсӗр тӑратса хӑваратпӑр-и?

Хĕрарăмсем намăсланса кайрĕç. Микулапа ун майлă ĕçлекенсем çинчен епле усал шухăшлăн? Ак хайхи вырăнсăр сăмах персе янă хĕрарăма тапăнчĕç:

— Намăсĕ çук унăн! Çынна хăй виçипе виçет!

Лешĕ хăвăрт витрисене йăтрĕ те пăрăнса утрĕ. Анахвис ыттисене ăнлантарма тытăнчĕ:

— Тĕрĕсех, вулăсри советсен съезчĕ Сехметĕн мĕнпур пурлăхне халăх ирĕкне памалла тунă. Анчах та ку кам мĕн илсе кайма пултарассине пĕлтермест. Малтан мĕнпур пурлăхне шута илесçĕ. Вара кама мĕн кирлине сўтсе явĕç. Ялти çуртне çамрăксене парĕç. Вĕсем унта улах ларĕç, хутла вĕренĕç.

— Тем пекехчĕ, — пурин шухăшне те пĕтĕмлетнĕн хушса хучĕ пĕри.

Çапла Анахвис лашине шăварса, шыв кўрсе таврăнчĕ те апатланчĕ. Каллех килтен тухса кайрĕ. Ĕнтĕ урам хушши те чĕрĕленнĕ. Унта-кунта ушкăнăн пухăнса тăнă та хĕрўллĕн калаçаççĕ. Атăлкасси хыпарĕ пурне те хумхантарать имĕш. Анахвис никампа сăмаха хутшăнмасăр Микулан пулнă кил-çурта çитрĕ. Кунта халь шкул. Ачасем пухăнма та ĕлкĕрнĕ. Класра ларас-тăрас килменнисем кил хушшинче тĕркĕшеççĕ. Анахвис хапхаран кĕнине курсанах сăхманĕсене силлекелесе пўрте кĕпĕрленсе кĕчĕç. Сарайĕнчен Наум тухса Анахвиса саламларĕ.

— Ырă кун пултăр!

— Сана та çавнах сунатăп, Наум пичче.

— Килтисем мĕнле сывлаççĕ? — ку сăмахпа Ульяна сывлăхĕ çинчен ыйтрĕ вăл.

— Чиперех, Наум пичче. Ху мĕнле пурăнатăн?

— Хальхи саманара начар тени килĕшўсĕр пулĕччĕ. Шкул кăмакисене хутса ăшăтрăм та Гриша килессе кĕтетĕп.

Анахвис чĕри кăртлатса илчĕ. Анчах Наум умĕнче палăртасшăнах пулмарĕ.

— Халех каяс тетĕн-и вара? — тесе хучĕ.

— Каяс пулать, хĕрĕм. Платун Павăлне текех ĕнсе тирне сĕвтерес мар.

— Тĕрĕс, Наум пичче... Ĕçўсем ăнса пыччăр.

— Эс калашле пултăр!

Анахвис çенĕхелле кĕрсе кайрĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ — Гриша лавпа тĕрлеттерсе çитрĕ. Кил хушшинче Анахвиспе тĕл пулма ĕмĕтленнĕччĕ вăл — ĕлкĕреймерĕ.

— Наум пичче, кайрăмăр! — тўрех йыхăрчĕ Гриша.

Урамра, кресла çыхнă çуна çинче, икĕ хĕрлĕ гвардеец кĕтсе лараççĕ. Наумпа Гриша вырнаçсанах лав малалла хускалчĕ.

Атăла шăнтакан сивĕ пит-куçа, хăлха тăррине чĕпĕтет. Хĕрлĕ гвардеецсем çĕлĕкĕсене пусарах лартрĕç. Анчах сăран атта улăштарма çук. Пынăçемĕн сивĕ урана та ярса илчĕ. Ирĕксĕрех çуна çинчен анаана чупма тиврĕ. Урисем хĕрсен тин лараççĕ. Наум çăм атăпа аçам

тăхăннă та, ăна сивӗ аптратаймасть, чиперех тилхепе тытса пырать. Çапла вӗсем шыв арманӗ патне çитрӗç. Чулсем кӗмсӗртетсе çаврăнни инçетренех илтӗнет. Анчах ӗçе тытăниччен Гришăсем авăртма килекенсем пӳлӗмне ăшăнма кӗчӗç. Авăртма черет çитессе кӗтекенсем самаях иккен. Табак тӗтӗмӗ тӳрех Гриша карланкине питӗрсе илчӗ.

— Апайтурах! — тарăхса эхлетрӗ вăл.

Çынсем алăк еннелле çаврăнса пăхрӗç те, хӗç-пăшаллă салтаксене асăрхаса шикленнӗ пек пулчӗç.

Гриша сывлăшне аран çавăрса ячӗ те:

— Пӳртре çав териех туртмасан та юрамӗ-ши? — терӗ.

Сехӗрленнипех хирӗç чӗнекен пулмарӗ.

— Ырă кун сунатпăр! — пурин кăмăлне те çӗклес шухăшпа саламларӗ Наум.

Кунта Наума паллакансем, вăл камне пӗлекенсем те тупăнчӗç.

— Килех, Наум Васильевич! Мӗн çăмăлпа çӳретӗр?

— Армана халăх ирӗкне туртса илес тетпӗр.

— Хуçи кам пулӗ вара?

— Хамăр.

— Эпӗ те-и? — ихик кулни илтӗнчӗ.

— Эсӗ те, анчах пӗччен мар!

— Апла мана мӗн усси!

— Сана çав усă пулать!— сассине хăпартарах хуравларӗ Наум. — Эс киличчен кӗреçе çăнăхӗ тăватă кӗрпенкӗ панă. Малашне икӗ кӗрпенкӗ çеç пулать.

— Ку аван!

— Ку хамăрла! — ырланă сасăсем илтӗнчӗç.

Çапла калаçкаланă хушăра Гришăсем ăшăнса çитрӗç те, ыттисене йыхăрса, ампара кайрӗç. Унта митинг пуçланчӗ.

***

Павăл, кӳсекпе çапса амантнă йытă пек, урисене аран улăштаркаласа пӳрте кӗчӗ те тăлăпне хывмасăрах пукан çине персе анчӗ. Варуç шартах сикрӗ. Упăшки кунашкалне нихăçан та курманччӗ-çке.

— Павăл, Павăл... Мӗн пулнă сана?

— Тӗнче пӗтнӗ тесен те ытлашши мар...

— Ах, турă, ан хăрат-ха, тархасшăн. Чӗрене ан тат!

Кăштахран Павăл съездра мӗн пулса иртнине каласа пачӗ.

— Михха кӗрӳне систертӗн-и хуть?

— Çук...

— Мӗншӗн?

— Ун патне кӗме хăрарăм. Сиссен тем тăвӗç терӗм.

— Апла хамăр ача та ытлашши пулчӗ-им?

— Ытлашши-мӗнӗ... Курасчӗ сан, мӗн калаçрӗç унта делегатсем? Пӗтӗмпех Микула турӗ çакна. Миçе хут тапăнса та пуçтараймарăмăр. Çавна маларах пуçтарнă пулсан пурсăмăра та çăмăлрах пулатчӗ.

— Микулана пётерсен те инкекрен хăтăласси иккĕлле. Ытла та йышланчĕç вĕсем...

— Çав пухрĕ вĕсене! Пуриншĕн те çав айăплă!

Урам енчи чӳречерен шăнкăртаттарни илтĕнчĕ.

— Чӳречене шаккаççĕ. Çак териех каçа юлса мĕн шыраса çӳреççĕши? — пушшех канăçсăрланчĕ Баруç.

Павăла чун кĕчĕ. Мĕнле шакканинчен камне палларĕ те çăлăнăç çитнĕн туйăнчĕ.

— Тăхта, ан найкăш-ха! — терĕ арăмне, тăлăпне хывса йăрхаха çакрĕ. Урăх сăмах хушмасăр пӳртрен тухрĕ.

Кил хушшинчи сарай вырнаçтарнă пĕчĕк пӳрт патне пырса итлерĕ. Ним сас-хура та çук. Апла икĕ тарçи те ыйхăра. Çывăрмасан та хăрамалли çук.

— Кам унта? — хапха патне пырса ыйтрĕ Павăл.

— Вăрманкассем...

Ним иккĕленмелли те çук, çавă. Вăрттăн ятĕнчен ытларах сассинчен паллать ăна Павăл. Пĕчĕк хапхине уçса пăхрĕ те:

— Халех кĕртетĕп, — терĕ.

Павăл пысăк хапхине уçсан хыçлă çуна кӳлнĕ лав кил хушшине кĕчĕ, виççĕн ларнă. Лашана сарай айне кĕртсен иккĕшĕ тăварса тирпейлеме юлчĕç. Павăлпа тепĕр çынни тӳрех пӳрте кĕчĕç. Баруç пысăк лампине çутасшăнччĕ, Павăл астутарчĕ:

— Тăрпасăррине çутса кăмака умне ларт.

Баруç умне салтак çи-пуçĕ тăхăннă арçын тухса тăчĕ. Сивĕ çĕрте çӳренипе сăн-пичĕ хĕрелнĕ, чармак куçĕ çисе ярасла пăхать. Вăл хывăнмасăрах кил хуçи арăмĕ патне пычĕ те:

— Баруç инке, салам! — терĕ. Елюк Миххана качча тухнăранпа Баруçа та ятран чĕнет Ваймистров.

Баруç чĕри яланхи пекех сехĕрленсе тапрĕ. Упăшки вăрă-хурахпа туслашни питех тарăхтарать ăна, ку туслашу ырăпа вĕçленмессе ĕненет. Анчах сăмах хускатсанах упăшки хăтăрса пăрахнипе текех шарламасть. Иçмасса вăрă-хурахĕ те Елюк пăрахса кайнипе çырлахрĕ, Баруçсен килĕнчен пурпĕрех сивĕнмерĕ.

— Килях... — ассăн сывласа саламларĕ Баруç.

Павăл ăна-кăна йӳпсемерĕ, хăйне канăçсăрлантаракан ыйтăвне пачĕ:

— Çӳренĕ çĕрте мĕн хыпар пур?

— Хыпар пур çĕрте те пĕрешкел, большевиксем Совет влаçне çирĕплетме тăрăшаççĕ. Анчах кун çинчен каярах калаçăпăр-ха. Халь пирĕн кăштах апатланкаласа ăшăнасчĕ те выртса канасчĕ! — терĕ Ваймистров.

— Баруç, хатĕрле! — хушрĕ Павăл.

Сĕтел çине апат-çимĕç кăларса лартнă çĕре тепĕр иккĕшĕ те кĕчĕç.

Сĕтел хушшинчен тухнă çĕре тул çутăлса килчĕ. Вăрă-хурахсене чăлана сарса пачĕç. Павăлăн çак самантрах çынсен хушшинче пулас, вĕсем мĕн калаçнине, мĕн шутланине пĕлес килчĕ. Куна тума армана çеç çитсе килмелле.

Урамра, пусӑра, Павӑл чӗри кӑштах лӑпланнӑ пек пулчӗ. Ҫанталӑк самаях сивӗ те, тӑлӑп тӑхӑннӑскере тивеймӗ. Паян ҫанталӑкӗ питех илемлӗ вара. Пас тытнӑ йывӑҫсем шур пӗркенчӗкпе витӗннӗн курӑнаҫҫӗ. Ҫуна айӗнчи юр шӑхӑрса юлать. Арман курӑна пуҫласан, чулӗсем кӗрлесе ҫаврӑнни илтӗнсен Павӑл кӑмӑлӗ пушшех ҫӗкленчӗ. Пурте яланхи пекех. Ҫавӑнпа ӗнер мӗн илтни те тӗлӗкри пек ҫеҫ туйӑнчӗ. Арман картишӗнче никам курӑнмасть-ха. Пӳртре юмахсӑмах ҫаптараҫҫӗ пулӗ. Павӑл та ҫавӑнта кӗресшӗнччӗ, малтан арман мӗнле ӗҫленине курас кӑмӑлӗпе лавне хӑй пурӑнакан пӳрт хапхи умне пырса тӑратрӗ.

Ампар алӑкӗ урлӑ каҫсанах Павӑл усал-тӗселпе тӗл пулнӑн чарӑнса тӑчӗ. Мӗне пӗлтерекен япала ку? Ҫынсем пурте пӗр тӗле пухӑннӑ. Вӗсен хушшинче ҫӳллӗрех курӑнаканни мӗнле салтак? Чернов текенни мар-и? Мӗн тума килнӗ вӑл кунта? Мӗн калаҫать? Гриша сӑмахӗсем Павӑл хӑлхине йӗп пек пыра-пыра тӑрӑнчӗҫ.

— Юлташсем! Ӗнер Атӑлкассинче вулӑсри советсен пӗрремӗш съезчӗ пулса иртрӗ. Ҫав съезд большевиксем сӗннипе Янашовӑн мӗнпур пурлӑхне халӑх ирӗкне туртса илмелле турӗ.

— Ҫав чуххи!

— Аранах шӑпи тулчӗ! — шавласа илчӗҫ ҫынсем.

— Юлташсем, ку ҫеҫ те мар-ха, съезд хыҫҫӑн вулӗҫтӑвком пухӑнчӗ те Павел Платонович арманне те туртса илмелле тесе йышӑнчӗ.

Халӑх шавласа кайрӗ:

— Тахҫанах ҫапла тумалла пулнӑ!

— Хамӑр тире сӗвтернипе ҫитӗ!

Ҫавӑнтах хирӗҫле сасӑсем те илтӗнчӗҫ:

— Хуҫи кам пулӗ?! Пире мӗн усси?!

— Юлташсем! — терӗ шав тамалсан Гриша. — Хуҫи ӗлӗкхи пек уйрӑм ҫын мар, халӑх пулать. Паллах ӗнтӗ, вулӑсӗпе килсе ӗҫе йӗркелес ҫук. Ҫавӑнпа вулӑс ӗҫтӑвкомӗ армана тытса тӑма, ӗҫне йӗркелесе пыма Энӗшкассинчи Наум Васильевич Васильева суйласа лартрӗ. Паян эпир армантан мӗн пуррине шута илсе Наум Васильевича парса хӑвармалла килтӗмӗр.

Павӑл тем таранах минресен те тӑнне-пуҫне ҫухатмарӗ, хирӗҫме кирлине аса илчӗ. Тен, армана тӗкӗнме хӑяймӗҫ. Вӑл тӑлӑпне хывса пӑрахрӗ те Гриша умне пырса тӑчӗ. Халӑх тӗлӗнсе кайрӗ. Ҫав хушӑрах аванмарланнисем те тупӑнчӗҫ. Урӑхла мӗнле пултӑр-ха, Павӑл патне кивҫене килнӗ ҫынсем сахал-им? Ыран мӗнле пуласса кам пӗлӗ?

— Тӑвансем!— чӗтревлӗрех сассипе те кӑмӑллӑн курӑнма тӑрӑшса чӗнчӗ Павӑл. — Ман армана халӑх валли илес тетӗр-и? Мӗншӗн урӑххине мар, шӑпах катӑршнӑй тусӗн аллине паратпӑр-ха эппин? Ку ҫеҫ те мар, тӑвансем, пӗли-пӗлми ҫынсем виҫ кунтанах армана ҫӗмрӗҫ те сире нимсӗр тӑратса хӑварӗҫ. Ҫавал тӑрӑх вӑтӑр-хӗрӗх ҫухрӑма сӗтӗрӗнсе ҫӳреме тивӗ. Тунмастӑп, кӗреҫе ҫӑнӑхӗ тӑватӑ кӗрпенкӗ илнӗ эп. Ытти армансенче та ҫавӑн чухлех илеҫҫӗ-ҫке. Эпӗ ял хакӗнчен ӳстерсе илмен. Революци пулнине те хирӗҫ мар эп,

çавăнпа кĕреçĕ çăнăхне пĕр кĕрпенкĕ чакаратăп, виçĕ кĕрпенкĕпех çырлахăп! Мĕнле, килĕшетĕр-и?!

— Килĕшетпĕр!— янăраса кайрĕ мелник сасси. Павăлăнне пайтах çăнăх вăрланă вăл. Укçалла авăртсан та укçине хăй кĕсйине чикнĕ. Арман Наум аллине лексен пĕр ывăç та илеймĕн. Луччĕ халăха çавăрса Павăл ирĕкĕнчех хăварас. — Павел Платонович тĕрĕсех каларĕ, армана тыткалама пĕлмелле. Унсăрăн ыранах ванса ларĕ. Эпĕ кунта вунă çул ĕçлетĕп. Манран лайăх пĕлекен никам çук теме те вăтанмастăп. Анчах арман тепĕр çын аллине куçас пулсан, паянах пăрахса каятăп. Тата çакна ан манăр, хуçа кĕреçе çăнăхне пĕр кĕрпенкĕ чакарма сăмах пачĕ.

Павăл сăмаха ăçталла илсе пыма шутланине Наум Гришăран маларах сисрĕ. Ун майлă пулас шутлисем пурри те палăрчĕ. Çавсем сасă пама ĕлкĕриччен:

— Юлташсем! — терĕ çавăнтах Наум. — Хуçа кĕреçе çăнăхне пĕр кĕрпенкĕ чакарассипе каярах юлчĕ. Вулĕçтăвком икĕ кĕрпенкĕ чакарас тесе йышăннă!

— Ку вăл хамăрла!

— Долой Платун Павăлне!

Çапла кăшкăрса Павăл майлă пулас текенсене путарса лартрĕç.

Мелник сăмахĕсем Наум асĕнчен каймарĕç. Вăл арман хуçине пĕчĕккĕн çыртма хăнăхнине Павăл хăй те сиснĕ-ха. Анчах арман ĕçне ăста пĕлнипе ăна вырăнтан хăвалама тытăнса тăнă. Халь пăрахса каяс пулсан та армана хупса лартма лекĕ. Апла мелнике мĕнле те пулин май тупса ĕçлеттермелле.

— Мелник кунта Платун Павăлĕ майлă калаçрĕ. Армана халăх ирĕкне илсен тухса каяссипе хăратрĕ, — терĕ пĕр хăюллă хĕрарăм. — Ăçталла каясшăн-ши вăл? Пуянсемпе-ши? Арманта ĕçлесе çав терисех пуйрăн-ши вара? Пуянсемпе-ши? Ку ытла та илемсĕр-çке. Шалу пирки тесен ан хăра, хуçа тӳленине эпир те тӳлĕпĕр. Армана чарма ан шутла. Кирек мĕнле пулсан та тепĕр мелник тупиччен ĕçлетĕн. Хирĕçех каяс шухăшу пулсан кайран хăвна ху ӳпкеле. Халь куç хупмалла выляс самана мар.

Ыттисем те мелнике Павăл хутне кĕнĕшĕн намăслантарчĕç. Павăл пурлăхне çаратнă пирки те тĕксе илчĕç. Анчах пурте пĕр кăмăллă пулса Наума арманта ĕçлеме сĕнчĕç.

— Мана мĕн... мана Платун Павăлĕпе пĕр хуранта ят хуман... — терĕ лăпкăн Наум.

— Паçăрах çапла каламаллаччĕ!

— Сехмет хăраххи пуç хĕрлĕ чикелентĕр! — терĕç темиçен, Наум кăмăлне хапăлласа.

Павăлăн юлашки шанăçĕ çухалчĕ. Вăл ухмаха ернĕн куçне-пуçне чарса пăрахрĕ. Сурчăкне сирпĕтсе кăшкăрашрĕ:

— Вăрă-хурахсем эсир! Турă паманнине туртса илеймĕр! Тухса кайăр ман армантан!

— Мĕн калаçать çав?

— Пире вӑрӑ-хурах тесшӗн курӑнать.

— Шаккамалла ӑна!

— Арман пӗвине чӑмтармалла!

Халӑх юнавлӑн шавласа пынине Гриша чарма ӗлкӗрчӗ:

— Юлташсем, майӗ пултӑр! Ан тив, кӑшкӑраштӑр. Уншӑн пире сивӗ те, ӑшӑ та тивес ҫук. Вӑл пире кирлӗ ҫын-ха. Хӑй килмен пулсан чӗнтерме лекетчӗ. Унӑн кунти пурлӑхне шута илсе ал пустарас пулать. Кайран мана ҫаратрӗҫ тесе элек сарса ан ҫӳретӗр. Килӗшетӗр-и?

— Килӗшетпӗр!— шавларӗ халӑх.

Ҫакӑнпа митинг вӗҫленчӗ. Мелникрен уҫҫа илсе ҫӑнӑх ампарне уҫрӗҫ. Михӗсенчи ҫӑнӑха йӑта-йӑта тараса ҫине хучӗҫ. Павӑл урай ҫумне пӑталанӑ пек хускалмасӑр тӑчӗ. Пусӗнче кӑна усал шухӑшсем ҫӑхан пек явӑнчӗҫ. Кун пек пуласса пӗлнӗ пулсан, арманне ҫӑнӑхӗмӗнӗпех ҫунтарса ярӗччӗ. Халь мӗнле тавӑрмалла?

Ҫӑнӑх пин пӑта яхӑн иккен. Акт ҫырса Павӑла та алӑ пустарчӗҫ. Урӑх тытса чармарӗҫ ӑна.

Ҫӗрӗпе ӗҫсе супнипе Ваймистровсем кӑнтӑрлаччен ҫывӑрчӗҫ. Вӑрансан, Павӑл таврӑнасса кӗтмелле, татах тӑрларӗҫ. Варуҫ ӑнланмалла мар чӗлхепе ун-кун ҫинчен каласрӗҫ.

Кӗтмен ҫӗртен Елюк килсе кӗчӗ. Вӑл ҫак самантрах уласа йӗрсе ярӗччӗ. Амӑшӗ пӗрре пӑхсах хӗрне тем пулнине асӑрхарӗ те ыттисене асӑрхаттарасшӑн мар пулчӗ.

— Ай тур, Елюк... Ма ют ҫын пек алӑк патӗнчех тӑратӑн? — терӗ кӑна.

Елюк хускалма та аптранипе Ваймистров вӗриленсе кайрӗ. Вӑл кунта килсе лекнишӗн тарӑхнӑн шутларӗ. Куҫӗ умне сасартӑк мунчара тӗл пулни тухса тӑчӗ. Ҫава ҫинче такам персе амантсан, Ваймистров Павӑл патне сӗтӗрӗнсе ҫитрӗ. Лешӗ мунчана пытарчӗ. Ваймистров йыхӑрнипе Елюк пырса кӗчӗ. «Мӗн тесеччӗ-ши вӑл ун чухне? Ҫапла... Елюк саншӑн тахҫанах вилнӗ. Хыҫран ҫӳресе ан чӑрман. Текех сан май пулас ҫук». Ҫаплах каларӗ ҫав. Тепӗр куннех вара Миххана качча тухрӗ. Ҫакна илтсен Ваймистров хӑйне тем тума патне ҫитнӗччӗ. Хӑравҫӑлӑхӗ чарчӗ. Павӑл сываличчченех пытарса усранипе ҫырлахрӗ. Халь ҫавсене аса илнӗ май сӗтел хушшине ларнӑ ҫӗртенех сӑмах хушрӗ:

— Эп кунтипе кӑмӑлсӑрлантӑн пуль? Ан хӑра, ҫисе ямастӑп. Халь эпӗ сан пата мар, аҫу патне килнӗ.

Елюк тӳсӗмӗ татӑлчӗ. Сасӑпах ӗсеклеме тытӑнчӗ те пукан ҫине персе анчӗ. Варуҫ ун патне чупса пычӗ.

— Хӗрӗм... Мӗн пулчӗ сана? Мӗн пирки ҫав териех хыпӑнатӑн?

— Пӗтӗмпех пӗтрӗ... — пусӑрӑннӑ сассине кӑларчӗ Елюк.

— Мӗн аташатӑн, хӗрӗм? Мӗн пӗтнӗ?

— Пурте пӗтнӗ... Пӗтӗм пурлӑха туртса илеҫҫӗ. Миххана тытса хупнӑ. Ма ҫав териех телейсӗр-ши эпӗ? Ма ҫуратсанах Атӑла кайса пӑрахман-ши мана?

— Эй, Турă... — сăхсăхса илчĕ те Варуç хĕрĕнчен пĕр утăм чакса тăчĕ. — Кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмран çылăхли никам та пулас çук тесе ахаль каламан иккен... Тем курăн, тем илтĕн... Эй, Микула ухатник... Ман хĕр ăшĕнчи усалсене хăваласа кăларсамах...

Ваймистров Елюка шеллесе пăрахрĕ. Сĕтел хушшинчен тухса ун патне пычĕ.

— Елюк, лăплан, — çемçен чĕнчĕ вăл, — аплах кулянма тĕнче пĕтсе килмен пуль вĕт. Янашова тĕп тунăшăн пурнăç пĕтмĕ. Хуйхăрса хăвна ху пĕтерни çеç. Эсĕ çамрăк-ха. Сан пурăнмалла. Килĕшӳллĕ çын тупмалла та çĕнĕ пурнăç тума тытăнмалла, — Ваймистров хăйне пăрахса Миххана качча тухнăшăн ӳпкелесшĕнччĕ, кăмăлне пушшех пăсма пултарасран шарламарĕ. Унсăрăн та Ваймистров сăмахĕсем Елюка вĕчĕрхентерчĕç. Вăл пуçне çĕклерĕ те ăна тин çеç курнăн кăшкăрса хуравларĕ:

— Ха, эсĕ те кунтах иккен? Эп сана тахçанах пĕтнĕ пулĕ тесеччĕ!

Ку Ваймистровшăн ытлашшипех пулчĕ. Пĕтĕм çилли тăвănса килнипе хаяррăн каласа тăкрĕ:

— Мана пытарма ан васка-ха. Сан тăпруна таптама та ĕлкĕрĕп. Тата çакна маннă эсĕ: мана ыр сунманнипе пурнăçу улшăнас çук!

Хĕрĕпе кĕрӳшĕ ятлаçса кайни ырă енне маррине пĕлет Варуç. Тем каласа мирлештермеллине кăна чухлаймасть. Чĕлхи çине тивĕç сăмах килменнипе аптрарĕ. Çав вăхăтра Павăл кĕрлеттерсе çитрĕ. Улитин мĕн каланисем чăн пулассине ĕненнипе чĕри самаях лăпланнă унăн. Епле лăпланмĕ-ха, нимĕçпе совет хушшинче мирлĕ килĕшӳ çук, çавăнпа нимĕççем ыран-паян тапăнĕç те советсене тĕп тăвĕç, ĕлĕкхи самана туса хурĕç. Тата Микуласене пĕтермелли майсем те пур. Ваймистровсем çитни калама çук вăхăтлă.

Павăл лашине сарайне кĕртсенех икĕ тарçи тухрĕç, лашине тăварасшăн пулчĕç.

— Атьăр-ха пӳрте, — терĕ вĕсене Павăл, — ман сирĕнпе сăмах пур. Вĕсем пĕчĕк пӳрте кĕчĕç. Вĕсене ăçта кайса мĕн тумаллине тем хушса ăнлантарсан Павăл телей сунса тухрĕ.

Анчах пӳртĕнче хĕрĕ макăрса выртнине курсан çатракалансарах ыйтрĕ:

— Мĕн пулнă?! Ма сĕрлетĕн?!

Ашшĕ сассине илтсен Елюк пуçне çĕклерĕ те куççулĕ витĕрех хуравларĕ:

— Сĕрлеме мар, чĕре те çурăлĕ. Миххана тытса хупнă. Пире тĕп турĕç.

Ашшĕ хута кĕрес вырăнне тăвăлланса кайрĕ. Ваймистров хураха качча панăшăн хĕрĕ ăна тем таранах тарăхтарнă. Анчах Миххана вара Елюк хăй ирĕкĕпе качча тухрĕ. Кăштах кĕтме хушнине те пăхмарĕ. Çавăнпа Павăл сӳрĕккĕн тавăрса хучĕ:

— Инкеке ху шырарăн. Эпир сана ирĕксĕрлемен.

Елюк сасартăках макăрма чарăнчĕ те тилĕрнĕ куçне ашшĕ çине тĕллерĕ:

— Эсир ирӗксӗрлемен эппин? Михха сана пуйтарнӑ чухне аванччӗҫке! Кӗрӳ те кӗрӳ тесе кӑна тӑраттӑн!

— Ун укҫи ман пыра та ларӗ-ха. Ав, армана ҫӑнӑхӗ-мӗнӗпе туртса илчӗҫ.

— Айтурах, мӗн курӑпӑр-ши?

— Ан нӑйкӑш! Ӑслӑ ҫынсем каланипе большевиксем нумаях тытӑнса тӑраяс ҫук. Михха кӗрӳне те хӑтармалла. Эсир тухкаласа ҫӳрӗрха, эпир Кузьма Иванчсемпе кӑштах сӳтсе явар! — терӗ Павӑл арӑмӗпе хӗрне.

***

Павӑл кайсан Гриша та ытлашши тӑмарӗ арманта, ҫула тухрӗ. Наумпа икӗ салтак Павӑлӑн пысӑк пӳртне кӗрсе вырнаҫрӗҫ.

Хӗвел ларнӑ май ҫанталӑк пушшех сивӗтрӗ. Гриша ытларах ҫуна хыҫҫӑн чупса пычӗ. Шухӑшӗ вара Анахвис ҫинчен сирӗле пӗлмерӗ. Ӑна пуҫламӑш хут курсанах каччӑ чӗрине вут пуҫҫи кӗрсе ӳкрӗ те пурӑна киле ялкӑшсах ҫунакан пулчӗ. Кольӑпа Анахвис шӑллӗпе пиччӗшӗ евӗр туслӑ пулнӑран Гриша вӗсем патне час-часах ҫӳрекелерӗ. Вӗсем ӑна яланах тараватлӑ йышӑнчӗҫ. Анчах Анахвис мӗн шухӑшланине кӑна ӑнланса илеймерӗ. Сӑмах хускатсан калаҫать вӑл. Тепӗр чух тӗл пулушӑн хавасланнӑн та курӑнать. Анчах ахаль юлташлӑхран пӗр утӑм та иртесшӗн мар. Гриша хӑй чӗринче мӗн пуррине пӗлтерме хӑтлансан Анахвис шӳтлесе ирттерет е сӑмаха урӑх еннелле пӑрма тӑрӑшать. Пурӑна киле, Коля каласа панӑ тӑрӑх, Анахвис Николай Степанович ывӑлне юратнине, лешӗ Сехмет хӗрӗпе ҫыхланнӑран таҫта кайса ҫухалнине тата авланнине пӗлнӗ, арӑмне те курнӑ. Ытарма ҫук илемлӗскер, халь Хусанта вӗрентет.

Ҫакна шухӑшласан Анахвисӗн пушшех те Гришӑна кӑмӑлламалла пек. Вӑл ҫав-ҫавах хӑйне лӑпкӑн та Гриша ҫуннине сисмен пек тыткалать. Энӗшкассине ҫитерехпе Анахвиссем патне кӗрсе тухас шухӑш та пуҫа пырса ҫапрӗ. Сӑлтавӗ те пур, ӑшӑнма кӗнӗ тенине ӗненмелле.

Гриша лашине хапха умне чарса тӑратрӗ. Пӳртре Ульяна пӗчченех ал ӗҫ туса ларнине асӑрхасан, кӑшт йӗнчесе тӑчӗ. Ульяна алӑк сасси пулнипе пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ те Гришӑна палларӗ. Ӑна вӑл Коля пекех килӗштернӗ. Гриша Анахвисе юратнине те сиснӗ. Хӑйӗнчен ҫеҫ килес пулсан «ан тирке ачана» тесе канаш та парӗччӗ. Мӑнукӗ пӑхасшӑн маррипе шарламан, мӗн сӑлтавне те чухлать. «Ах ҫав Ванюк» тесе ассӑн сывлать вара.

— Килях, Гриша ыльям!

Гриша аранах тӑна кӗнӗ пек пулчӗ.

— Салам, Ульяна аппа! — шӑннӑ аттипе шаклаттарса пырса ал тытрӗ. — Мӗнле пурӑнатӑр?

— Хуллен пурӑнкалатпӑр та... Атӑлкассинчен усал хыпар ҫитнӗҫке.

— Мӗнле хыпар тата?

— Пирӗн Кольӑна амантнӑ...

— Амантнă?

— Ийя, пульницара вырТать.

— Кам амантнă?

— Сехмет терĕç. Эс илтмен-и вара?

— Çук, Ульяна аппа. Эп Атăлкассинчен ирех тухнă та, ун чухне Коля чиперехчĕ.

— Апла эсĕ кайсан сиксе тухнă ĕнтĕ инкекĕ. Анахвис паçăрах кайрĕ. Çав таврăнсан тĕплĕрех пĕлтерĕ-ха.

Тепĕр чухне пулсан хĕрĕ килте çуккишĕн эрленнĕччĕ Гриша. Халь юлташĕн ăраскалĕшĕн ĕштеленсе ÿкрĕ. Анчах хăйне тăнăçлăн тытма тăрăшса:

— Ульяна аппа, ытлашши ан хуйхăрăр. Ытлашшиех тивертеймен пулĕ-ха. Эп халех çитетĕп унта, — терĕ.

— Кăштах ларса ăшăнмаллаччĕ.

— Эп шăнман, Ульяна аппа.

Гриша хăвăрт тухса çуна çине ларчĕ. Ăш-чикĕ вăрканипе сиввине те туймарĕ. Лашине кăна хăваларĕ. Тем вăхăтран Атăлкассине çитрĕ те тÿрех пульница умне чарăнчĕ. Çенĕк алăкне питĕрнĕ иккен. Тÿнлеттерме тытăнчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ — санитарка алăка уçрĕ.

— Мĕн шаккаса çÿретĕр? — терĕ сиввĕн.

— Хаклă кинеми, ытлашши ан ятлаçăр-ха... Ман юлташ кунта выртать терĕç... Курасчĕ ăна.

— Кăнтăрла килмеллеччĕ!

— Эпĕ çулта пулнă. Çавăнпа килеймерĕм. Кĕртĕр-ха, тархасшăн!

Санитарка тата темĕн мăкăртаткаларĕ те чармарĕ. Гриша алăкран кĕчĕ, кам ăçта выртнине ăнланса илеймен пирки алăк патĕнчех чарăнса тăчĕ.

Коля ăна хăех палласа илчĕ те хавасланса кайрĕ. Унăн чи çывăх юлташĕ килнĕ-çке.

— Гриша, кунта эпĕ!

— Чумари юлташ! — терĕ те Гриша Коля патне васкаса пычĕ. — Сурану йывăр мар-и?

— Кăшт ачашланса выртмалăх кăна!

— Кам амантрĕ?

— Сехмет. Пĕлетĕр-и, вăл Николай Степановича вĕлерме тапăннă. Ав! — Клавье еннелле ал сулчĕ йĕкĕт, — çав хĕр пулман пулсан Микула пичче çукчĕ ĕнтĕ. Çав хĕр хушша кĕме ĕлкĕрнипе Микула пичче çăлăнса юлнă. Халь хăй выртать ав.

Гриша тек ыйтса-тĕпчесе тăмасăрах тепĕр еннелле çаврăнчĕ те сăн-пичĕ шуралса кайнă хĕре курчĕ. Канлĕхе хумхатасран хăранăн хуллен утса пычĕ.

— Хĕрĕм... — чĕререн тухакан ăшă кăмăлĕпе чĕнчĕ вăл. — Николай Степановича вилĕмрен çăлнăшăн тавтапуç! — кăшт пуçне пĕксе илчĕ. — Эсир ырă тунине эпир нихçан та манмăпăр. Хăвăртрах сывалăр та хальхи пархатарлă пурнăçа хутшăнăр!

Клавье Анахвиспе тӗл пулнишӗн питех хумханса выртатчӗ. Урӑхла мӗнле пултӑр-ха? Ванюка пухуран хӑйпе пӗрле ертсе кайман пулсан Анахвис качча тухӗччӗ те такамран телейлӗ пулӗччӗ. Ҫавӑншӑн ӳпкелессе кӗтмеллеччӗ. Апла пулмарӗ. Анахвис ӑна Николай Степановича вилӗмрен хӑтарнӑшӑн тав туса чуп турӗ. Мӗн тери ырӑ кӑмӑллӑ та ашшӗне хисеплекен ҫынсем иккен.

— Тавтапуҫ... — терӗ вӑл хуллен куҫҫулӗ витӗр.

Гриша Анахвисе пульницара тӗл пулас пек суннӑччӗ. Ӗлкӗреймерӗ иккен. Пӳлӗмре ют хӗр выртнипе Анахвис ӑҫта кайни ҫинчен ыйтса пӗлме те аван мар пулчӗ. Тен, Николай Степановичсем патӗнче вӑл, аппӑшне курмасӑр каймалла мар-ҫке. Анчах унта кӗрсе пӑхма хӑймарӗ. Урама тухсан Гриша арманти ӗҫсем мӗнле пулса пыни ҫинчен Микулана каласа парас шутпа кантуралла утрӗ. Хальлӗхе ӗҫсем унта йӗркеллехчӗ-ха.

Вӑл пырса кӗнӗ ҫӗре Микула кабинетӗнче Натюшпа Трифун, Петров тата вулӑсӗҫтӑвком членӗсем хӗрӳллӗн калаҫса ларатчӗҫ. Ҫавӑнпа Гриша пырса кӗнине тӳрех асӑрхаймарӗҫ те. Хӑй те юлташӗсен калаҫӑвне татасшӑн мар алӑк кутӗнчех чарӑнса тӑчӗ. Сехмет пурлӑхне шута илнӗ ҫӗрте мӗн-мӗн пулни ҫинчен хыпарлать иккен вӗсене Трифун.

— ...Анчах ылтӑн ӑҫтине нимпе те каламарӗ. Шыраса та тупаймарӑмӑр!

— Тӗпчекелесе пӗлер-ха, тупатпӑрах ылтӑнне те... — терӗ Микула. Ҫавӑнтах Гриша кӗнине асӑрхарӗ те хушса хучӗ: — Ма алӑк патӗнчех тӑратӑн эс? Иртсе лар та каласа пар: мӗнле унта?

— Хальлӗхе пурте йӗркеллех, Николай Степанович... — терӗ Гриша, арманти лару-тӑру ҫинчен кӗскен каласа пачӗ. — Ҫӑнӑх пин пӑта яхӑн!

— Ку аван-ха. Ӑҫталла ямаллине каярах сӳтсе явӑпӑр. Юлташсемпе канашлӑпӑр...

...Ҫумра вӗрилентерсе выртакан ӳт самантрах сивӗннӗн туйӑнчӗ Микулана, Натюш кӗвӗҫме хӑтланни ӑна Клавье пирки тӗрлӗ шухӑша ячӗ. Хӗрарӑм темерӗн, паян та сӗтӗрет иккен. Кун пек пуласса пӗлнӗ пулсан, малтанах тӗпӗ-йӗрӗпе каласа памаллаччӗ те вӗт...

— Ҫапла, ман ҫитӗннӗ хӗр пур, — терӗ ирех Микула, ӗнерхине аса илтерсе. — Мӗнле майпа пулнине пӗлетӗн. Хальхи ӑспа пулсан апла хӑтланмӑттӑм. Юратакан хӗре хур кӳнине тӳсеймерӗм мар-и... Тавӑрни ав ӑҫта илсе ҫитерчӗ. Ҫапах хама хам ӳпкелеместӗп. Ӗнер вӑл манӑн арӑм ҫуратса панинчен те хаклӑ пулчӗ. Тӑван ашшӗ-амӑшӗнчен ҫуралаканни те ҫын вилӗмне хӑй ҫине илекен сайра пулӗ. Шанатӑп, ӑсӗ те пур унӑн, чунӗ те таса. Ҫавӑнпа санӑн та ун пирки купаланнӑ сӳтӗк шухӑша сирмелле.

Натюш аванмарланчӗ. Чӑнах, мӗн тесе тапратрӗ-ха вӑл ҫав сӑмаха? Мӗншӗн пӑсрӗ упӑшкин кӑмӑлне?

— Эп ним чухлӗ те хурламастӑп ӑна, — терӗ вара йӑвашланнӑ сасӑпа Натюш. — Ҫынсем кӑна пӗли-пӗлми шухӑшлама пултараҫҫӗ.

— Куна тӗрӗс каларӑн, Натюш. Паянах тус-юлташусене, хӗрлӗ гвардеецсене пухас. Лару-тӑру мӗнлине ним пытармасӑрах каласа парӑп, Клавье пирки именмелли ҫук.

Ҫапла калаҫса татӑлнӑ хыҫҫӑн Микула ирех тӑрса тумланчӗ те икӗ хут татӑкӗ ҫине икӗ ҫӗр улми пӳремечӗ чӗркесе чикрӗ, ҫула тухрӗ.

Урам тӑрӑх пынӑ ҫӗрте ӑна каллех Натюшпа иккӗшӗ калаҫнӑ шухӑшсемех канӑҫсӑрлантарчӗҫ. Иҫмасса, ывӑлӗнчен те пулин сас-хура ҫук. Нивушлӗ усал ҫынсен аллине лексе пӗтрӗ? Апла мар тӑк кам патне те пулин ҫырмаллах-ҫке...

Кӗҫех пульница курӑна пуҫларӗ. Микула тата васкарах утрӗ.

Ҫамрӑксем пӗр-пӗрне ытла та хӑвӑрт иленчӗҫ. Каҫхине мӗн-мӗн ҫинчен калаҫмарӗҫ-ши вӗсем, ӑҫта кӑна ҫитсе перӗнмерӗҫ-ши?

Клавье Хусана вӗренме кайиччен килтех пурӑннӑ, тарҫисемпе кашни кунах тӗл пулнӑ та, вӗсем мӗнле пурӑннине ним чухлӗ те пӗлмен иккен. Пурнӑҫӗ вара вӗсен Михха выльӑхӗсенчен те начартарах пулнӑ. Йывӑр ӗҫпе те вӗсем хытса ларман, вӑй-хӑватлӑ пулнӑ. Хайпе пӗр пӳлӗмре выртакан ҫамрӑках илер акӑ, епле маттур вӑл. Вун ултӑ ҫулта ҫеҫ пулин те, Коля Михха ӗҫӗнче пилӗк авма та ӗлкӗрнӗ. Ним хӑрамасӑр хуҫине тапаннӑ, тарса ӳкме паман. Вӑл хӗрлӗ гвардеец. Пурнӑҫ тӗллевӗ яр уҫӑ унӑн. Амӑшӗпе кукашшӗ те патша асапне тӳссе пурӑнасшӑн пулман вӗсен. Амӑшӗпе пӗр тӑван аппӑшӗ каторгӑра вунӑ ҫул асапланнӑ. Унтан таврӑнсан Вӑхӑтлӑх правительство йыттисен серепине лекнӗ. Юрать-ха, Ванюкпа юлташӗсем ҫӑлса хӑварнӑ. Ах Ванюк... Ӑҫта ҫӳретӗн-ши паян кун?..

Пуянсем саркаланса пурӑннине Коля пӗлнӗ. Сехмет ялан вӗсен куҫ умӗнче пулнӑ. Клавье каласа панипе вӗсен ирсӗрлӗхӗ тата уҫҫӑнрах курӑнчӗ. Мӑнастирте игуменйӑпа манашкӑсем мӗнле пурӑнни ҫинчен каласа панине илтсен Коля кӑмӑлӗ пӑтранчӗ. Ҫавӑнта асап тӳсме лекнӗшӗн Клавьене шеллерӗ.

Тем вӑхӑтра ҫывӑрса кайнӑ вӗсем, вӑранасса та иккӗшӗ пӗр вӑхӑтрах вӑранчӗҫ. Клавье куҫне уҫса Коля еннелле пӑхрӗ те:

— Чумари юлташ, сывӑ-и? — терӗ.

— Суха тимӗрӗ пекех! Хӑвӑр мӗнле, мӗнле тӗлӗк куртӑр?

— Сывлӑх ӗнерхинчен лайӑхрах... Ыратнипе час ҫывӑраймарӑм кӑна.

Шӑп ҫав вӑхӑтра Микула килсе кӗчӗ.

— Сывӑ-и, ачасем? — икӗ ҫамрӑка та харӑс саламларӗ вӑл.

— Сиккипех, тезка!

Натюш аппӑшӗ Микулана качча тухнӑ май Кольӑн ӑна йысна тесе чӗнмелле ӗнтӗ, анчах ниепле те хӑнӑхаймасть-ха.

— Сывах-ха, — хаваслӑн хуравларӗ Клавье. Паян никамах та килессӗн туйӑнмастчӗ-ха. Ашшӗ персе те ҫитрӗ ав.

— Сурану мӗнле? — ҫывӑха пычӗ Микула. — Ҫӑмӑлрах пек-и?

— Самай ҫӑмӑлрах...

— Пит аван. Сирĕн пата çĕр улми пӳремечи илсе килтĕм. Чейпе сыпкаласа ирхи апат тăвăр-ха.

Кольăпа Клавьене çуршар пӳремеч тыттарчĕ.

— Ну, ан тунсăхлăр. Сывалма тăрăшăр! Эпĕ кантура каятăп-ха, — терĕ те Микула каçалапа килме сăмах парса тухса кайрĕ.

Урама тухсанах Микула шухăшĕ вулăсри лару-тăру çине куçрĕ. Влаçа совет ирĕкне илсен ĕç çăмăлланмалла пекчĕ. Пушшех йывăрланчĕ. Пурнăç кăткăс япала иккен вăл. Виçĕ çул ытла тăсăлнă вăрçă Раççей хуçалăхне йăлтах начарлатса хăварчĕ. Вулăсра тыр-пулсăр юлнă чухăнсем те сахал мар. Атăлкассинче пин çын ытла беженецсем пурăнаççĕ. Вĕсене тăрантмалла. Килĕсене ăсатма та май çук. Çĕршывĕсем нимĕççен аллинче. Тыр-пул тенĕрен, Платун Павăлĕн арманĕнче пин пăт ытла тупнă-ха. Ку пĕр саплăк. Михха ампарĕсем те тырăпа çурăлас пек лараççĕ. Вулăса темиçе çул тăрантмалăх та çитĕ-ха вăл. Анчах тырăсăррисем вулăсри чухăнсем çеç мар-çке. Питĕрти рабочисем те выçă. Вĕсем валли паянах тырă ăсатма тытăнмалла. Хăш ялтан миçе лав кирлине пĕлтермелле.

Микула хăй кабинетне кĕрсе вырнаçма ĕлкĕрейнĕччĕ — кив аçам тăхăннă пăшаллă çын кĕчĕ тăчĕ. Пăрланнă мăйăхне шăла-шăла сăмах хушрĕ:

— Ĕнтĕ хуçи эсĕ пулатăн-и-ха?

— Мĕнле хуçа пирки калаçатăр эсир, мучи? Ăçтисем, кам эсир?

— Эпĕ хуралçă.

— Ăçта мĕн хураллатăр?

— Эпĕ Атăл леш çыранне кăларса купаланă Михал Петрович йывăçне хураллатăп.

— Вара мĕн?

— Вара-и?.. Эпĕ хуçана евитлеме килнĕччĕ. Анчах хуçи халь Михал Петрович мар терĕç. Хуçи кантурта ларать терĕç. Ăнсăртран эс пулмарăн-и эппин хуçи?..

— Мучи, эсир аташатăр. Янашовăн пурлăхне, чăн та, туртса илнĕ. Анчах хуçи эпĕ мар, хуçи — халăх. Çав шутра эсир те.

— Эпĕ те хуçа-и? — мучи çăварне карса пăрахрĕ. — Йоккер-маккер. Хама эпĕ тарçă кăна тесе шутланă. Хуçи хамне пачах пĕлмен.

— Мучи, нивушлĕ совет влаçĕ пулнине пĕлместĕр эсир?

— Мĕн влаçĕ кирлĕ мана! — сасартăк кулма чарăнчĕ мучи. — Мана кантура кĕрсе евитлеме хушрĕç те, çавăнпа кăна кĕтĕм.

— Юрĕ, мучи... Ав! — пукан çине кăтартрĕ Микула. — Çавăнта ларăр та йĕркипе каласа кăтартăр-ха... Кам эсир, мĕн пирки евитлеме килнĕ?

— Мĕнех вара, ларма та пулать... Атăл хĕрринчен утса килсе ывăннă пек пултăм... Евитлемелли ман çакă: эпĕ Янаш Миххи патĕнче çирĕм çул ĕçлерĕм. Халь Атăл леш енне кăларса тăкнă йывăçа сыхлатăп. Анчах каçхине курнă пеккине нихçан та курман.

— Мĕн пулчĕ унашкалах?

— Çĕр пӳртре чиперех çăпата туса ларатăм. Тулта темĕн

кăшкăрашни илтĕнчĕ. Алăка уçса пăхрăм та, çирĕм лав та пулĕ тĕрлеттерсе çитрĕç те пĕренесене тиеме тытăнчĕç. Эпĕ кăшкăра-кăшкăра хăвалама пикентĕм. Унччен те пулмарĕ — мана çулса илчĕç те чышкăпа та тапкăçпа ислетме пуçларĕç. Çĕр пӳртелле чикелентерсе кĕртсе ячĕç, тул енчен питĕрсе хăварчĕç. Шăн-шан сирĕлсен тин пуртăпа алăка çĕмĕрсе тухрăм. Вăт çавнашкал... Патак çие-çиех хурал тăрас мар. Эсĕ хуçи пулсан урăххине тупса ларт!

— Урăххине тупса лартас пирки сӳтсе явăпăр-ха, мучи. Малтан калаймăн-и, камсем ашкăнчĕç?

— Çĕрле ăçта палласа çитерĕн вĕсене?!. Пĕр лаши Тĕмшерти Кашкăр Мирунĕн пек туйăнчĕ.

— Хăвăр хăш ялсем-ха?

— Анат Тăршывсем эп. Естахви. Атте Ехрим пулнă.

— Естафи Ефремăч эппин?

— Çапла килсе тухать.

— Акă мĕн, Естафи Ефремăч... Эсир хуçа пурлăхне хураллană. Халь çав пурлăх хуçан мар, халăхăн. Пушшех те хураллама тивĕç. Текех пырса ан ашкăнччăр тесе сире пулăшма салтак ярса паратпăр. Кайăрах, хăвăр вырăна таврăнăр. Хуçа тӳленĕ шалуне эпир те тӳлетпĕр.

— Мĕнех... Маншăн пурĕпĕр... Ик алла пĕр ĕç... Çирĕм çул ĕçлесе те хуçаран усал сăмах илтмен.

— Ĕненетĕп, Естафи Ефремăч.

— Вăт, çав çеç. Ĕнтĕ кайрăм.

— Телей пултăр! — Микула ал тытсах ăсатрĕ хуралçа.

Пĕччен юлсан, вăл кăшт хумханарах алăкăн-тĕпелĕн уткаларĕ. Ырă хыпар мар. Кĕçĕр йывăçа турттарма тытăнĕç. Тепĕр каç урăххисене çаратма тапăнĕç. Камăн лаши терĕ-ха? Тĕмшерти Кашкăр Мирунĕн пек туйăнчĕ терĕ.

Çапла, Микула паллать ăна. Тĕмшер ялне хут вĕренме çӳренĕренпех пĕлет. Чиркӳпе хирĕçех пурăнатчĕç Касмуххапа юнашар. Мĕн ĕмĕртен хăмлапа пуйса пурăннă. Тĕрĕссипе каласан, чухăнсем йывăç патне пырса та çыхланаймаççĕ. Йывăç турттарма лаши те çук вĕсен. Çийĕнчех чармасан, ытларах та асĕç пуян-куштансем. Хĕç-пăшаллă хурал тăратмалла. Темиçе çын ямалла, халăха пухса ăнлантарччăр. Йывăç вăрлама пуçаракана тытса хупсан та ытлашши мар. Çитес кунсенчех йывăçа ку енне турттарса каçасчĕ.

Микула кантуртан тухрĕ те Михха мĕнле сывласа пынине пĕлесшĕн пулчĕ. Сывалсанах халăх сучĕ умне тăратма тивет тесе шутларĕ. Анчах алăк тул енче хурал çукки çуйлантарчĕ ăна. Карт туртса алăка уçрĕ те Микула пӳлĕме, çутă çуккипе канăçсăрланса ӳкрĕ. Кунашкал пулмалла мар-çке.

— Часовой! — хыттăн чĕнчĕ Микула. Хирĕç сас пулмарĕ. — Мĕн хăямат ку? Решеткеллĕ пĕчĕк чӳрече витĕр çутă кĕрсех сарăлайман пирки шăрпăк кăларса çутрĕ. Ура пуçĕнче инçех те мар салтак тăсăлса выртать. Пуçĕ тавра юн кӳлли. Вĕлернĕ пулмалла? Михха ăçта? Та-

тах шăрпăк çутса сăнарĕ. Пÿлĕм пушах. Иккĕленмелли çук: часовоя вĕлерсе Миххана илсе кайнă.

Микула вăр-вар тухрĕ те хĕрлĕ гвардеецсем пурăнакан çĕре васкарĕ. Кунта пĕр сас-чÿ те çук. Лару-тăру лăпкă чухнехи пек сыхланмасăр пурăнаççĕ иккен. Микула тÿрех Петров пÿлĕмĕ патне пычĕ. Алăка питĕрнĕ.

— Кам унта? — илтĕнчĕ шалтан.

— Соколов! Уçăр хăвăртрах! Нумай çывăратăр, Демьян Петрович!

Микула сÿрĕккĕн чĕнни Петрова канăççăрлантарчĕ. Кунашкаллине курсах кайманччĕ. Анчах каçарттарасшăн пек, айăпне те хăй çине тиесшĕн мар пек хуравларĕ.

— Пулĕ те... Ир тăма нимле ĕçех те çук пек туйăнчĕ те...

— Пĕлетĕр-и, хурал тăракан салтака вĕлерсе хăварнă, Сехмете илсе кайнă...

— Пулма пултараймасть!

— Пултарнă çав!..

Петров ĕненсех мар пулин те темле пысăк инкек сиксе тухнине ăнланчĕ.

Петров тăхăнса тумлансан иккĕшĕ каллех пульницăра Михха выртакан пÿлĕме кĕчĕç. Тул çути самаях килнипе пÿлĕмри япаласене аванах тĕшмĕртме пулать. Салтак çав-çавах месерле выртать. Пуçĕ тавра юн пĕвеннĕ.

— Хăш вăхăтра, хăçан пулма пултарнă ку инкек? Ăçта Янашовĕ?

Ăшă çĕрте тесе хуралне тăватшар сехетрен улăштармалла тунăччĕ. Ку салтак икĕ сехетре йышăннă. Тата темиçе минутран улшăнмаллаччĕ унăн. Çывăрса кайнăскере Янашов хăех вĕлерменши? Урăх кам килтĕр кунта?

— Хăй ăçта-ши тата? Уринчен аманнăскер инçех тарайман вăл.

— Кам пĕлет, кил хушшинчех пытаннă-и, тен? — иккĕленчĕ Петров.

— Çук пуль, кам та пулин кăларса кайнах пуль. Ун телейĕшĕнех-и юр çуса йĕрне хупланă. Отрядри коммунистсене пухса кил, — терĕ çавăнтах Микула. — Трифон Кузьмич патне çын яр. Хвершăла та чĕнсе килччĕр!

Хвершăлĕ сăмах çинех персе çитрĕ.

— Мĕн кунта? — ним чухлайман енне ыйтрĕ вăл.

— Пысăк инкек, Алексей Васильевич. Салтака вĕлерсе хăварнă. Сехмете илсе кайнă.

— Тем курса ларăн, хоспоти! — вăл виле патне пычĕ. Тĕпчерĕ, хыпашлакаларĕ те: — Темле йывăр япалапа пуç шăммине шăтарнă, — терĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ — вулĕçтăвком членĕсем пухăнчĕç.

— Юлташсем, тăшмансем пире куç умĕнчех хур кÿреççĕ, — терĕ уйрăмах кăмăлсăррăн Соколов. — Янашова илсе кайнă. Салтакне чĕртеес çук ĕнтĕ. Сехметне тупасчĕ. Кам мĕн калама пултарать?

Нихăшĕ те вырăнлă сăмах тупса калаймарĕ. Совет влаçĕн тăшманĕсем йышлине пурсăмăр та пĕлетпĕр-ха. Ку териех хăюлланма пултарасса çеç тĕлленмен.

— Ман шутпа, Платун Павăлĕ ашкăнма пултарнă, — терĕ тем хушăран Натюш. — Кирек мĕн каласан та — Михха ун кĕрӳшĕ. Съездра та ăна хӳтĕлерĕ. Никамран та хăрамарĕ.

— Эпĕ те çаплах шухăшлатăп. Çаплах кил хушшине те пăхкалăр. Хăй тĕллĕн пулсан инçех каймалла мар вăл.

***

Палламан çын пырса кĕни Урпа Çемук çемйине тĕлĕнтерчĕ. Кăсăклантарчĕ те. Лешĕ çĕлĕкне илсе сăхсăхрĕ те:

— Ырă кун пултăр! — терĕ.

— Эс каларăшлĕ пултăр та... Тем, паллаймарăм-çке, ăçтисем эсир? — терĕ кил хуçи.

— Эпĕ хуторти Платун Павăлĕн тарçи.

— Апла эппин-ха? Мĕн çăмăлпа çӳретĕн?

— Çăмăлĕ-мĕнĕ... Эс паттăр çынне пĕлетпĕр эпир. Вăхăтлăх правительство чухнех Платун Павăлне ахаль тустарман. Ху та илтнĕ пулĕ, паян ун арманне çăнăхĕ-мĕнĕпех вулăсрисем туртса илнĕ.

— Туртса илнĕ?

— Ийя! Эс илтмен те-им?

— Çук.

— Вăт итле. Çав çăнăха тасталла ăсатма шутлаççĕ тет. Мĕншĕн хамăр çăнăха парса ямалла? Е пирĕн хушăра çăнăх пĕтнисем çук-и? Мĕншĕн кайса тустармалла мар? Янашов ампарĕнче те тырă йăтăнса выртать. Вырьăх-чĕрлĕхĕ те карта тулли. Йышпа пухăнмалла та тустармалла кăна. Вăт çакна каласшăнччĕ сана. Анчах эп кунта пулнине çынсене пĕлтермесен те юрать. Хуçа хăлхине кĕрĕ тата. Хăвăрах пĕлмелле, килсĕр çын вырăнтан кăларса ывăтсан ăçта кĕрсе кайтăр?..

Палламан çын сĕнĕвĕ Урпа Çемукне килĕшрĕ. Съездра Улитин та çавăн çинчен каланăччĕ. Тĕрĕссипе, ун хăйĕн те тыр-пул тавраш пĕрер уйăхран мала пымĕ. Вара çемьене мĕнпе тăрантмалла?

— Мана шанса килнĕшĕн тавтапуç, ырă çын.

— Тав тума кирлĕ мар. Эп хам та сирĕн йышши этем. Сывă пулăр.

— Чипер кай!

Урпа Çемукĕ тумланма пуçласан арăмĕ канăççăрланса ӳкрĕ:

— Ăçта каясшăн эсĕ?

— Илтмерĕн-им, çăнăха аяккалла ăсатасшăн терĕ. Ма парса ямалла?

— Эх, Çемук, каллех тем курса лармăпăр-и? Пĕрре тапăнса мăйкăча лекни те çителĕклех пек-çке?..

— Халь ун чухнехи мар. Хамăрăн влаç. Хăрамалли çук!

Тулта сивĕ пулсан та урам пушă мар. Иртен-çӳрен пулатех. Урпа Çемукĕ кашни тĕл пулаканах саламларĕ те шухăшне каласа пачĕ:

— Арманти çăнăха илсе каясшăн тет. Ма парса ямалла? Кама тĕл пулатăн, çавна кала: хăвăртрах хурал пӳртне пухăнччăр. Никама та кĕтмелли çук.

Ялти хыпар çиçĕмле хăвăрт сарăлать. Сехет те иртмерĕ пулĕ — Урпа Çемукĕн çаварĕнчен тухнă сăмахсем çумне тата тем те пĕр

хушӑнса ҫитмен кил юлмарӗ. Арҫынсем алла мӗн лекнӗ ҫавна илсе хурал пӳрчӗ еннелле васкарӗҫ...

Салтаксем унталла-кунталла тухкаласа пӗтсен Наума сасартӑках тунсӑх пусса килчӗ. Мӗншӗн-ши? Энӗшкассинче те пӗчченех пурӑннӑ вӑл. Анчах унта кӑшт тунсӑхлама хӑтлансанах Ульяна патне тухатчӗ те утатчӗ, унта кӑмӑлне ҫырлахтаратчӗ. Ҫапла вара Наумпа Ульяна иккӗшӗ те пӗр-пӗринсӗр пурӑнаймассине туя пуҫларӗҫ. Ульяна Наума ҫине тӑрсах хайсем патне пурӑнма йыхӑратчӗ-ха, сана пӗччен пурӑнасси тетчӗ. Анахвис та хирӗҫлемен. Анчах Наум Ульяна ятне ярасран шикленетчӗ. Халь ҫавӑн ҫинчен шухӑшлать те хӑйне хӑй ӳпкелет. Ял ҫинче тем калаҫакан та пулӗ, пӗрле пурӑннӑ пулсанах чӗлхисене ҫыртатчӗҫ. Юлашкинчен Наум Ульянасем патне куҫмах шутларӗ те чӗри темле ӑшшӑн та ыррӑн тапма тытӑннине сисрӗ.

Каҫалапа та кӑмӑлӗ ҫекленӳллӗ. Арман чулӗ пӗр евӗр кӗрлени чуна савӑнтарать.

Мелнике курчӗ те Наум ун патне пычӗ, сывлӑх сунчӗ.

— Пурнӑҫ калама ҫук аван, — терӗ мелник, ахаль те хавасскер. — Хуҫа ҫӗнӗ. Ӗҫ пирки килӗшӳ туса пӗрер черкке ямаллаччӗ те вӑт... — Мелник шӳтлеме те ӳркенменни Наум кӑмӑлне тата ҫӗклентерчӗ. Хӑй те шӳтлесерех хуравларӗ:

— Кантура кайсан каласа пӑхӑп-ха. Тен, ярса та парӗҫ.

— Эй, кантуртан ыйтас енне кайсан ним те пулас ҫук. Хамӑрах йӳнеҫтерӗпӗр. Пӗрер пӑт ҫӑнӑх ярӑнтарасси мӗн вӑл пирӗншӗн!

— Иксӗмӗрӗн пулсан ним те марччӗ те, пӑчӗпе мар, миххипех те ӑсатӑттӑмӑр. Ҫӑнӑхӗ хамӑрӑн мар. Халӑх хӑй ҫӑнӑхне вӑрланине пӗлсен мӗн тӑвасса хӑвӑнах пӗлмелле. Пуҫа пӑркӑчлӗҫ...

Унччен те пулмарӗ — ампар алӑкӗ уҫӑлса кайрӗ. Тахӑшӗ хыпӑнса кӗчӗ те хыттӑн хыпарларӗ:

— Аманик енчен сӗмӗ ҫук лав килет!

Наум армантан вирхӗнсе тухрӗ. Чӑн та иккен. Аманик енчен ҫеҫ мар, Варасӑр, Каракьял енчен те шутласа кӑлараймн лав куҫса килет. Ку ырӑ енне пулас ҫук тесе шухӑшласа илчӗ Наум, хӑвӑрт хайсем вырнаҫнӑ пӳрте ҫитсе хыпарларӗ:

— Ачасем, темле ыр-усал ҫавӑрттарса килет. Пурсӑр та сыхӑ тӑрӑр! Пурлӑха сыхласа хӑварасчӗ!

Халӑх ҫывхарнӑ май такама тем юнаса шавлани илтӗне пуҫларӗ. Малти лавӗ ҫинчен Урпа Ҫемукӗ анчӗ те малалла чавтарчӗ. Ун хыҫӗнчен ыттисем.

Наум хӑюллӑнах вӗсене хирӗҫ утӑмларӗ.

— Мӗн ҫӑмӑлпа ҫӳретӗр? — терӗ вӗсене.

— Сан мӗн ӗҫ? — сӳрӗккӗн тавӑрса хучӗ Урпа Ҫемукӗ, иртсе каясшӑнччӗ те — Наум ҫулне пӳлчӗ.

— Ман ӗҫ пур-ҫке. Мана кунта Совет влаҫӗ суйласа лартнӑ, армана пӑхса тӑма.

— Халăх, илтетĕр-и?! Арман хуçи ав кам иккен! — Наум еннелле хăмсарчĕ аллине Урпа Çемукĕ.

Çитсе тăма ĕлкĕрнисем йĕпĕслесе кулчĕç. Хыçрисем шавласа пĕр çĕрелле пухăна пуçларĕç. Çав вăхăтра хыçран тепри сиксе тухрĕ те кăшкăрса ячĕ:

— Мĕн пăхса тăратăр ăна? Влаç хамăрта! Çăнăх та пирĕн пулмалла! Алăксене çĕмĕрĕр!

Халăх ытлашши иртĕхе пуçласан хĕрлĕ гвардеецсем пăшалĕсене çĕклесе кăшкăрчĕç:

— Чарăнăр! Чакăр каялла!

Малти ретрисем тăпах чарăнчĕç. Анчах хыçалтисем çав-çавах малалла сĕкĕнчĕç:

— Мĕн пăхса тăратăр?..

— Çапса ӳкерĕр вĕсене! Долой!

Çапла тĕрлетнĕ те кăшкăрашнă вăхăтра Наумсен енче пăшал сасси илтĕнчĕ. Пĕри йынăшса тĕшĕрĕлсе анчĕ.

— Ай-ай! Пĕтерчĕç.

Ăçта мĕн сиксе тухнине тавçăрайман пирки Наумсем çухалса кайрĕç. Хĕрлĕ гвардеецсем пăшалĕсене сирчĕç. Анчах нихăшĕ те ампар хӳттине кĕрсе тарнă çынна асăрхаймарĕç. Халăх, салтаксем çухалса кайнипе усă курса, кар пырса сырăнчĕ...

***

Анахвис ялтан таврăннă çĕре кукамăшĕ вут хутса кăлармa та ĕлкĕрнĕ, кукăльсем пĕçернĕ.

— Хĕрĕм, эс вĕрилле çикеле-ха. Эп тухса лаша кӳлем, — терĕ Ульяна.

— Каçа хирĕç лаша кӳлсе ăçта каясшăн эсĕ?

— Армана. Наума ăш кукăль кайса çитерес тетĕп... Выçăллă-тутăллă пурăнать пуль... — темле хăюсăртараххăн хуравларĕ Ульяна.

Наум пурăнма хайсем патне килме пулнăранпа кукамăшĕ йăлтах улшăннине сисет Анахвис. Пит-куçĕнче те хаваслăх çиçни палăрать, пилĕк-çурăмĕ те тӳрленнĕн туйăнать. Çавăнпа кукамăшĕ армана кайма шутланăшăн ытлашши тĕлĕнмерĕ Анахвис. «Юрату тени ват çынна та çамрăклатать иккен», — шухăшласа ăшĕнче кулайрĕ.

— Кукамай, кукамай, — хаваслăн чĕнчĕ Анахвис, — лаша кӳличченех кукăль сивĕнмĕ-ха. Хам тухса кӳлем! — терĕ те васкаса тухса кайрĕ.

Хăнăхнă йăлипе Анахвис çунине самантрах кӳлчĕ те улăм хучĕ. Кукамăшне кĕрсе хыпарларĕ:

— Кукамай, лав хатĕр те! Кайма пултаратăн.

Ульяна кукăле ывăс çине хурса малтан кипкепе авраpĕ, вара кĕрĕкпе чĕркерĕ. Сивĕтмесĕр вырăна çитермелле-çке-ха. Хăй тăлăп тăхăнчĕ. Анахвиспе иккĕшĕ кил хушшине тухрĕç. Кукамăшĕ кресла çуна çине вырнаçсан Анахвис хапхана уçрĕ те:

— Чипер кайса кил! — тесе ырă сунчĕ.

Çил кăнтăр енне куçнипе çанталăк самаях ăшăтнă. Ульяна тăлăп

çухавине тăратмасăрах ларса пырать. Тăкăрлăк патӗнчен хӗрарăм шыв кӳрсе килнине курчӗ те хавасланчӗ, кайнă çӗрте телей пуласса шанчӗ. Çав хушăрах вăтанчӗ те: арманта çын нумай, паллакансем те тупăнчӗç. Пурпӗрех мар-и ӗнтӗ, çак кунсенчех Наум пурăнма ун патне куçса пычӗ. Ахаль те вӗсем туслине ялӗпех пӗлеççӗ.

Сасартăк Ульяна темшӗн çамрăк чухне тăванӗсем патне ларма кайнине аса илчӗ. Вара ахаль те юртакан лашине чăпăрккапа хăмсариш турӗ те хăюсăррăн юрласа ячӗ:

Саваласа хунă сар хăмине
Ывăс туса пулӗ-ши?
Юратса пурăннă сар ачине
Мăшăр туса пулӗ-ши?..

Арман патне çитерехпе Ульяна çакна асăрхарӗ: ампар алăкӗсене уçса пăрахнă та шалтан михӗсем йăта-йăта тухаççӗ, кам лав çине тиет, пӗчӗк çунашка çине хурса каякансем те пур. Ампарсенчен инçе те мар пӗр ушкăнта тем кăшкăрса хăлаçланаççӗ. Такама тӳпкеççӗ мар-и? Пӗрне ав ик уринчен тытнă та пӗве еннелле сӗтӗреççӗ. Акă теприне...

— Айтурах?! — йынăшса ячӗ сасартăк Ульяна. — Наума тăпăлтараççӗ мар-и?

Ульянан пӗтӗм çилли чашкăрса хăпарчӗ. Вăл нимӗн пӗлми лашине çапса вырăнтан сиктерчӗ те çавра çил пек пырса ушкăна тăрăнчӗ. Çуна çинчен сиксе анчӗ.

— Эсир!.. — терӗ çăва шăтăкӗнчен тухакан сасăпа. — Урнă кашкăрсем, чарăнăр!

Кӗтмен çӗртен çула пӳлни ушкăна сапаласа ячӗ. Хыçрисем те арпашăнчӗç.

— Ма чарăнтăр? Шаккăр ăна! — кăшкăрашрӗç вайсăрлана пуçланă сасăсем.

— Кама? Мана шаккамалла-и?!. Упăшкама тӳре-шарасем вӗлерни сахал-и сире? Е аслă хӗрӗм каторгăра пуçне хуни те манăçрӗ?!. Анчах астăвăр, эсир те ниçта пытанса хăтăлаймăр! Совет влаçӗ, Микула кумсем каçармӗç сире!

Ку хӗрарăм камне палласа илекенсем пулчӗç ӗнтӗ. Чылайăшӗ шикленсе те ӳкрӗ. Ытти-хытти хăямата, хама палласа ан юлтăрччӗç текенсем, уйрăмах хăюллисем, айккинелле тапса сикрӗç. Урпа Çемукӗ хыççăн — ыттисем те. Ульяна выртакансен хушшинче Наума палласа илчӗ те ун умне пырса чӗркуçленчӗ.

— Ах, Наум... чунăм...

Вӗсем патне тăват-пилӗк çын чупса пычӗç.

— Тытăр-ха, ăшă пӳрте йăтса кӗрӗр! — терӗ мелник.

Икӗ çалтак вилнӗ. Наум сывлать-ха. Таçтан эрех тупса кашăкпа çăварӗнчен ячӗç. Суранӗсене те эрехпе çуса тасатрӗç.

— Айтурах, Наум...

Наум йынăшса ячӗ, куçне уçрӗ. Хăй умӗнче Ульяна чӗркуçленсе ларнине курчӗ те:

— Эсё-и?.. — терӗ. Чун савакан ҫынни ҫак асаплӑ самантра юнашар пулни куҫне шывлантарчӗ.

— Наум... мӗн турӗҫ сана ҫав тискерсем?

— Мана темех мар... Эп чӗрӗ... Салтаксем мӗнле-ши?

Наума ӑннине каласа хурлантарма юраманнине ӑнланчӗ Ульяна. Ҫавӑнпа:

— Вӗсен те сывлӑшӗ пур-ха, — терӗ кӑна. — Сана халех киле илсе каятӑп.

Хапха умне лав ҫитсе чарӑннине сиссенех Анахвис сӑхманне уртса ячӗ те кил хушшине тухрӗ.

— Ҫитрӗн те-и, кукамай? — ӑшшӑн чӗнчӗ Анахвис. Анчах ҫуна ҫинче тӑлӑппа витнӗ япала пурри тӳрех сисчӗвлентерчӗ ӑна.

— Мӗн ку?..

— Айтурах, хӗрӗм... Наум вӑл...

— Наум пичче-и? Мӗн... — ҫавӑнтах куҫӗ шывланчӗ.

— Мӗнне кайран та каласа парӑп-ха. Халь Наума пӳрте илсе кӗртесчӗ.

Анахвис ҫуна ҫине хӑпарса Наума тӑлӑпӗ-мӗнӗпех хул айӗнчен тытрӗ. Ульяна ик уринчен тытса ҫӗклеме хӑтланчӗ те ҫавӑнтах ҫуйлӑн кӑшкӑрса ячӗ:

— Айтурах, хытнӑ-ҫке вӑл! Наум, чунӑм... Эп сана чӗрӗлле кӗтнӗччӗ-ҫке... Эс вилсе килтӗн-и?..

Ульяна кӗрӗп йӑванса кайрӗ те чарӑнайми ӳлеме тытӑнчӗ.

Анахвис ҫухалса кайрӗ. Кӑшт тӑна кӗнӗ пек пулсанах кукамӑшне йӑпатма хӑтланчӗ, юр ҫинчен тӑратса пӳрте кӗме кирлине аса илчӗ те аллинчен турткалама тытӑнчӗ.

— Кукамай тетӗп... Ҫул ҫинче те шӑнтӑн пуль... Халь тата юр ҫинче выртса чирлесе ӳкӗн... Атя тӑр, пӳрте кӗрер...

— Мӗн тӑвас ман сывлӑхпа... Кама кирлӗ текех ман сывлӑх...

— Кукамай... Унашкал ан калаҫ-ха, тархасшӑн. Сан сывлӑху пире кирлӗ: хӗрӳсемпе мӑнукусене, Микула пиччесене... Чӗре ҫурӑлас пек макӑрсан та Наум пиччене чӗртеес ҫук. Атя пӳрте...

Ульяна тӑна кӗнӗ пек пулчӗ. Хӑй ӗмӗрӗнче пайтах инкек тӳснӗ пулин те, пуҫне ҫухатман вӑл. Пур пек вӑйне пухса кӑмӑлне хытарчӗ, макӑрма чарӑнчӗ. Анахвис пулӑшнипе тӑркаларӗ те пӳртелле утас вырӑнне:

— Наума пӳрте илсе кӗрер-ха, — терӗ. — Кил хушшинче хӑварма аван мар.

Иккӗшӗ йӑтма хӑтланчӗҫ. Анчах тӳсейми хуйӑх вӑй-халӗсене ҫапса хуҫнипе вырӑнтан та тапратаймарӗҫ.

— Кукамай, пирӗн вӑйсем юлман. Эс пӳрте атя-ха... Вара кӳршӗсене чӗнсе килӗп... Вӗсем пулӑшнипе йӑтса кӗрӗпӗр.

Ульяна хирӗҫлемерӗ. Анахвисран уртӑнса пӳрте кӗчӗ. Кӗрӗкне хывса сак ҫине пӑрахрӗ, пуҫӗпе кӗрӗк ҫине сӗвӗнчӗ.

— Айтурах, хӗрӗм... Наума хӑвӑртрах илсе кӗресчӗ...

— Халех, кукамай.

Алăк хупăнни илтӗнсенех Ульяна хуллен те йӳҫҫӗн макăрса ячӗ.

— Айтурах, мӗншӗн ҫак териех телейсӗр ҫуралнă-ши эпӗ?.. Хӗр ҫеҫ ҫуратнипе мӗн чул патак ҫимен пуль... Сехмет аслă хӗре пусмăрлама хăтланни те чӗрене ҫурсах пăрахрӗ... Кăштахран пурнăҫ хӗвелӗ ҫиҫсе пăхса хăтланнăччӗ. Каллех инкек. Аслă хӗре вӗлерчӗҫ. Упăшкампа кӗҫӗн хӗре пуҫиле ячӗҫ. Наум пулăшнипе тепӗр хут ура ҫине тăнăччӗ, мăнукăмсене те чиперех ӳстернӗччӗ. Тем пек хуйхă тӳссен те сӳнсе ларайман чӗрем Наум еннелле туртăнатчӗ. Юлашки каҫ ăна хăй патне йыхăрма кайрӗ те ун патӗнчех ҫӗр каҫрӗ. Унтан чӗре тулли кăмăлпа сапăрланса таврăнчӗ. Армантан килсенех пурăнма Ульянасем патне куҫас пирки калаҫса татăлчӗҫ. Тинех савăнса пурăнмалла чухне тăшмансем чунне ҫирӗҫ...

Тем вăхăт выртрӗ Ульяна — алăкран ҫынсем кӗпӗртетсе кӗнине илтсе макăрма чарăнчӗ. Пуҫне ҫӗклерех пăхрӗ те кӳршӗ ҫыннисем Наума йăтса кӗнине курчӗ.

— Акă ҫакăнта выртарăр, тархасшăн... — хăй тин кăна тăнă вырăн ҫине кăтартрӗ Ульяна. — Наум ҫийӗнчи тăлăпа хывса илсен хушса хучӗ: — Айтурах, Анахвис, Микула кума кайса пӗлтересчӗ.

— Халех, кукамай...

Анахвис кӳлнӗ лашана ҫавăтса хапхаран тухрӗ те Атăлкассинелле вӗҫтерчӗ. Яла ҫитсе кӗрсен лав хăвăртлăхне чакарчӗ. «Микулана ăҫта тупма пулӗ-ши? — тесе шухăшларӗ Анахвис. — Хваттерӗнче пулас ҫук-ха вăл, кантурах каяс пулӗ.

Микула шăпах кантурта-мӗн. Ӗҫ туллиех. Влаҫа совет ирӗкне илес ҫул ҫăмăл марччӗ. Илсен татах йывăрланчӗ. Халь ӗнтӗ вулăсри мӗнпур ӗҫ вӗсен ӗнси ҫине тиенчӗ. Пуриншӗн те ответ тытмалла. Лару-тăру лăпкă мар. Йывăҫа тустарма пуҫланă ав. Миххан ытти пурлăхӗ ҫине куҫ хуракансем те сахал мар пулӗ.

Кӗтмен ҫӗртен Анахвис килсе кӗни, вăл ытла та пăлханнă пек курăнни Микулана шартах сиктерчӗ.

— Микула пичче, пысăк инкек сиксе тухрӗ-ҫке пирӗн тӗллӗн. Арманта Наум пиччепе икӗ салтака вӗлернӗ.

— Ак тамаша!— хыпăнса ӳкрӗ Микула.

Анахвис куҫҫулӗ витӗр мӗн пӗлнине каласа пачӗ.

— Наум пичче пирӗн патăрта выртать. Салтаксем армантах пулмалла, — терӗ юлашкинчен.

— Камсем вӗлернӗ?

— Ăна ыйтса пӗлеймерӗм. Кукамай мана сана пӗлтерме васкатрӗ.

Микула пӗр хушă аптраса тăчӗ. Унтан хăйне алла илсе ҫапла шутларӗ: малтан Энӗшкассине кӗрсе тухмалла. Ульяна, тен, тупсăмне тупмалли сăмах калӗ.

Ҫавăнтах Петров чӗнтерчӗ те:

— Демьян Петрович, пирӗн вулăсра пысăк инкек. Арманта Наум Васильевичпа икӗ салтака вӗлернӗ. Хăвăртрах виҫӗ лав кӳлтерӗр те пиллӗкӗн йӗрлеме каятпăр.

Тата темиçе минутран виçĕ лав çине улттăн ларса Атăлкассинчен вирхĕнтерсе тухрĕç. Ульянасем патне çитнĕ çĕре çынсем самаях пухăннă ĕнтĕ. Ульяна Наумăн пуçĕ вĕçĕнче ларать, хускалма та маннă тейĕн. Çапах Микуласем кĕнине самантрах сиссе пуçне çĕклерĕ.

— Айтурах, Микула кум... Наум çук пулчĕ-çке ĕнтĕ. Ăш кукăль çитерем тесе кайрăм та... виллине турттарса килтĕм.

— Мĕнле? Мĕн siксе тухнă унта?

— Эп пынă чухне ампар алăкĕсем яри уçăччĕ... Михсене йăта-йăта кăларатчĕç. Пĕр ушкăн такама тӳпелетчĕ. Эп çитсен чарăнса сапаланчĕç. Наумпа икĕ салтак выртса юлчĕç. Наум чиперех сывлать пекчĕ. Çул çинче чунĕ тухрĕ. Упраса хăвараймарăм.

— Никама та паллаймарăн-и?

— Паллама терĕн... Наума йăтса кĕме пулăшакансем хушшинче мелник пурччĕ. Çавна астăватăп...

Кунта халь ним те тăвас çук, вилнĕ çынна чĕртсе тăратаймăн. Йĕр тăрăх кайса айăплисене тупмалла.

— Ульяна кума, эс ытлашши ан хуçăл-ха. Хăвна ху тыткалама тăрăш. Эпир армана çитсе килер...

— Васкăр часрах, кайса курăр.

Микуласем вашлаттарса çитнĕ çĕре ампар алăкĕсем уçăлса тăратчĕç, анчах лав таврашĕ курăнмастчĕ. Арманĕ авăрса ларать, çынnисем йăлтах шăпланнă.

— Тарса пĕтнĕ курăнать.

Ульяна кума каланă тăрăх, ăна мелникпе темиçе çын пулăшнă. Нивушлĕ вĕсенчен пĕри те юлман?

Çапла калаçса тăнă вăхăтра хуçа пурăннă пӳртрен мелник тухрĕ.

— Эсир хăш ялсем? — терĕ вĕсене Микула. — Хăçантанпа кунта?

— Эпĕ Аманиксем те, яланах кунта. Эпĕ мелник.

— Пит аван. Эсир кирлĕ те пире... Ăшă пӳрте кĕрер-ха.

Пӳртре каллех тĕпчев пуçланчĕ.

— Эсир кунтах пулнă терĕр. Калăр-ха, мĕн пулса иртнĕ кунта?

— Мĕнни-мĕнĕ... Эп арманта кĕштĕртететтĕм... Тем амакĕ, тулта çуйхашнисем илтĕнсе кайрĕç. Унччен те пулмарĕ — пăшал сасси кӳплетрĕ. Вара алăкран пырса пăхрăм: такамсем тĕркешнине куртăм. Тепĕр кассисем, ампарти çăнăха тустарма пуçларĕç. Ним тума аптраса тăраттăм çапла — лавпа пĕр хĕрарăм тĕрлеттерсе çитрĕ. Энĕшкассинчи Ульяна пулнă-мĕн вăл. Тӳрех ушкăн умне пычĕ те хаяррăн кăшкăрса пăрахрĕ. Камне палларĕç пулмалла — çапăçакансем чарăнчĕç. Чылайăшĕ ун куçĕ умĕнчен çухаласшăн айккинелле тапса сикрĕç. Эпир Ульяна патне чыпса пытăмăр. Наум Васильевич юн юхтарса выртатчĕ, сывлăшĕ пурччĕ, салтакĕ вилнĕччĕ.

— Наум Васильевичпа салтака хĕненĕ çĕрте кам-кам пурччĕ? Пуçараканĕ камччĕ?

— Тĕпĕртетнĕ çĕрте палласа пĕтерĕн-и вĕсене? Пуçараканĕ тенĕрен... Малтан харкашкаласа тăратчĕç. Наумпа салтакĕ çынсене ампар патне ярасшăн марччĕ. Лешсем хирĕç кăшкăрашрĕç. Салтак

каялла чакма хистерӗ. Ҫав самантрах пӑшал сасси илтӗнчӗ. «Вӗлерчӗҫ! Вӗлерчӗҫ!» — текелерӗҫ. Ҫав самантра пӗри сиксе тухрӗ те: «Мӗн пӑхса тӑратӑр?! Куҫ умӗнчех ҫынна вӗлерме ирӗк паратӑр-им?!» — тесе кӑшкӑрчӗ те тем япалапа салтака ҫапса ӳкерчӗ. Наума ҫулса илчӗҫ. Тӳпкелеме пуҫларӗҫ. Эпӗ ку таврари ҫынсене пурне те паллатӑп пулӗ тесеччӗ. Салтака ҫапса пӑрахаканне вара ниепле те паллаймарӑм.

— Эс пӗлекенсенчен никам та ҫукчӗ-и вара?

Те каласан аван, те каламасан тенӗн пӗр хушӑ шухӑша кайса тӑчӗ те мелник ҫынсем илтесрен хӑранӑн хуравларӗ:

— Аманикри Урпа Ҫемукӗ пурччӗ... Ҫавна палласа юлма ӗлкӗртӗм...

Микулана тинех вӗрен вӗҫӗ тупӑннӑн туйӑнчӗ. Сасартӑках Урпа Ҫемукӗ текенӗ тинтерех ҫеҫ тӗрмерен тухни, съездра хирӗҫле тухса калани аса килчӗ. Ав Улитин вӗслетни ӑҫта килсе ҫитерчӗ ӑна.

Йӗр такӑр пек курӑннӑ чухне васкамалла тесе шутларӗ Микула.

— Петров! — терӗ вара. — Эсир халех Урпа Ҫемукӗ патне каятӑр. Эпӗ — Аманикри Уханьки патне. Эсир! — терӗ мелнике, — вӗсем ӑҫта пурӑннине кӑтартса пыратӑр!

Мелник пуҫне чикрӗ. Никам курман ҫӗрте хыпарлама темех марччӗ, ял-йыш умӗнче кӑтартса ҫӳрени аван мар.

— Эсир мӗн, хӑратӑр мар-и? — терӗ ун шиклӗхне сиснӗн Микула.

— Хӑрасси-мӗнӗ, аван мар. Ялпа ял пек пурӑнмалла. Луччӑ ял советне пырӑр. Унта кӑтартса ярӗҫ.

Пӑшӑрханмалла пулин те Микула килӗшрӗ. Тата ун малтанах ял советне кӗрсе пӑхас шухӑш пурччӗ. Вӗсем лавсем ҫине ларса Аманикелле вӗҫтерчӗҫ.

Ял совет председателӗ вырӑнта пулмарӗ. Микулан ӑна шыраса вӑхӑта ирттерес килмерӗ. Ҫавӑнпа урама тухрӗ те малтан тӗл пулнӑ хӗрарӑмах чарса тӑратрӗ.

— Урпа Ҫемукӗ ӑҫта пурӑнать ҫакӑнта? — терӗ.

Лешӗ шухӑшламасӑрах:

— Ав, вырӑсла хапхаран виҫӗ кил урлӑ пурӑнать, — терӗ.

— Тӑхта-ха! — терӗ татах Микула. — Уханьки Иванӗ инҫе-и кунтан?

Хӗрарӑм Уханьки тӗлне те кӑтартса пачӗ. Вара Микула ҫапла каларӗ:

— Демьян Петрович, эсир Урпа Ҫемукӗ патне кайӑр. Эпӗ Уханьки патне вӗҫтеретӗп.

Уханьки Иванӗ, ҫӑнӑх тиеме кайнӑ ҫын, аманса килни пӗтӗм ҫемйине ҫуйлантарчӗ. Аманни ҫеҫ те мар. Ӑна Наумпа салтака тапӑннӑшӑн айӑплама пултараҫҫӗ.

Ак ӗнтӗ Микулапа салтак пырса кӗни Уханькине пушшех хӑратса пӑрахрӗ. Вӗсем шари кӑшкӑрса тӑкасса, халех лартса каясса кӗтрӗҫ. Анчах Микула ун пек ҫын мар. Сӗтел ҫапса хӑратма юратмасть. Апла ним усси те пулаймӗ. Ҫавӑнпа Микула алӑкран кӗнӗ-кӗменех ҫӗлӗкне хыврӗ те:

— Ырӑ кун пултӑр! — терӗ ним пулман евӗр.

Уханьки ҫемйине кӑшт чун кӗнӗ пек пулчӗ. Усал тума килнӗ ҫынсем мар пек туйӑнчӗҫ.

— Килӗрех...

— Кӗрсе чӑрмантарнӑшӑн ан ҫилленӗр, — сӑмахне малалла тӑсрӗ Микула, — Иван Сидорча амантнӑ терӗҫ те, пулӑшу-мӗн кирлӗ марши тесе кӗтӗмӗр... Сана кам печӗ? Салтак-и е урӑххи?

— Салтак мар...

— Мӗнле салтак мар? Пурте салтак пенӗ теҫҫӗ-ҫке?

— Ҫапла теҫҫӗ те... Салтакӗ умрахчӗ. Анчах пересse ампар кӗтесӗнчен печӗҫ. Эпӗ хама тивертнипе анранӑ пек пултӑм та тӗрӗсне калама та пӗлеймерӗм.

— Сана мӗнле тивертнӗ-ха? Эс пуринчен малта пулнӑ-им?

— Эп салтакпа Энӗшкасси ҫыннине ӳкӗте кӗртес тесе мала пынӑччӗ. Ҫав вӑхӑтра тахӑшӗ ампар кӗтессинчен кӗрслеттерсе те ячӗ. Халь акӑ ҫав ӗҫе хутшӑннӑшӑн хама хам ӳпкелетӗп. Ҫын сӑмахӗ хыҫҫӑн каякан шыва ӳкнӗ тесе ахаль каламан ҫав...

— Айӑпна чухлани аван...Татах ҫавнашкал килсе ан тухтӑр тесен пуҫаракансене тупас пулать. Камсем вӗсем? Ҫавна каласа парасчӗ сан...

— Камне ӑҫта пӗлсе ҫитерӗн... Ҫӑнӑха большевиксем хӑйсен хушшинче валеҫесшӗн, таҫта кайса ӑсатасшӑн текен хыпар ҫӗр ҫӗмӗрсе ҫӳрерӗ те... Ҫав пӑлхатса ячӗ. Тӗмшерсемпе Варасӑрсем те йышлӑччӗ унта.

— Ҫавсенчен пӗрне те паллаймарӑн-и вара? Сӑмахран, Наум Васильевич пынӑ чухне пӗчченехчӗ-и эс?

Уханьки Иванӗ пӗр хушӑ шухӑша кайса выртрӗ те хуллен тутине хускатрӗ:

— Урпа Ҫемукӗ пит ҫӗмӗрлетчӗ... Тата Тӗмшӗрти Кашкӑр Мирунне астӑватӑп... Кам ҫапса пӑрахнине курман. Мана хама персе антарнӑ.

Хальлӗхе ку ҫын урӑх нимех те хыпарлас ҫуккине ӗненчӗ Микула. Хӑйне салтаксем мар, ампар кӗтессинчен персе ӳкернине астуни аван. Тата мелник палламан ҫын салтака ҫапса пӑрахни те кунта ютсем хӗтӗртнине аванах палӑртать. Анчах камсем вӗсем, хӗтӗртекенсем?!. Тем пулсан та ҫак самантрах Урпа Ҫемукӗпе Кашкӑр Мирунне тытса хупмалла. Вара вӗсенчен хӑраса ҫыртнӑ чӗлхесем те самантрах салтӑнӗҫ. Апла кӗрешӳ хӗрсе пырать-ха, вӑл лӑплана пуҫланӑ теме иртерех...